К83.3
А16
К-33862

Валентин Абрамов

# Сăмахпа сăнар сипечĕ

Шупашкар
1998

Национальная библиотека ЧР
k-033862

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

кр
к 83.3
А-16

**Валентин Абрамов**

# Сăмахпа сăнар сипечĕ

*Литература темипе çырнă статьясем*

кр

Шупашкар
1998

ББК Ш 43 (2) (635.1) Я 44

Автор синчен. *Чук уйахĕн 1-мĕш кунĕнче, 1958 çулта, Канаш районĕнчи Кашнаруй ялĕнче çурална. Кашнаруйĕнчи 8 çул вĕренмелли шкулта, Çĕрпу районĕнчи Чурачакри ватам шкулта вĕреннĕ. 1982 çулта И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чаваш патшалах университечĕн историпе филологи факультечĕн чаваш чĕлхипе литературипе уйрамне пĕтернĕ. Шкулта учитель пулса ĕçленĕ. Аспирантура пĕтернĕ. Халĕ Чаваш патшалăх университечĕн Чаваш филологийĕпе культура факультетĕнче чăваш литературипе кафедрин доценчĕ, декан çумĕ пулса ĕçлет. Тĕрлĕ наука статьисемпе кĕнекесен авторĕ. Критик. Литературовед. Раççей писателĕсен союзĕн членĕ.*

ПРОВЕРЕНО
2010

Абрамов Валентин Александрович. Самахпа санар сипечĕ: Литература темипе çырна статьясем. - Шупашкар, 1998, 112 с.

*Кĕнекере авторăн тĕрлĕ çулсенче çырна литература тĕпчевĕсем, критикалла статьясем, литературăн çивĕч ыйтăвĕсене хускатакан ĕççем кĕнĕ. Чылай чухне тавлашуллăрах, кĕтменрех, ханăхна карта ларман шухăшсене те каланă кунта. Автор çак афоризма шута илнĕ: «Пур жанрсем те аван, енчен те вулакана кичем мар». Чаваш литературипе классикипе паянхи авторсен шухăшпа илемлĕхĕн тĕрлĕ енĕсене пахса санана, литература аталанавĕн тĕрлĕ ыйтăвĕсене хускатна. Кĕнекене студентсем, шкул ачисем, учительсем, литературăна юратакансем валли йĕркеленĕ.*

К-33862
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

© В.А.Абрамов

# ЧĂВАШ ЛИТЕРАТУРИ: ЭРОС, ХЁРАРĂМ САНАРЕ, ВИЛЁМ ФИЛОСОФИЙЕ.

## К. В. Ивановăн "Нарспи" хайлавĕнчи эротика кĕввисем

Кĕçтенттин Ивановăн "Нарспи" поэмине вуншар вуласан та, кашнинчех мĕн те пулин çĕннине тупатăн. Чан-чан генилле литература çапла пулмалла та. "Нарспин" тĕлĕнтермĕш эрешĕ хăть те хăçан та тыткана илет, поэмăра темле пытарăнчăк, варттан шухăш-камал, туйам тапса тăрать. Çав турех куçа курăнман, анчах ăс-туйăма витерекен тĕнче вал - поэмăри ЭРОС ТЕНЧИ, ар хутшăнăвĕсен гаран психологийĕ. Поэмари геройсен трагедийĕшĕн, пире халиччен вĕрентнĕ пек, пĕр самана, йăла-йĕрке кана айаплă мар иккен. Геройсен вилĕмне çавăн пекех ар хутшăнăвĕсен çылахла сăн-сăпачĕ те, ар кĕвĕçĕвĕ те, ас-пуçа çухатгаракан ар туйăмĕсем те çывхартаççĕ. Этем камăл-туйăмĕнчи эротикăллă туйăмсен урăм-сурăм вăйне поэма тăршшĕпех туятпăр эпир. Çака та кăсăкла: поэмăна çырнă вăхăтра Кĕçтенттине хăйне те çав туйăмсен урам-сурамĕ хĕмлентернĕ, асаплантарнă: вунçиччĕре-çке вал ун чухне! Çакна та асархамалла: Кĕçтенттин сăнĕ-пуçĕпе çав тери илемлĕ каччă пулнă, кăна сыхланса юлна сăнукерчĕксенче аван куратпăр. Шапах хĕрсен чĕрисене çунтармаллискер ĕнтĕ. Анчах Кĕçтенттин хĕрарăмсемпе хутшăннине катартакан пĕр факт та çук. (Петĕр Хусанкайан самрăкла çырнă "Поэтпа миссионер" поэминче вара, ахăртнех, ытларах çамрăк Хусанкайăн хăйĕн камăл-туйăмĕсем сăнланнă-тăр, çав шутра - Иванов сăнарне кӳнĕ вĕри туйăмлăх та). Кĕçтенттин лирикинче те, çырăвĕ-хучĕсенче те пĕр-пĕр хĕрарăмпа пулнă çыхану пирки пĕр сăмах та, пĕр сас та çук. Хайлавсенче те Кĕçтенттинăн ыра шăпаллă пĕр хĕрарăм та çук. Ирĕксĕрех çапла шухăш килет пуçа: е çав тери кӳрентернĕ Кĕçтенттина хăйĕн кĕске ĕмĕрĕнче хĕрарамсем, е çав тери айаплă, кĕвĕçуллĕ юрату пулна унан пурнăçĕнче. Поэт психологийĕ хĕрарăмсене мĕншĕн çакнашкал йышăннин тĕп сăлтавне эпир халь тин пĕлейрес те çук пулĕ. "Нарспи" поэмăрах, акă, пĕр ыра хĕрарăм сăнарĕ те çук, ыррисем пулсан та, вĕсем Кĕçтенттинан яланах чалах (Сетнерĕн амăшĕ, самахран, суккăр).

Нарспине эпир халиччен яланах ырă сăнарсен шутне кĕртнĕ (литературăри идеализацилене пурнăçа çапла хаклатпăр-çке!). Анчах манар мар: пурнăç йеркине хирĕç тарса, ăна пăсакан герой та - Нарспиех. Христиан тĕнĕн канонĕсене те, чăвашсен авалтан килекен йалисене те ним шелсĕр аркатать вăл. Ака вĕсем, Нарспин çынлах философийĕ умĕнчи çылăхĕсем: 1. Нарспи аппĕ-амăшне итлемест, вĕсен ирĕкĕнчен тухать. 2. Нарспи саккунлă упăшкине, Тăхтамана,

вĕлерет. Çакна вал ăнсăртран мар, малтанах хатĕрленсе тăвать. 3. Халах йали-йĕркине хирĕç пырать, туй умĕнхи каç вармана тарса каять. 4. Туй тумасар Сентнерпе çылăха кĕрет. 5. Хай çине хай ала хурать.

Ар хутшăнăвĕсем этемĕн трагедийĕ те, телейĕ те ґенине "Нарспире" яр-уççăн сăнласа катартнă. Çак çутçанталак туртамне Кĕçтенттин питĕ романтикăлла курать, анчах унăн романтикалахĕ çĕр çийĕнчен уйăлса каймасть, вулакана илĕртсех тарать. Ака, Нарспи куçĕсен Эрос вайне систерет поэт:

*Куçĕсемпе пăхнă чух*
*Каччăн чĕри çĕкленет.*

Сетнерĕн те куçĕсем Нарспин ут-пĕвне çупăрлаççĕ:

*Йăлтăр-йăлтăр куçĕсем*
*Сар хĕр çине пăхаççĕ.*

Нарспин вăйăри тыткаларашĕнче те поэт илĕртме пултаракан туйăмсем асăрхать:

*Ахăлтатса кулнă чух*
*Çирĕп çын ку темелле.*

Каçхи Силпи сăн-сапатне пĕр-пĕрне илĕртсе вылякан, эротикаллă таша картине таракан самраксем илем кӳреççĕ:

*Ав унта хитре хĕрсем*
*Ĕни хыççан чунаççĕ,*
*Чее маттур каччисем*
*Вĕсен хыççан юлмаççĕ.*

"Чее" те "маттур" каччăсем хăйсен аллине лекнĕ хĕрпе юн вĕресе хăпариччен выляççĕ. Çамрăксен ар туйамлахĕ яр-уççăн кура нать поэтăн ансат сăмахĕсенче. Чи малтанах, чăн та, ар вылявĕ илĕртет çулерех илсе кăтартна йĕркесенче. Эрос сĕмĕ Нарспипе Сетнере те нырса тивнĕ. Ут туртамне чараймасăр, икĕ çамрак туй умĕнхи каç (*"юлашки каç выляса юлас арăм пуличчен"*), çылăха кĕмелле мар текен шухăша çĕнтерсе, вăрмана тараççĕ:

*Ытларах нĕр-пĕрне*
*Тĕттĕм çĕрте çухалчĕç.*

Эротика туйăмĕсем Тивĕç туйăмĕсене çĕнтереççĕ, поэт хăйĕн геройĕсене варманта çывăхлантарать. Арçынпа хĕрарăман ар хутшăнăвĕсене вăл символла санарлăх урла кăтартать. "Тарни" сыпакра çав символсем - пĕлĕт (арçын), çĕр (хĕрарăм), çумăр (фаллос, е арçыннăн тĕрткĕшĕ) . Шапах Нарспипе Сетнер вармана кĕрсе пытансан, пĕлĕтсем пуханаççĕ, геройсем çине çумар тăкапать. Юрату туйăмĕсемпе ĕшеннĕ Сетнер "*тутлан çывăрать*" (кунта арçын физиологийĕн паллине асăрхать поэт), Нарспи вара, юман çумне тĕршĕнсе, Сетнере ачашласа "тĕлĕрсе" ларать. Çак "намăс" ĕç çинчен икĕ хутчен асилтерет поэт, Михетер те çак намăс ĕç пиркн çĕн кĕру ан нĕлтĕр тесе тăрăшать. Анчах малтанах çамрăк хĕрарама кавча илнипе пуçне çухатна Тăхтаман та ку "ĕç" çинчен илтетех, унсăр пуçне тата, хăй те сисмест мар "чап-чап" каçĕнче Нарспи

тӗрӗс-тӗкелех маррине. Çен çынсене кӗлете хупаççӗ, шанаçларах пултӑр тесе, тултан çарапа питӗрсе илеççӗ. Кӗлет тавра кӗвӗçупе тулнӑ, вӗриленсе кайна Сетнер кускалать:

*Акӑ каччӑ, пӗр каччӑ*
*Кӗлет тавра ивӑнать.*
*Те итлеме, те пӑхма*
*Пушӑ вырӑн вал шырать.*

Çӗнӗ çынсен ар хутшанавне курасшан анталакансем татах та пур иккен кӗлет тавра:

*Тӑват-пилӗк ача-пӑча*
*Явӑнаççӗ çавантах:*
*Ай намӑссӑр ача-пӑча!*
*Мӗн кирлиех пур унта!*

Çамрак Сетнер юратавне туйса курна Нарспишӗн ватарах арçын ытамӗнче, чан та, йӗрӗнмеллерех пулна пулас, ахальтеи мар Тахтаманпа Нарспин кӗлетри ӗç-пуçне илтнӗ-курна çынсем ял-йыш çине усал хыпар калараççӗ. Тахтаман та, çамрак арам хӗр маррине пӗлсен, алла саламат тытать. Хирӗç ара, Сетнере, кӗвӗçни канаç памасть Тахтамана. Ар кӗвӗçӗвӗ Тахтаман психологине нумай енчен анлантарса парать. Нарспине шанмасть вӑл, хӑйне унпа турккес тытать:

*Хӗртен арам пулсассан*
*Ват упӑшка кулӗшет* (кӗвӗçет - В.А.).

Ниепле манаймасть Тахтаман Нарспи унан арçын манкамаллахне таптанине. Нарспишӗн вал пурнаçӗнчи иккӗмӗш арçын пулни те (пӗрремӗшӗ мар! ) ана çав тери вӗчӗрхентерет :

*Ырӑ кӗрӳ Тахтаман*
*Туй кӗлетне астӑвать,*
*Куллен-кунах арӑмне*
*Саламатпа кастарать.*

Хиртен ӗшӗнсе таврансан Тахтаманшан Нарспи яланах ясар, аскан куранать, унан ялан çилли килет. Çилӗ юратура чармантарать, теççӗ халахра. Кунта та çаплах пулас: тарахса, вӗриленсе çурекен Тахтаманшан юрату выранӗ те чӗр тамак пек. Ар туйамӗсем кӗнӗ çамрак арам та асапланать, упашкипе канаçлах тупаймасть, пӗрехмай Сетнере асилет.

Мӗн хистенӗ-ха Нарспие упашкине вӗлерме?

Чӑн малтанах, упашкин кӗвӗçӗвӗ. Хайне çылахла тесе йышанман Нарспин (вал Сетнере юратнӑ-çке) çемье пурнӑçӗнче те юратавӗ Сетнерӗ патнех туртанать. Ар туйамӗсем этем психологине ӗпрен улаптарма пултарнине эпир лайах пӗлетпӗр. Нарспи усал ӗçӗн, çын вӗлернин пӗр салтавӗ те - ар туйамӗсем хӗрараман тӗрӗс шухашлавне арпаштарса яни. Тискер çанталака пахмасӑр, Нарспи хайӗн чун тата ут-пу юлташне шырама каять; ана варманта, çын çук çӗрте, тӗл пулать. Варман Кӗçтентгии тӗнчекурамӗнче - хайне евӗр гарем, тӗнчери пурнаçӑн тӗп паллисенчен пӗри, пӗр-пӗрин патне

чунпа çеç мар, пĕтĕм утпе туртăнакан çамрăксем валли пĕртен-иĕр хушĕ:

*Курăк çинчи сывлăма*
*Хĕвел парать ăшшине.*
*Икĕ чуна саваштма*
*Хĕвел парать çуттине.*

Асилер-ха каллех "Тарни" сыпăка. Кунта çамрăксен юратăвĕ тĕттĕмре пулса иртет, тискер çанталăкра. Хальхинче вара ("Варманта" сыпăкра) çанталак ырă, илĕртуллĕ. Мĕншĕн тесессĕн халĕ вĕсен хушшине текех Тахтаман кĕреймĕ ĕнтĕ. Тата, унсар пуçне, вĕсем иккĕшĕ те пĕр-пĕринче ар канаçлăхĕ тупрĕç.

"Нарспи" поэмана психоанализ меслечĕпе чылай тарăннăн ăнлантарса пама пулать пулĕ. Этемĕн Эрос туйамĕ чылай чух унăн пĕтĕм кăмалне ăнланма май парать.

Кĕçтентин Иванов, вилĕмсĕр поэтăмăр, хăйĕн вилĕмсĕр поэмипче туллилĕхре сăнлать этем кăмăл-туйăм тĕнчине. Çав тĕнчере ар хутшăнăвĕсем - тĕп никĕссенчен пĕрисем.

1991 ç.

## Я.Ухсай поэзийĕнчи Эдем пахчи, е епле поэт "çылăхла" юрату тытканĕнчен çаланни

Эдем - çĕр çинчи çăтмах, çынсене юрату çылăхне кĕриччен тура пана саваплă вырăн, тулăхлă-илемлĕ çутçанталăк кĕтесĕ. Эдем çĕршывĕн пахчинче Адампа Ева çаппа-çарамас çуренĕ, пĕр-пĕринчен вăтаман. ("Библи" саваплă кĕнекерен.)

Поэт тĕнчи - асамла тĕнче. Унăн поэзине сăн паракан туйăм - Эросăн тĕлĕнтермĕш хăвачĕ. Кашни саваçăн ар туйамĕсен таши лирикăра тĕрлĕ шайра: пĕри ним пытармасăр калать ун çинчен, тепри именерех хускатать ку темăна, виççĕмĕшĕ устererех те сăнлать... Тепле пулсан та, çак интимлă кăмăл-туйăмсен витĕмне саваппа айкашакан кирек епле çыравçа та туймасăр ирттерсе яраймасть. Сăвăç кăна-и? Калапăр, евнух, гаремри тарçă, хăйĕн ар паллисемсĕр юлнă арçып е мăнастирти тĕнче çылăхĕсенчен кельăра тарса пытанна манах - утпе мар пулсан та, чун-чĕрепе çак "улттамĕш туйăма" (Н.Гумилев) сисетех, мĕнле те пулин палăртатех: ăса пăхăнмансерсем-çке вĕсем, эротикаллă туйăмсен этем ăшĕнчи урам-сурамĕсем.

Чăваш поэзийĕнчи чаннипех те тĕлĕнтермĕш сăваçсенчен пĕри - Я.Г.Ухсай. Мĕншĕн тесен вăл - эрос-ар туйăмĕсенчен, вĕсен илĕртуллĕ, çылăхла тытканĕнчен хăталма пултарнă поэт. Унăн хăйĕн Эдем пахчи (çылăхсăр тĕнчи), çак пахча картинчен тухасшăн мар поэт, "çылăхлă" тĕнчене кăмăлтан йышăнасшăнах мар. Адампа

Ева çылăха кĕриччен çуренĕ пахча (панулми активсе пăхиччен) - Ухсайшан та "çĕр çинчи çатмах".

Поэт çунат хушаканччĕ, çĕртен уйралаканччĕ - Ухсай апла мар, вал - "тапра поэчĕ": "Шап-шурă пĕлĕт тарах çуреме, куратан-и, ман урасем тапралла..." Ухсай хай туйамĕсене ютта шанса парасшăнах мар, хĕрарама пушшех те. Унăн поэзи философийĕ - пĕчченлĕхре. Поэзире те ("Хам пĕлнĕ пек шаратап кĕввĕме"), юратура та ("Чаннипех те çивчĕ хачă Касрĕ-ши юратава?") Ухсай хăйне ытларах шанать, никамран пулашу кĕтмест.

Çамрак поэтан юратăвĕ вăйлă туйамлах мар, тепре чухне кĕвĕçу - вĕчĕрхенуллĕ те. Вал хăйне асăрхасса ытларах кĕтет. "Начар теместĕп хамăн сăнăма" ... - текелет поэт тăташах. "Ура тапса, пуçа ухса" хăйне мухтать Ухсай. Кашни поэт чи малтан хайне пысăка хуни (хăйне ним вырăнне хуманнисем те чылай) пит начар япалах мар. Акă, Пушкин та çак йĕркесенче хайне-хай саванать: "Ай-да Пушкин, ай-да сукин сын". Поэт псевдониме те - хăйĕнпе киленнинчен çуралнаскер. Ăна вал "Ача чухнехи çалтăрам" поэмăра каласа хаварать. Ух! междометипе "сай" çармас самахĕнчен пĕрлештерсе тунăскер иккен унăн литературари иккĕмĕш ячĕ: "Хитре тени пулать вал çармăсла ", "... Хама янравла ятлă эпĕ турам ... "

Тепре чухне поэт эгоизмĕ хайне тивĕçлĕ хакланинчен те ытларах пек туйăнать. Паллах, поэт хайне пысака хунипе никама та сиен тумасть, сăмах ăсти чи малтан хăйне асархать, хай чунĕ урла вара - тĕнчене. Эдем пахчи карти урла "çылахла" тĕнчене санать Ухсай. Çак тĕнчери хĕрарăм та çылахсăр мар иккен, вал хушăран икĕпитлĕ те, хайне тивĕçлĕ арçынна та асархамасть, хушăран, теприсем çине те пахкалать:

*Халь ăçта эсир, хура куçсем:*
*Кам çинс пăхатăр ялапах,*
*Асăрта тытатăр-и мана?*

Е тата :

*Сăмахна манса, чĕру кăварĕ*
*Теприне хĕртни çулеи пĕлсен,*
*Хурланса сасартăк кăвакарĕç,*
*Хуп-хура ман çуçĕн пĕрчисем.*

Черченкĕ, илемлĕ, илĕртуллĕ хĕрарăм сăнарĕ çукрах Ухсайăн, пур пулсан та унăн арлăх паллисене, эротикăллă сăн-сăпатне сăрламасть поэт. Ухсай хĕрарăмĕ - çĕр çинчех, сăваçпа юнашарах, алă тăс та - вăл санан ытамра, ана тилмĕрес çук, пуççапас çук. Хĕрарама тупене çĕклесе, идеалист-романтик пек, ним тулккисĕр кармашмасть, вăй хумасть поэт. Хĕрарăм хайне курентернине е асăрхаманнине пит каçарасшанах мар вал:

*Вахăт иртрĕ. Иртрĕ вăçе çул*
*Тин мана ăн сав, ăн тăк куççуль.*

Юратура упкелешусёр пулмасть: "Нумайранпа вал савна теприне...", "Юрататган эсё теприне..." Хайне упкелесен те, сахал пуранни çине йавантарать, айапне çулсен сисёмлёхёнче шырать: "Çамрак пуç, юратура, эх айван иккен, айван...", "Мёншён иккё пулчё-ши хёр сукмакё çул çинче."

Юрату - ар туйамёсене те поэт çиеле каларма юратмасть: суха туса, васкамасар, çураки туна евёр, пурнаçан ытти вак-тёвекёсемпе пёр шайра тана пек куратпар çак камала:

*Юратрам эпё.*
*Илтём эпё арăм.*
*Тутă те унăн*
*Тутлă чуп тума.*
*Чёлхи те унăн çиччё*
*Калаçма.*

Поэзири ёçтешне, П.Хусанкая, Ухсай хёрарам çине ёçлёрех, лапкарах, романтика тётёмне калармасар пахма хистет, ар туйамёсене пит ирёке ямалла марри çинчен тёкерех калать.

*Çыратăн вăтăр çул ытла та ёнтё*
*Хёрсем çинчен, хёрсем çинчен кана.*
*Тархастăн, тусăм, эс пёрре пулин те*
*Сăвва кёртсе хăвар-ха арамна.*

1930-33 çулсенче поэт Мускав университетёнче вёренет. Анчах хула кёрлевё те, студентсене касаклантаракан поэзири плюрализм та Ухсая илёртмест, "Силпи çилёсемпех" аташать вал. "Поэт, атя хире!" - тесе чёнет хайне. Пёррехинче Ухсай Н. Гумилеван "Шестое чувство" текен саввипе паллашать: "Ухсай "краснел от стыда" и удивлялся, как это стихотворение могло быть напечатано" (Б.Бассаргинан "Яков Ухсай" кёнекинчен, 18 с.) Мён пулна-ха Ухсая, мён çав тери именternё? Вырас поэчё хайён эротика туйамёсене уççан каланине йышанмасть Ухсай, ун психологийён картине вырнаçман ку туре самах. Гумилеван савви - арсынăн эротика туйамёсен хаватне мухтакан хайнеевёр гимн: "Хёрарам парнелет пире асаппине те, ар канаçлахне те..." Ухсайшан, поэзири темле "измсене" йышанманскере, юрату çине капла "çылахла" пахни - хай чунёпе çурекен "Эдем пахчин" лапка идиллине пăснипе пёрех.

Поэтан темле сыхлах туйамёсем те пур пулас. Шура офицер Гумилев, имажинист Есенин тата поэт-формалистсем унăн поэзийён лапкалахне, çутçанталак гармонине пасассинчен те сыхланна вал, пурнаçё йыварланасса сиснё унталла-кунталла туртансан. Пёр "измне" йышаннах Ухсай: социализм саманине мухтани - çак вёрентёвён илёртулёхёнчен килнё пулас.

Поэт лирикинче санланна хёрарам саваç чунёнче çамал шухашсем çуратмасть, типёрех сарсемпе сарлать ана вал: аллине çурла тытнă амашён сăнарё, асаилури тёксёмрех куранакан ёлёкхи савни санарё... Ухсай хёрарамё сăнёпе "чечек пекех илемлетет çёрс" (поэт чунне мар), е вăл хăй ёçёпе илемлё... Поэт лирикинчи хёрарам

саваçан чунĕнчи арлах кăмăлне çуратма пултараймасть, вăл ана унщан кирлех те мар. Хĕрарам тени çутçанталăкпа гармониллĕ-виçеллĕ пултар, ан пастăр вал çав килĕшĕве (уçа эротика кĕввисем валли кун пек камалпа çыракан поэтра выран çук):

*Пĕр çутçанталăк çеç тăрлетĕ*
*Ăна хăй тунă тĕнчинче*

Поэт пичетленнĕ пĕрремĕш сăввинче те: "Юратрам эп, "хĕрсем". сире" тес выранне "хирсем" тесе ярать, юрату вут-çулăмĕнчен паранать. Çаипа поэт ар-юрату канăçлахĕнче мар курать çын телейне. Çыш телейĕ - çутçанталăкра, унпа килĕшуллĕ пуранninче. Ахальтен мар кулленхи пурнăçăн çылахĕсенчен тасатакан символ та Ухсайăн - мунча, чаваш мунчи. Поэт хай мунча кĕрет-и, геройĕсем-и - мунчара çеç канаçлах тупанать вĕсемшĕн. Поэт хайĕн 70 çулхи юбилейĕнче калана евĕр "хут çинче те кут çинче тытанса таракан хальхи пурнаçан" усал кирĕкĕсене çуса тасатма та мунча пулашать. Ухсай мунчи - Эдем пахчине кĕричченхи тасату символĕ.

Камалсар пулмалли, хуçалмалли салтавсем пулнах çав поэт пурнаçĕнче: вал автомобиль катастрофине лекни, малтанхи какар ачи çĕре кĕни, хватгерĕ çунса кайни, машарĕпе поэт хушшинче пулса иртнĕ инкеклĕ патармах, чунĕ йышăнман çынсем пурри тата ытти пурнаç кукар-макарĕсем пырса тивни поэт чунне амантнах. Анчах вал хăй поэзири тапса таракан хаватне çухатман, çутçанталак паракан хавата. Çур ĕмĕре çитсен поэт ностальгилле шухаша кайни те пулкалать:

*Çап-çамрак чухнехи инçе юратăва*
*Хампа пĕрле усрарăм та ана манмарăм.*

Çак укĕну юрату кĕввисене хай саввисенче сахал выран пана тесе шутласси патне те илсе çитерет поэта. "Хам хывна çип-çинçе сукмак аçта?" - тет саваçа, ĕлĕкхи юрату сукмакне шыраса, анчах вал илемлĕ сукмака "асфальт хуплана"...

"Аллисем атген питĕ хытаччĕ, тимĕр аласем темелле," - тет Елена хĕрĕ, ашшĕ çинчен аса илсе, вал ачашлама юратсах кайманнине палартса. Пурнаçри турккесрех камалĕ те, шанарла характерĕ те унан поэзири турĕлĕхне, пытаранчак çиллипе пит хĕруллех мар юратăвне те калăплана пулас. Çемьепе те пит таташах пулма юратман вал, ялта пĕччен юлса ĕçлеме тарашна. Çемьери хĕрарăм ачашлăхĕ те илĕртсех кайман пулмалла поэта, иртен-каян хĕрарам сăнарĕ те астарман унан туйăмĕсене. Вал çутçанталакпа çывахрах пулас тенĕ, çамрăкран вăл унта çеç çаланăç курнă. Эдем çĕршывĕн сывлашне çеç кăкăрне тултарас тенĕ. Çакнашкал хупăнчăкрах камал пулнипех пулĕ, ун çинчен аса илнисем те сахалрах, тата поэт юратăвĕн хăйевĕрлĕхне те сăнама çамăлах мар. Çак пĕчченлĕхре ĕнтĕ, Эдем пахчин лапкалахĕнче, Ухсай пултарулăхĕн хавачĕ. 1992 ç.

# П.Эйзинан Эрос ыратавĕ, е "юратавăм аçта эс?"

"Ыратава питĕ тарăн туйăмпа сисме
пултарсан çеç вăл нумай пымасть...
Эсĕ ăна чатаймасан, вăл хăй силсе каять."
(М.Монтень, 16 ĕмĕрти философ,
"Опытсем" кĕнекерен).

Пĕр лекцире темиçе студентка аллинче П.Эйзин саваçă кĕнекисене асархарам. Çакă касаклантарнипе, ыйтрăм: "Мĕншĕн темиçен те пĕр саваç кĕнекипе айкашатар, урăх поэтсем çук-им?" "Вал анланмалла çырать, часрах витерет пире"- терĕç кусем. Шухăша кайрам: "Мĕн тупна-ха ун саввисенче?" Ава М.Ставский критик пĕр статйинче Эйзин поэзине "метафоралла та" "философиллĕ" те тенĕччĕ, çамрак хĕр тени унашкал поэзири эрешсене камалласах каймастчĕ-çке-ха?"

Хĕрсем каçса кайса Эйзинпа аташнин тупсамне ун саввисене вуласанах куртам: кашни юрату саввиех унан матриархатлахла (хĕрарама тĕнче тытăмĕн никĕсне лартни). А.Хусанкай тĕпчевçĕ те санана поэтăн хĕрарам патне "черченкĕ, асарханулла" туйăмсем ытларах пулнине. Аяларах илсе катартна çак йĕркесемшĕн кана пирĕн "черченкĕ" этем çуррийĕ Эйзина палак лартма тивĕç:

Сана
никам та
юратмн пулсан -
кил
ман пата.

Хĕрарам тенине шăпах çапла калани кирлĕ те: сахал-ха капла "пуçне çухатна" арçынсем çĕр çинче, такам "ашатна" хĕрарама каялла йышанма пултараканскерсем. Капла калама питĕ вăйла туйăмлă ырату кирлĕ, çав Эрос асапĕ сисĕнет те поэтăн юрату кĕввисенче ("Ача та ыратусар çуралмасть...")

"Мĕншĕн сас памастан?" - ыйтать Эйзин хăй юратавне шыраса, ку та шырав ыратăвĕ. Парапсихолог пекех, тăтăшах пĕр сăмаха калать: "кил", "кил"... Темле туйăмсăр хĕрарам та çак космосран килекен майла чĕнĕве хирĕç пыратех. Кĕтет поэт, кĕтет хăйĕн Эрос ыратăвĕн салтавие: "... кĕтетĕп эп сана ...". Вал килмесен, "Урасăр-мĕнсĕр сан пата çитеп: кĕт". Пĕрехмай сăвăç туйăмĕ çул çинче: е чăтăмсăр кĕтии, е пыма самах пани... Пĕрре те юрату кульминацийĕнче ахлатнине, авкаланнине, уте лекнине курмастпăр сăввисенче. Хĕр пурнисемпе выляни пĕр-икĕ хайлавĕнче пур-ха, анчах вăл та сăвăçăн аристократла хăтланăвне çеç палартать.

Хĕрарăм "кĕртмест" ăшă пулĕме поэта, вăлах "чĕртсе" тата "çунтарса" хăварать те - çухалать, ыйткалакан пекех вара унăн умĕнче поэт. "Эп сана саватăп", - сăмахсемшĕн те вăл хĕрарăмран каçару

ыйтать. Юрату уншан - пысак паттарлах. Саввисенче Эйзинан хёрарамёсем майран пырса саканмаццё, çапах çапла пуласса поэт пытаранчăклăн та пулин кётет:

**Эс мана савас пулсан**
**хёлле**
**çулça кăларё пыçаç.**

"Сана эп юраймарам", - тенинче те поэт ытларах хайне айаплать:

**Сăнё те çук,**
**тумё те çук -**
**пурёцёрех**
**пуранать çав аннăн.**

Те çаванпах, пёр саввинче хай чун ыратавё патне, илёртуллёрех пулас тесе-ши, "хуран çырли", "сивё çалкуç", "хёрлё улма" санёпе пырса кёрет.

Поэт туйамё çапларах вăтанчакрах, лапкарах пулнаран-ши, юрату саманчёсем те каçпа, тёттёмре иртеццё, хай "кăшкăрăвне" те поэт ун пек чухне аран "шала çыртса", ыраттарса чарать. Эйзин юратавён кунтёленёсем (свидетелёсем ) - çут çанталак пуламёсем: "хёвел", "уйах", "пёлёт", "çалтар" тата ытти çутапа тёттём символёсем. Юрату саманчё хёрсе пырать çеç - поэт чёри "шарт сикет", сивё уйах поэт "выранё çине улахса", ана: "Ах, упашкам!" - тесе "ыталать", "пăвать", "кёл пек сив тутипе лечекелет" питне .

Çапла питё тётёмлё-тётреллё юрату тёнчи поэтăн. Уçамла мар вал, асамла, пытаранчăклă, темле вайсем тухатнаскер; тулашне сахал тухать, йёр хавармасть. Сайра хутра çеç сăвăçăн ар канăçлахён туйамёсем укерёнеццё: "Лайах. Чатма çук лайах", - тет те, çав хушарах "вёри ырату сунчё" тесе вёçлет.

Кам-ха вал, Эйзинан юрату ыратавён çалкуçё умёнче тараканскер? Вал - сăнсар, вал - абстрактла, вал - пачах çук е тётре ашёнче. Поэт хёрарамё поэтрах, вал - ёмётре, вал - туйам тёлёкёнче, çаванпах хёрарам - вулакан Эйзин саввисенче хăйён ташман-конкуренткине курманнипе, хайне валли те унан поэзийёнче канăçлах тупать, ун валли те выран пур иккен çак туйамсен тёнчинче. Хёрарам-вулакан поэт лирикипче хайне хутёлекене тупать:

**Сана**
**астарёç- астарёç- астарёç те (Мицё хуг-ши? - В.А.)**
**улталёç.**

Е тата.

**Эсё**
**чечек.**
**Сана**
**кураццё те**
**татаццё.**

"Эпё апла мар, эпё урăхларах, ман юрату таса" - тенён илтёнеццё поэтăн рыцарла каланă сăмахёсем. Ку вал - поэтăн пархатарлă эгоизм туйамёсем.

Юрату тасалахне сыхласа хавараканне те хĕрарамрах курать поэт, хай те вĕсем майларах пулнине систерет. Ахальтен мар пĕр саввинче хулари пасалса-ясарланса пĕтнĕ чаваш хĕрĕ-хĕрарамĕсем хушшинче аран-аран пĕр "ялтан килнĕ сапайла пикене" асархать, ана вал çылахла тĕнчерен тасан сыхласа хаварасшан. "Хура халах хушшинче сар пике" шыракан саваса "сансар пуçне пĕр никама та эп кирлĕ мар," - тет. Сапах та поэт чунĕ - пысак чун: хĕрарамсем пасалса пынине пĕтĕмĕшле сивлет пулин те, вал хайне парахна савна çыннине касарса каялла йышанма хатĕр, ним кĕвĕçмесĕрех.

Эйзин ыратавĕ куçамла, пĕр выранга тамасть. Çаванпах саввисенчи чи анла сарална символ-санар унан - "юр", "юр пĕрчи". Юр - юрату тасалахĕн палли ("юр-çарамас"). Ака, унан пĕр саввинче юр, илемлĕн илĕртсе укекенскер, пылчак çине лексе вараланать, варанать (поэт арçынпа хĕрарам хутшанавĕсем выран çинче те илем чиккинчен ан тухса кайччар тет). Автор пĕр поэмине "Юрли" ят парать. Чапла юрату гимнĕ вал. Юр - "вахатлах", юр - "сивĕ", юр - "вĕçсе-чупса" каять, юр -"ирĕлет", юр - "илĕртет"... Пĕтĕмпех юр тĕнчи, валах - Эрос патшалахĕ.

Поэтан эротика кĕввисем тунсахла, ыратуллă. Саваça хай те çак пылак ырату тунсахĕпе киленме камаллать. Юратава какар çапса хутĕлемест, пĕлĕте романтика çуначĕ сарса çăлтар илме улахмасть, çĕр çинчех лапкан, васкамасар шырать юратавне. Хĕрарам çылахĕсене те ыраттарсах каçарма хатĕр, вал хайпе хĕрарам умĕнче çалакан Прометей пек курать, Данко пек чĕрине каларса пама хатĕр.

Пĕр саввинче хайĕн "йатанса тухна" туйамĕсене "ан пикенĕр хаклама" тенĕччĕ. Хайтамар калама хамар шухаша, ма тесен саваça хай туйамĕсене халах умне каларна-çке, паллаштарна вулакана вĕсемпе. Поэт ыратавне анланас килчĕ. "...Çуркаласа такам эп..." - тет хайне Эйзин; çук, памĕç поэта чăваш хĕрĕсем хайне пĕтерсе хума. Мĕншĕн тесен П.Эйзин поэт нихаш поэтран çуллĕрех шайра хĕрарама анланма, ачашлама, каçарма пултарать. Хайĕн арçын эгоизмне çĕнтерсе, поэт хĕрараман Эрос хĕлĕхĕсене хумхантармалли самахсемпе санарсем калапласа пырса тивме пултарна-çке.

1992 ç.

## Ф.Павлов - сентименталист, е унăн пултарулахĕнчи асар-писер туйамлах

"Эпĕ сентименталист мар, анчах сентименталла историсене юрататăп" (писательсен калаçавĕнчен).

Литература тени ĕмĕртен икĕ майла яр уçа куранакан çулпа аталанса пына. Пĕри вал - идея, шухаша уçамлă палартаканни, тепри вал - идея шăнарĕсĕр е туйамла литература. Шăпах вичкĕн

туйăм-сисĕмлĕ илемлĕ хайлавсем часах кивелмеççĕ, мĕншĕн тесессĕн вĕсенче - этем чунне хускатма-кисретме, хумхантарма пултаракан чи ансат ĕçсемпе геройсем, урахла каласан, кулленхи пурнăç юхăмĕ. Çак туйамлă, хĕрхенуллĕ-куççуллĕ, çивĕч драматизăмлă, выран-выранпа шутлĕ-ироннилĕ литература сентиментализм юхамĕнченех килет те, çапах та реализм вăйлă аталаннă тапхăрсенче социаллă аура (геройсене хупарласа таракан самана) çыравçăсен сентименталла туртамĕсене çивĕлетет çеç, геройсен чун вылявĕсене тата асар-писертерех, арпашуллăрах туса ярать. Шăпах сентименталла романсемне киносериалсем ("Унесённые ветром", "Рабыня Изаура", "Богатые тоже плачут") хăйсен ансатлахĕпе литература эстечĕсене "тарахтараççĕ", ахаль вулаканпа куракана вара, пĕлу шайне пахмасарах, анраса кайиччен геройсен шăпипе касăклантараççĕ, сюжет хай патĕнче хĕскĕчпе хытарса лартнă пек тытать.

Ф.Павлов пултарулăхĕнче те çак сентименталла туртăм питĕ вирлĕ налăрать, паларать çеç мар, этем туйамĕсен урам-сурăмĕ соцреализм литературовечĕсем пите камаллакан социаллă ыйтусене ним мар хăйĕн вăйлă хумĕсем айне тăвать, çыннан кулленхи туйамĕсем идеологине те, патшалăх тытăмне те пăхăнманнине ĕненме парать. Ф.Павлов драмипе комедийĕн конфликчĕсене пĕлтерĕшлĕрех тăвас тесе-ши, хальччен критиксем вĕсенче класслах текен принципа социаллă шухашсене çеç куратчĕç (çамрак тĕпчевçĕсем хальтерех ку шухаша сирсе ячĕç). Ф.Павлов генилĕхĕ - унăн хайлавĕсен конфликчĕсен ансатлахĕ: кулленхи пурнăç хирĕçĕвĕсем вĕсенче, эпир кашни кун пырса çапăнатпăр вĕсемпе. Вĕсемех - хамăр пурнăçан камичĕ те, драми те, трагедийĕ те. Этем чун-чĕрин чи ыратакан, çч ачаш вырăнĕсене пырса тивтерет Ф.Павлов хайлавĕсенче пулса иртекен драматизмла ĕç-хĕл.

Арçынпа хĕрарăм хутшăнăвĕсен асамлăхĕ, асаплăхĕ, кулашлăхĕ, çивĕчлĕхĕ, трагедилĕхĕ (ясарлăхĕ те çук мар!) вăй парать Ф.Павлов драматургăн ăсталăхне. Çак сентименталла ăсталăх туртăмне авторăн хăйĕн тумхахлă, йывăр, телейсĕр пурнăç шăпипе çыхăнтарма пулать. Хĕрарăмсемпе хутшанса Ф.Павлов телей тупайман (икĕ хут ăнаççăр çемье чамартама хăтланни, малтанхи телейсĕр юратăвĕ, çывăх хĕрарăмĕ арçынсемпе куç умĕнчех йăкăлтатни). Çавна пулах-и, тен, унăн хĕрарам-героинисем питĕ хăйнеевĕрлĕ. Ф.Павловăн сентименталлăхĕ илĕртуллĕх мар, вĕсенче ачашлах тени те, романтикалла çĕкленуллĕх те сисĕнмест. Вăл трагедилле, таран психологиллĕ е шутлĕ-камитлĕ. Синкерлĕ сентименталлаха эпир "Ялта" драмара, иронилле вара "Судра" комедире куратпăр.

"Судра" комедире Сăпани те, Ухтеркке те, çемье ăшши тахçантанпа курманскерсем, хăйсен савнийĕсемпе варттан тĕл пулаççĕ, çаванпах пĕр-пĕрне кĕвĕçсе-тулхăрса пурăнаççĕ. Ютпе чун

ыйтнă çывăх çынпа туйпах пĕрлешессине пĕлсен çеç вĕсем судра пĕр-пĕрне каçараççĕ. Çак пĕчĕк сентименталлă, шутлĕ историрен эпир пурнăç таппин вăйне сисетпĕр: Ухтерккен чаркăшрах кăмăлне те, Сăпани, çамраклах хусахра çуресе касăлнипе, кăшгах йакăлтирех пулнине те каçаратпăр. Пурнăç пушăлăха юратмасть, вăл хайĕннех илет, пĕччен пуранма пурмен-çке этеме, тетĕн вара.

"Ялта" драмари сентименталлă юрату историйĕ кăткăсрах, тарăнрах. Геройсен характĕрĕ те сулăмлăрах. Автор хăйĕн геройĕсене ăнсăртран килекен эпизодсенче тĕрĕслет: Ванюк хăйĕн арамне "еркĕнпе" тытать - Çаппан арамĕ вилет - пушар тухать- Ванюка салтака илсе каяççĕ - ача вилет - Елюк шыва сикет - туя Ванюк пырса кĕрет - Елюк вилет...

Юрату, кĕвĕçу, ултав, ухмаха ернĕ герой, эротикалла сценăсем, çивĕч диалогсем... Пĕр туй йăли-йĕркине тĕппипех çырса катартни çеç сентименталла драматизм картине ларман пек туйăнать.

Ф. Павлов хĕрарамĕсĕм ялаиах пĕччен шапаллă, арçынĕсене те телейлĕ теме çук. Çылăхсар, таса герой та çук унăн. Анчах хăйĕн çылăхла геройĕсене те автор ăнланма, хĕрхенме тăрăшать. Калăпар, Çаппан хĕрарăмсем çумне çыпçаннин сăлтавне хĕне кайна арăмĕпе çыхăнтарать, вăл та туйамлă çынах пулнине снстерет. Сапани арçын тупса янин сăлтавне те хăйĕн тăван упăшки вăрçăра вилнĕ хыççăн тунсăхласа çитнĕ çамрăк хĕрарам организмĕ ыйтнипе ăнлантарать. Урахла каласан, чăн-чăн сентименталист Ф.Павлов.

Геройсем çемье тĕрекие тупайманнине те автор шăпипе çыхăнтарма пулать пулĕ. Елюк туй çĕррине ыватса хăйĕн малтанхи çемйине аркатни, пĕччен пуранакан Пăрчкан (вăхăтлăха арçынпа йăпаннине шуга илмесен) асапланни... Драмăра Ф.Павлов хĕрарăмра çемье тĕрекĕ курмасть. Елюкăн телейсĕр шапи те хăйĕн чикесĕр тапса таракан арлах туйăмĕсенчен килме пултарасса эпир малтанхи сценăсенченех куратпăр: Йаскар куçĕ умĕнчех çамрăксем çылăха кĕреççĕ, пĕрлешмесĕрех, хăйсен телейне çывхартас тесе. Асар-писер, урăм-сурăм çаврăнать Елюк пуçĕ, икĕ арçын танатине лекнĕскер, иккĕшне те хĕрхенекенскер, анчах чун çирĕплĕхĕсĕрскер. Çаппан шывран çăлсанах, Елюк: "Ман пурнăçа çăлнăшан-эпĕ санăн..." тесе ярать кĕтмен çĕртен. Автор Елюк хăтланăвне хак памасть. Сапах та сентименталла истори тĕллевĕ-ялти çамрăк мăшăрăн шăпине тĕрлĕ пăтăрмахсем урлă кăларса сăнасси. Çапла тунă та драматург.

Сентименталлă юрату историйĕ трагедиллĕ вĕçленет пулин те, эпир автор туйăмĕсен хĕрхенуллĕ сăн-сапатне сисетпĕр. Чăн-чăн литературара автор туйăмĕсемпе вулакан туйăмĕсем пĕр-пĕрне шыраççĕ, тупаççĕ те. Ф.Павлов сентименталист пулни унăн классика шайне пĕчĕклетмест, вăйлатать çеç. Павловла сентименталла традицисем чăваш литературинче паян кун та пурри çакна чĕррĕн ĕнентерет. Пурнăçăн кулленхи ансатлăхне сăнласси - чи йывăр ĕç.

Апла пулсан литературари сентименталла историсен пуласлахĕ питĕ пысак.

1992 ç.

## Наркамаш, револьвер тата арçын çуçĕ, е литература геройĕсен алибийĕ пирки

Вилĕм вăл - вилĕмсĕрлĕх патне выртакан çул. (М. Робеспьер).
Çĕçĕпе пистолет халь - тавралăх хуçи...(Н.Теветкел, "Ахăрсамана").
Сивĕ çапна чуна вилĕм кĕтĕр. (Çеçпĕл Мишши, "Йывар шухăшсем").

ПУРНАÇПА ВИЛЁМ тупсамĕ пин-пин поэта, философа кăсаклантарнă. Авалхи египтянсем, ава, пурнăçран ытларах вилĕме хаклана, ана халалласа пирамидасем купалана, мумисем туна. Платонпа Сократ та вилĕме çамалрах йышанма вĕрентсе "чун вилĕмсĕрлĕхĕ" çинчен калакан шухашпа халах çине тухна. Халах мифологийĕпе фольклорта та "вилсе чĕрĕлни" анлă сарална. Анчах вилĕмрен шикленнинне ирттерсе яма çамалах мар çав. Вилĕмрен харанине этем çĕнме пултарнине, калапар, Л.Толстойан "Иван Ильич вилĕмĕ" тата П. Хусанкайан " Тилли юррисем" (..." йалт пушатса каймастпар тĕнчене ...") хайлавĕсенче асархатпар. А.Шопенгауэр философ шухашĕсене пурте йышанмаççĕ пулин те, пурнăçпа вилĕм кĕрешĕвне хакланине илсе парас килет : "Вилĕм - çутçанталăкан тĕнчене кисретекен вайĕ, пуранасшăн тапаçланакана хыта пырса тивекенскер; эпир пураннаран килекен тавару. Вилĕм - ачана пылаккан çуратта рна хыççăн аталанакан асапла пурнăçа татни ... Унан никĕсĕнче темскерле ытлашши япалана пĕтерес туртăм пур, çаванпа эпир пулма парахатпар".

Вилĕм - литература хайлавĕсенчи тĕп ыитусенчен пĕри. Вăл унта пурнăçрипе пĕр мар çав. Ытларах чухне вăл - санарлах меслечĕ, каçарар та, писатель вулакана сĕнекен вăйă. Литературари вилĕм - героя тата писателе анланма май паракан стиль палли. Персонаж-преступниксен яланах алиби пур: вĕсене цивилизаци саккунĕ те, уголовла кодекс та турех айапламасть. Айаплакан судья - вулакан. Вăл çынвĕлерен персонажа çынлăх категорийĕ, тĕн канонĕ, идеологи догми, хайĕн пурнăç опычĕ витĕр каларса хаклать. Çаванпах Раскольников е Нарспи çын çине ал çĕкленине те тĕрлĕрен йышанма пулать: пĕри каçса кайса мухтать, тепри сивлет, виççĕмĕшĕшĕн вара пĕрех.

"Ан вĕлер", - тет Библи. "Вĕлернĕшĕн - хошь не хошь шура кирпĕч шутлан", - тет патшалах йĕрки. Пĕр илемлĕ литература çеç,

вулаканан чун-чёрин чи анланма çук туйăмёсене арпаштарса ярса, вёлерекене каçарттарасси патне те илсе çитерет (Нарспи çын вёлерене те ытларахашё ыра, пархатарла персонаж тени çакна ёнентерет). Вулакан герой валли хайех алиби шухашласа кăларать: персонаж айапла мар, ана хупарлакан тёнче, ун таврашири усал çынсем айапла. Çын пурнаçне хёрхенме мантарнă тоталитарла çёршывра пуранса усалпа ыра кёрешёвне ансат татса пама ханахна эпир. Пуян-так, "халах ташманё" пулсан - унан вилёмё те "йыта вилёмё". Ака, Тахтаман та çынах, анчах ана та анланас, хёрхенес туйампа хальччен никам та самах пуçарман, авторсар пуçне ("...пётрё чаваш ёмёрё...). Литературари вилёме тёрёс йышанма соцреализман идеологилле тётём-сёрёме те май памасть. И. Ахахан "Икё виле" новеллинчи шура офицерпа хёрлё салтак виллисене санласа панинчех эпир писатель тёнчекурамёнчи çак шайрака куратпар (иккёшё те Таван çёршывшан вилнё вёт, анчах ана вёсем тёрлёрен юратаççё çеç). Тайаран "Чапла вилём юррин" е Çеçпёлён "Пурнаçпа вилём" саврисенче те вилёме фаиатизмла, пёр енлёрех куратпар (каярах Çеçпёл халахшан вилни кана мар, анман пурнаçшан е юратушан пурнаçран уйралма майсем пурри çинчен те çырать, хай те çаплах тавать).

ГРАЖДАН ВĂРÇИ, революци, коллективизаци, асла варçа çулёсене çутатакан нумай произведенире те этем пурнаçё ним выранёнче те мар. "Пурнаçа революцилле аталапура кăтартмалла" текен принципа тёпе хуна писателе геройсен çулё çинче таракан класс ташманёсене ним шелсёр вёлерттерме хистенё.

Çак шелсёрлёх, курайманлах, чунсарлах - писателен гуманизм принципёсене хирёçле япала, пурнаç чанлахёнчен паранни те. Тата харушарахчи вара - çак "революцилле шедеврсем" çаплах шкул программинче пуçпулса тани. Çаплах эпир ачаран революци салтакёсем çитёнтеретпёр-и? Кампа кёрешме? Хурт-капшанкана, чёрчуна вёлернине сивлесе воспитани паракан сава-калава вулатпар ачасемпе, çын вёлернине вара çаплах "революцишён кирлё" тенипе çырлахса иртгерсех яратпăр. Ку ачасен эгоизмёнчен пуçласа çын вёлерес туйамёсене те ним мар ураланма пулашать. Кунашкал литература геройёсен нимёнле алшби те çук, шкул программинче те пулмалла мар вёсем.

Литературари геройсен вилёмё темиçе тёрлё пулать: 1.Çутçанталăк вилёмё (ваталса , чирлесе çёре кёни); 2. Ăнсартран е сарамсар килнё вилём (ку пулам талантсăр хайлавсенче уйрамах тёл пулкалать: çыравçа хай героине сюжет картне лартаймасăр уппа искусствалла майпа ним шелсёр сывпуллашать); 3. Программалана (палартса хуна), логикаллă вилём (революци, варçа, детектив хайлавёсенче); 4. Трагедиллё вилём.

ХАЛЛЁХЕ ЭПИР трагедиллё вилём литературара мёнле санланнине асархапар. Çак трагедиллё ёç-пуç персонажсен тёнчекурамне, туйăмсен асар-писер таппине, герой хакне-пёлтерёшне, ана хупарлакан тёнчене курма май парать. Çак вилём - пурнаç маски, çак маскана уçса, вулакан çыравçăпа пёрле героя ăшчикки таран тишкерме пуçлать.

Эпир, чăвашсем, вилёме Гоголь пек камитлё курмастпар, камикадзе идеологийёнчи пек фанатизмла вилёме те, вилём агонийён вак-тёвекёсене натурализмла санланине те йышансах каймастпар. Чăваш вилёме нихăçан та пурнаçран уйармасть, çаванпах литература геройёсен вилёмёсен синкерлёхё те питё уçамла.

Ака, К.Иванован пурнаçа юратса çырна капши япалинче тенё пекех вилём хуçаланать: "Нарспи" поэмара пур тёп герой та пурнаçпа çав тери асанлан уйралать: "Тимёр тыла", "Шуйттан чури", "Талах арам" - вёсенче те вилёмсем. Вёсен вилёмёпе поэт тёнчери усаллăхпа ырлах шайне виçме уса курать.

АВАЛХИ асчах Эпикур, этем телейён виçине тишкернёскер, "гомо-сапиенсан" виçе тёп пурнаç туртамне палăртать ("капризы и потребности смертного человека" тейёпёр ана): 1. Çынна пуранма çак япаласем кирлё: апат, тумтир - кусем çутçанталак ыйтнисем; 2. Этем унсăр пуранма та пултарать, анчах вал та кирлё: ку вăл - ар канаçлахне шырани; 3. Çын çакансăр пуранма пултарать, çутçанталак та ыйтмасть: чапшан çунни, пуянлах, хай телейёшён кёрешни, ирёклёх шухашёсем... Шапах çав виçё салтава пула этем шапи тёрлёрен килсе тухать те.

Юлашки икё салтава пула ёнтё литература геройёсен вилёмне трагедилёх сёмё çапать. Чи касакли - трагедилле вилёмсен кисрету хавачё ытларах арçынпа хёрарам хутшанавёсен хёрулёхёнчен килни. Чи классикăлла япаласем чăваш литературинче (пирён кана-и: Шекспир, Гарсиа Лорка, Мериме...) арлах туйамёсем тата этеме астарса-арпаштарса яракан ытти ёмётсем пуçпулса тани çинче пикёсленеççё. Çын мён ыйтнипе (унан эгоизм шайёнчен килет ку) пурнаç ана мён чухлё телей пани нёр-пёринпе хирёççе каять. Хайне хай мён чухлё юратни çак хирёçўре алла тёрлё вилём хатёрё - хёçпашалё тытма хистет героя, преступлени тусах хайён телейё патне кармаштарать.

Литературари геройсене пăхатан та - пёр-пёрне наркамаш параççё, револьверпа переççё, çёçёпе чикеççё, куçран махорка та сапаççё ("покушени" теççё кана юристсем)... Юрать-ха усал тавакан герой çавнах курать. Ака, Нарспи те çынна вёлерсе телей кураймасть: хай те вилеть. Автор хайён героинине питё юратать пулин те, вăл усал тунине каçармасть, чун тёпёнче те пулин сивлет ("зло наказуемо" тенине тытса пырать). Алла наркăмаш тытна хёрарама ниепле те идеал тума май çук (чылай статья авторё çакна вайпах сёнсен те).

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ



К-33862

Пĕр статья авторĕ, ав, Нарспие хăйĕн каччипе савăшассишĕн Тăхтамана - упăшкине - вĕлернине тем тĕрлĕ каçарассишĕн тарăшать, Ухсай поэтăн йĕркисене илсе парать (вал хайĕн машăрĕпе мĕн хăтланнине пĕлет пулин те). Капла пирĕн çĕр çинче йĕркеллĕ хуçа-арçынсем те юлмĕç арамĕсем малтанхи савнийĕпе тĕл пулассишĕн хайсен упăшкисене вĕлерме тытансассан?!

Нарспи преступленийĕн салтавĕ - чун асапĕ, таванса çитни. Çак чун чирĕн никĕсĕнче вара - унăн эрос ирĕклĕхне таптани. Унăн пуçне арпаштарса яраканни те - çак ар канаçлахне çухатни. Пĕтĕм трагеди те Нарспие хайĕн эротика идеалĕнчен - Сетнертен - уйарна хыççăн тытăнать: Нарспи мул тĕнчине хирĕç тăрать, ашшĕ-амăшне сирсе ярать, алла наркăмăш тытать. Нарспие каçарас çук, ана а нланма тарашмалла.

Наркăмăш тенĕрен, аçтан тупнă-ха Нарспи çак усал шĕвеке (çанăха?) варманти чаваш ялĕнче? Кам пана ана наркамаш? Аçтан пĕлет тата вăл наркамашсене, вĕсемпе уçа курмалли майсене? Тен, вăл хай тухатмаш пулнă (ахальтен мар вĕру-суру чĕлхин самахĕсене те пĕлет Нарспи)? Тен, К.Иванов тĕрĕс туна та наркăмаш рецептне памасар, атту халĕ хлорофос-ацетонсемпе аппаланаççĕ, юрать-ха çалса хаварма пулать вĕсенчен. Тахтаман вара, наркамашла яшкана çисен, тухкамрах çут тĕнчепе сывпуллашать. "Епле вилнĕ Тăхтаман?" - ыйтаççĕ виле патне пырса кĕнĕ хушалкасем, анчах халах пуçарна следстви чаранса ларать: Нарсписĕр пуçне ана никам та пелмест (авторĕ хăй те ) - мĕнле наркăмаш вилĕм илсе килчĕ-ха?

Наркăмăш тени хутран-ситрен ытти хайлавсенче те тĕл пулкалать: Талвирăн "Пăва çулĕ çинче" повеçри Ухике, ав, çывăртгаракан наркăмаш параççĕ. Асланăн "Ахрат" романĕнче те сивлек геройсем Сальери меслечĕпе хатланаççĕ. Чи анла саралнă меслет вара - çĕçĕпе пистолет (ĕçсем хăçан пулса иртнине кура вĕсем черетленеççĕ). Ухсайан "Тутимĕр" трагедийĕнчи Эрпике хайĕн таван ашшĕне (?) (мĕнле хакламалла кăна?) хĕçпе чикет. Айтар та хайĕн юратнă мăшăрне "сивĕ хĕçнашалпа" - çĕçĕпе парантарать. Янтрак, ав, хайĕн пулас кĕрĕвне сенĕкпе чикет. Ванюк хайĕн юратна Елюкне револьверпа персе пăрахать. Аçтан тупна-ши тата тыткăнран тарнă Ванюк çак хĕçпăшала? Ыйтусем, ыйтусем... Преступлени хыççăн преступлени. Юрать-ха ку литературара кăна, литература меле тейĕпĕр. Анчах та вĕсене шкулта вĕрентетпĕр вĕт-ха, ачасене анлантаратпăр. Нарспи идеал, Ванюк лайăх ача теме пуçласан, ку мĕн патне илсе çитересси пирки шутламастпăр та: çынна вĕлерни те начарах мар (усаллине), вĕлермелли хатĕрне те суйлама пулать. Анчах пĕлме çук-çке: такама ача усал тет, кайран хăйĕн пуласлахĕнче мĕн тăвĕ вăл?

Çавăнпах герой хакне пĕр енлĕ курмалла мар çав. Суя тумачизм пулать вăл апла. "Революци", "варçă" темипе çырна хайлавсенче

çынна велерес ыйтава татса пама ансат пек, анчах, хальхи куçпа, шухăшламалли те чылай: этем пурнаçĕн хакне устерме тивет паянхи кун. Литература геройĕсен вилĕмне е преступление икĕ енлĕ курмаллине те манмалла мар: 1.Литературари вилĕм-санарлах мелĕ, вайа, искусство тĕллевĕсене пурнаçлать; 2.Гуманизм принципĕсемпе мĕнле тур килет (нимĕнле идеологи те, тĕн те ан хуппантар ана калана чух). Шкул ачисем хайсен сочиненийĕсенче: "Эпĕ - паянхи Нарспи", - тенинче шăпах çапла шухашласа çитерменнине курма пулать.

Литературари геройсем хай çине ала хунине те тĕрлĕрен санлаççĕ çыравçасем. Елюкпа Селиме шыва сикеççĕ. (Островскин Катерини пек). К.В.Ивановăн "Талах арам" балладинчи çамрак хĕрарам вара упăшкин виçĕ пĕрчĕ çуçĕпе çаканать. Мĕнле майпа - ку авторан мифологиллĕ шухашлавĕн вартăнлахĕ.

Мĕн вал çын хай çине алă хуни? Преступлени е çылăх? Этем вайе е вайсарлахĕ хайне пурнаçран ирĕкпе уйарни? Тем каласан та, ку меслете ырласа йышăнма çуках ĕнтĕ. Халах психологийĕ унашкал вилĕме нихаçан та йышăнас çук. Ахальтен мар çакнашкал сарамсар вилĕмпе вилнĕ çынсене авлхи чăвашсем çава-масарсенче ахаль вилесемпе çумла пытарман, цысак çылах тенĕ.

Хай çне ала хурасси пăтне çак салтавсем илсе пыраççĕ: 1. Манкамаллах, манаçлах; 2. Асап кульминацийĕ (ниçта кайса кĕрейменни); 3. Ухмаха ерпи; 4. Фанатизм (калăпăр, тĕне е идеологие тĕпе хурса усасăр вилни). Чăваш литературинчи персонажсенчен вара тахăрвунă процентĕ иккĕмĕш салтава пула пурнаçран уйралать. Хайне хай вĕлерсе персонаж пурнаç никĕсĕпе кĕрешме хатланать, анчах хай пурнаçне çеç пĕтерет, чунĕпе чирлĕ нулнине çеç катартать.

Литературари персонажсем хайсем çине ала хунине вĕсен авторĕсен шапи хушшинче пĕрпеклĕхсем чылай. Поэт тенинче асап саманчĕсем чылай. Çаванпах вĕсем пурнаçран та иккĕленмесĕр каяççĕ: Маяковский, Есенин, Цветаева, Çеçпĕл шапи те çакнах ĕнентерет. Черченкĕ вĕсен чунĕ, чирлĕ вĕсем чунпа (кунта вĕсене курентерес тени çук).

М.Федоровăн Хĕветĕрĕ, ава, хайĕн çине ала хума танаскер, вилĕме çĕнтерет. Овод, вилнĕ ятне туса, çынсем пăтне урах ятпа тавранать. Пахатăн та: литература геройĕн сарамсар вилĕмĕсем чылайашĕ юратуна курайманлах çинче никĕсленеççĕ (чăн-чăн трагедиллĕ хайлавсенче). Темле турех санама çук арçынпа хĕрарам хуппанавĕсен синкерлĕхĕнчен килеççĕ вĕсем. Эроспа Вилĕм тени вĕсенче çирĕп çыхăнура. Ивановăн талах арамĕ арçыш çуçĕпе çаканать (темшĕн хайĕн вуна хут варамрах çуçĕпе мар!). Эрпике те, Селиме те юратна арçынĕсемшĕн пĕтеççĕ, Нарспи те Сетнерĕ хыççăн каять. Пĕр Ванюк çеç эгоист (те юратмăн вал Елюка?): арамне вĕлернĕ хыççăн хайне тĕкĕнмест, "ухмаха" ерсе тухса каять çеç.

Гитлер та, ава (Нагибин писатель версийёпе, "Çулпуçсен юратавё" ярăмра, унан ар хатёрё выранёнче чёркусçи пек яка выран пулна тет иккен), хайён Ева Браун еркённе ют арçын ытамне хаварас мар тесе хайпе пёрле наркамаш парать. Вилём сценисенче, наркăмаш, револьвер, майкачсар пуçне, яланах кёвёçу, курайманлах, арлах туйамёсен ниçта вырнаçайми вайё тапса тарать. Вилём меслечё те, хёçпашалё те мёнле пуласси писателён туйам шайёнчен килет.

Литературара ансартран пулакан вилём çук (чан-чаннинче, паллах). Кашниех пысак пёлтерёшлё. Литературари преступленисене хальхи кодекссемпе хаклама çук çав. Çынлах тени çеç тёп выранта пултар.

Мёншён çынлах? Темле каласан та, писатель илемлетсе-санарласа вилёме нумай чухне анлантарма пикенни - питё каткас япала. Кунта унан шапи те, тёнчекурамё те куранать. Вулакан, паллах, йанашма та пултарать. Çав йанашасси чавашсен пурнăспа вилём философине çаплах йёркелеменнинчен килет, наци философийён никёсё çукки те арпаштарать вулакана. Писатель герой валли туна алиби е пирён шухашлав шайне пырса саланса каять, е тёрлё преступлени тума та хистеме пултарать. Достоевский сапласа пана преступленисем XX ёмёрти тёрлё варçа-репрессисене вилём пани пирки те калаççё ава. Апла пулсан, писатель пултарулăхёнчи вилём темине питё асăрханса йышăнма ханахмалла пирён.

1993ç.

## Эрос тата Танатос ташши, е Çеçпёл Мишши пурнăçёпе пултарулахёнчи юратупа вилём санё

Чан-чан поэт икё
кёвве çеç нăхапать
юратава тата вилёме.
(А. Блок)
Сивё çапнă чуна вилём кётёр.
(Çеçпёл Мишши, "Йывар шухашсем").
Ку нурнăçра вилни вал темех мар.
Анчах пурнас тени те çёнех мар.
(С. Есенин).
Юрату чирёсемпе тата пăрăнчăксемпе
çеç Достоевскин творчествине те,
христианстăо вăрттăнлăхёсене те,
коммунизм идейнне те...
анлантарса пама пулать.
(З. Фрейд, философ).

Кам вал Çеçпёл? Поэт е чавашсен пророкё - Нострадамусе? Коммунист е анархист? Гражданин е эгоист? Сыва çын е психологийёпе чирлё этем? Патриот е çёрёк сентименталист?

Ыйтусем, ыитусем... Хуравĕ вара - çулерех асанна антитезасенче (хирĕç шухашсенче). Çеçпĕл пек хирĕçуллĕ поэта ытти саманасенче те, халĕ те сайра куратпар: Байрон, Есенин, Маяковский, Хусанкай... Чан-чан саваçара сывви те, чирли те (самах кунта чун чирĕ пирки пырать) пулмаллах. Чунпа чирлĕ пулмасан, "çуп-çапран сава" (А. Ахматова) тума çук. Çуп-çапа вара пурнаçра тем чухлех. Этем вара, И. Бродский калашле (Нобель премине илнĕ чухне калана самах), сава форми патне шухашламасар-хатĕрленмесĕр пырса тухать, ана вырас поэчĕ "миметизм" тет (тĕнчери пуламсене, ахаль чĕрчунсен тĕнчинчи майла, пĕтĕм кĕлеткепе аша илсе е хирĕçлесе, поэт йышанать е хирĕçлет).

Эгоист, çĕрĕк сентименталист, чунпа чирлĕ... Вулакан калама пултарать: кирлех-пш пирĕн классика кашла варалама? Анчах кам калана-ха искусство çыннин пур енĕпе те этем идеале пулмалла тесе? Калапар, Сальвадор Дали, гениллĕ художник, хайĕн пĕр укерчĕкĕ айне "Эпĕ анне çине сурса хуратап" тенĕ. Ван Гог художник хай халхине касса татма пултарна. Достоевский психика тĕлĕшĕнчен чирлĕ пулна. Гойя, Омар Хайям, Çеçпĕл... Кашнин хайĕн асапĕ, хайĕн трагедийĕ, чирĕ (пур чир те обществашан харуша мар)... Анчах вĕсем этемлĕхшĕн кирлĕ ĕçсем тунине шута илсен, вĕсен çылахĕ куранмасть те.

Çеçпĕл çышсене юратманнине пĕр савара та, çырура та каламан. Вал хайне çеç юратман:

Ах,
Нăшкатăп,
Хал пĕтрĕ, хул халсар...
Эй!
Ыватăр мана,
Беç - ывăтăр,
Кĕпер айне ыватар мана.
Ах,
Ĕнсене хуçăр.
("Кĕпер хывăр").

Хайпе-хай камалсар пулни - Скорпион палли (поэт çак палла айĕнче çурална). Çак паллари çынсем вилĕмрен харамаççĕ (авалхи пĕр укерчĕкре пĕчĕк ача-Скорпион çын пуçĕн шаммипе вылять). Скорпиона никам та пĕтереймест, вал хайне-хăй çисе ярать, кашлать, чĕрине "çуркалать, мамаклать, какайлать" ("Паянтан"). Пĕр вахатрах вал вайла. ("Эп хам пин-пин"...), çав вахатрах нишлĕ, вайсар. Çак паллан чи вайла енĕ - вал ытгисемшĕн (Çеçпĕл-чăвашсемшĕн) асапланни, хайне ытгисен шайне çитеймен пек туйса, вĕсене çеç ыра тума тарăшни ("Пĕр йĕпе-сапара канса выртап, Шупашкаршан выçса йанашса"). Çеçпĕлĕн ницшеанство (нишлĕлĕх) идейисем, çапла вара, вал хай халахне тата юратна хĕрарăмне тивĕçлĕ пулайман пулĕ тесе шутланинчен килеççĕ. Скорпион çĕнтерме. ханахна. Хай халахне телей хаварт курейменшĕн кулянать Çеçпĕл. Анастасия Червякована

хай майлă çаварайманшан асапланать поэт. Çĕнтерейменнине, вал Танатос (вилĕм) ытамне каять. Анчах çак Танатос ытамĕнчен хаталма майсем пулнах Çеçпĕлĕн. Çавсенчен пĕри - ачашлах, çепĕçлĕх. Ĕмĕрĕ çапла килнĕ поэтăмăрăн: ана ачашлакан, çупарлакан ачаранах сахал пулна. Ашшĕ Мишша куçĕ умĕнчех çынна пуртапа касса парахни çивĕч вĕçĕпе пулас поэт чĕринчен те юн каларнă, "арканса кайна урмаш психологиллĕ" (Н.Теветкел) туна. Çеçпĕл хай çине ала хунин сăлтавĕсене пурне хуçса шутласа вуннаран та иртертĕмĕр. Вал чунĕпе чирлĕ пулнине халĕ никам та хирĕçлемест. Темле пулсан та, хĕрараман искусство çыннин пурнаçĕнчи выранĕ нирки те манса каймалла мар: Пушкин, Некрасов, Л.Толстой, Есенин, Маяковский, Неруда... Поэтсем, шăпасем, вĕсен пурнăçĕнчи юрату пăтăрмахĕсем... Блок поэт туррисем Эрос (юрату) тата Танатос (вилĕм) пулнине ахальтен каламан пулĕ.

Юрату тата Вилĕм кĕвви - Çеçпĕлĕн кашни саввинче, кашни çырăвĕнче, пурнаçĕн кашни утăмĕнче. Çеçпĕл чун чирĕн салтавĕсенчен пĕри - упашкалла, хăйĕнчен вуна çул асла вырас хĕрарамĕ Анастасия Червякова, мăнкăмăллăрахскер, Çеçпĕл юратса парахнине кокетка, еркĕн пек вылякаласа йышаннаскер. Темшĕн нумайашĕ Червякован пĕлтерĕшне ытла çĕкленуллĕ хавхаланупа укереççĕ. Чанах та, Червяковăна пула Çеçпĕл 28 вырăсла сăва çырна теме пулать (чылайăшĕ - ăна юратнипе çыханна). Çеçпĕл юратăвĕ трагедиллĕ пулнине йышанакан тĕпчевçĕсем те пур, (Г.Юмарт, В.Родионов), Çеçпĕл юрату ваййине "эстет" шайĕнче çеç выляна тесе калакансем те пур (Ю.Яковлев), Р.Ишутов вара Ççпĕле "хăйĕн арлăх хаватне те шанманскер" тет. Темле пулсан та, Çеçпĕлĕн кĕске пурнăçĕнче Эроспа Танатос ташши тĕп выранта пулнă. Юратупа вилĕм ахрамĕ - унăн пурнăçĕпе поэзийĕн тĕп кĕввисенчен пĕри.

"Юратнă хĕрарăмпа пурăнас телейĕм çукки маншан - космос шайĕнчи трагеди..." - тет поэт хайĕн кун кĕнекинче. Çак шухаштуйăма Çеçпĕл хайĕн "Нуся" патне çырнă 99 çырăвĕнче палăртать (1919 çулхи июнь уйахĕнчен пуçласа 1921 çулхи май уйахĕччен). Майралла йĕрĕнчĕкленсе йыпăнна çав "Нуся" Çеçпĕл туйăмĕсене, вĕсемпе французсен салонĕнчи куртизанка пек, йĕкĕлтесе, кушак хăйĕн шашийĕпе выляна пек (шашийĕ - Червякован "илемлĕх" тытканне лекнĕ Çеçпĕл) выляна. "Эсир, хитре вырăссем, нихăçан та нĕрсĕр, илемсĕр чăвашан синкерлĕ шăпине ăнланма пултараймастăр. Вăл вара, шел пулин те (эсир тĕлĕнетĕр пулин те) туйма пĕлет!" - тет поэт тарахса хăйĕн виççĕмĕш çырăвĕнче. Тилмĕрет поэт, вилессипе те хăратать, анчах вал хай ытамĕнче Червяковăна çеç курасшан: "Сан уте тĕкĕнес килет", "ыраттармалла варам-пылак туйăмсен ытамĕнче усĕр пек пулас килет", " пĕтĕм тĕнчене манса ахлатас килет, вăй пĕтерес килет"... Çĕрĕпе сăвăçа Нусьан перчеткипе вырăн çинче вылять (вăл унăн шаршипех ухмаха ерет):

...Мучаясь и тоскуя
В тьме ночной, стыдясь, осыпал
Жарко Вас "Чупту" я.
Ах, перчатки дорогие...

Анчах Эрос тёлёкёсем юлашки çыравёсенче сирёлсе пыраççё Çеçпёлён: "Эпё сирёнпе пурантам. Эсир ураххине юратрар. Ман пурнаçа çёмёртёр, ватрар - каçару çеç ыйтрар. Çапла пулмалла та. Эсир хёрарам пулна. Эпё - идеалист, вайсар арçын, ёмётпе çеç аташакан..." Хай юратура улталаинине туйса илет саваçа. Вилес умён икё эрне маларах çырна "Выдуманным глазам" сава - Çеçпёлён а нман юратавён гимнё, юратупа вилём гармонийён кёвви. Хайён ар туйамёсене тапратна хёрараман илёртекен кăвак куçёсенчен "такана-такана" тарса, "хирти сивё çил хыççан хаваланипе" поэт вилём патнелле утать. Эросан пылак, пуçа минретекен тытамёнчен хаталса, Çеçпёл Танатос ытамне хирёçлемесёр йышанма хатёр.

А.Червякова - Çеçпёле тёрек парайман хёрарам, унан шапипе выляна эгоистка. Мён вал поэт вилсен ана каялла чённи, темле юрату çинчен çырни (самах кунта Çеçпёл хай çине ала хуна хыççан Украинана çитнё Нусьан темиçе çыравё пирки - вёсене поэт çунтарма пултарайман, малтанхисене пек)? "Ман упашка 1920 çулхи декабрьте вилчё. Ун хыççан эпё Мишша çинчен кана аса илсе пуранна", - аса илет Червякова. Мёнле хакламалла çак хёрараман чун уççине? Тен, Çеçпёл çак хёрарам пурнаçёнче пысак пёлтерёшлё арçын пулна пулсан, Нуся поэта çалса хăварёччё-те-и? Ачаран кётнё ачашлах кирлех пулна çав поэта.

Çеçпёл хайне нёрсёр, илемсёр тесе шутлана, çаванпах хёрарам текенни асархамасть пулё тесе асапланна. " Эпё пёлетёп, эпё нёрсёр, тискер" - "эсир хитрисем, сирен илемлисен тёнчи"... Çакнашкал антитезасем унан çыравёсенче таташах. Çеçпёл те, вырас поэчё А.Пушкин пекех, хайён сăнне "упате санё" тет. Асла Пушкин пёр саввинче: "Питпе эп чан упăте", - тет. Çеçпёлён "Чун асапё". ("Истома") юратулла-психологиллё калаври Миклуха (вал автобиографилле прототип) çине те хитре хёрсем: "Упате", - тесе лачлаттарса сурса хураççё. Çапла Миклуха санарёнче поэт хайён юрату асапне санлать. Сăн-питпе илемсёр, килпетсёр Миклухара та арçынлах туйамёсем çуркуннепе пёрле, вайари хёрсен хусканавёсене курсан варанаççё. Калавра çамраксен юрату ваййисем, арлах хавачён ниçта кайса кёрейми хумё, чун тёпёнчи Эрос кёрлевё тёнчене кисретет, çёре хай куççулёпе шăваракан курака аллисемпе çав тери вёчёрхенсе çумла-çумла перекен Миклухана пурнаçран уйарса ярать. "Китай çынни санлă Миклуха", вармана кёрсе каякан çамрак машарсене асап куççулё витёр асатна май, " хайён нурнăç хавалё йалтах арканассине туйса илчё, вал кунта ытлашши çын иккен, çут тёнчере никама та кирлё мар тискер чун кана". Çапла ку калаван тёп

кĕвви - юратупа вилĕм килĕшĕвĕн ахрăмĕ. Юратупа телей тупайман арçын вилĕм çинчен ĕмĕтленет. Поэт шухăшне çапла сăнарлан палăртать ку хайлав.

Çапла, хĕрарăман обществăри вырăнĕ питĕ пысăк. Çаван пекех, тĕнчери пур чапла патшалах деятелĕсен, наука çыннисен, поэтсемпе писательсен, художниксемпе артистсен шăпине те чылаях пырса тивеççĕ хĕрарăмсем. Библири пĕр притчăра та ава, Адам, Евă па пурăнма йывăр тесе, Турăна каялла тавăрса парать, кайран хĕрарăмсар та май çук тесе, Евана каялла ыйтать. Çеçпĕл - генилле поэт. Генисен çемье, юрату пурнăçĕ нихăçан та лăпка пулман, нумай чухне ахаль çынсен пурнăçĕн картне те ларайман. Ава, Лермонтов хă йĕн таван аппапше юратса пуранна. Некрасов хайĕн гражданла арă мĕ Панаевапа пурăннă (лешĕн чан упашкипе варçанмасăр). Л.Толстой, хайĕн мăшарĕ ункелепшине чатаймасар, ват пуçпах килтен тухса каять, темле аякри чукун çул станцийĕнче вилсе каять. Есенин, хĕрарамсене пулах теççĕ, хай çине ала хурать. 11-12 ĕмĕрте пурăнна Омар Хайям поэт хайĕн пурнăçĕнчи виçĕ япалана мухтать: хĕрарăм - эрех - вилĕм. Çеçпĕл те хуравсăр, асаплă юратупа çунса вахăтсар кĕлленет, ачашлăх курмасăрах сивĕ çĕре анса выртать. Ку юрату Çеçпелшен наркотик пекех пулнă, хуçнă, авкалана ăна вал. Ытти салтавсемпе пĕрлех, унăн чунне татах чнрлеттернĕ. Çапла, малалла пуранса вăл вилĕме хирĕç тăрайман. Халахшан, революцишĕн кăна мар, хăй чунĕ лăпланайманнипе те, хăйне малтанах йышанман хĕрарăм чĕрине амантнше те вилме пулать теме пуçлать юлашкинчен Çеçпĕл. Сенека калапле, "пурнăç тени пит çĕнĕ япалах мар: чурасем те, чĕрчунсем те пурăнаççĕ. Чи пысăк пĕлтерĕшли - турĕ, таса, ăслă, хаюллă вилĕмпе пурнăçран кайни". Апла пулсан, Çеçпĕл поэтăмăр вилĕмĕ - хăй кăна татса панă акт. Эпир унăн чунне чирлеттернĕ хăшпĕр фактсем çинчен çеç каласма пултаратпăр ( çав шутра юрату - Эрос çинчен те), анчах хамар шайпа унăн вилĕмне виçме, ăс пама пултараймастпăр. Генисем хăйсене турĕ çул çне тăратнине йышăнмаççĕ.

1994 ç.

## Каринкке Кевĕрлин савăшу поэзийĕ

Каринкке Кевĕрли - 20-мĕш ĕмĕр урапи кусма пуçласан, чăваш поэзийĕн тинтерех сас пама тытăннă çăлкуçĕ умĕнче тана çыравçа. Шел пулин те, вулакан унăн пултарулăхĕпе ку тарана çитсе те анлăн паллашайман-ха, унăн ячĕ те тĕпчевçĕсен ĕçĕсенче çеç тухкалап.

Каринкке Кевĕрли (Гаврил Алексеевич Кореньков) - чăваш халăхĕн талантлă поэчĕ, куçаруçи, педагогĕ, шкул учебникĕсен авторĕ, культура ĕçченĕ. Шел, икçĕре яхăн сăввине, поэмисемпе

юмахĕсене туллин пичетленине хай пурăннă вахатра кураймарĕ, литературана юратакансем те тивĕçлĕ хакламарĕç. Чавашла çырнă хайлавĕсен пичетри шучĕ питĕ сахал. "Атя, юрать. Хам валли..." - текелесех, арча тĕпне пулас ăрусем валли хăварнă вăл вĕсене. Куренмелле сахал пĕлетпĕр-ха эпир унăн пултарулăхне, унăн хамăр ĕмĕрти чăваш литературинчи вырăнне те ытла ăшăх шайра виçсе хаклатпăр, ана классиксен ретне лартма та хал çитеймеспĕр. Çапла çав, эпир, чăвашсем, тепĕр чухне пурне те тивĕçлĕ хаклама пĕлместпĕр.

Çутçанталак йĕркине пăсаççĕ тепĕр чухне пирĕн поэтсем: çуралма та çуркуннене "суйласа" илеççĕ вĕсем, çĕр çинчен те тĕнче чечекленнĕ вăхăтра каяççĕ: Константин Иванов, Каринкке Кевĕрли...

Куславкка чавашĕ, пулас поэт, Кивĕ Тĕрлемес ялĕнчи тăпăл-тапăл хресчен кил-çуртĕнче, "эпĕ тĕнчене килтĕм" тесе сасă парса, 1884 çулхи пуш уйăхĕн 24-мĕшĕнче (çĕнĕ стильпе ака уйăхĕн 5-мĕшĕнче) çуралнă. Пирĕнтен уйрăлма та унăн çуркуннех, 1949-мĕш çулхи пуш уйăхĕн 16-мĕшĕнче тивиĕ.

Ачалахĕнче савăнаçĕ те, асра юлакан самантсем те чылай пулнă Каринккен. Ашшĕне питĕ тав тăвать Каринкке хăйĕн шапишĕн: вăл ывалне ĕçе хисеплеме вĕрентнĕ, хăйпе Атăл тăрăх илсе çуресе (ашшĕ парахут çинче матрос пулна), Кевĕрлене 2 çул хăйĕнчен хăвармасăр ăна хăйне çеç шанма тата чăтăмлă пулма, тавракурăмне устерме ханăхтарнă. Ашшĕ, Атăл тăрăх укçа тума тухса кайнăскер, ывалне хай пĕлнĕ пек укерчĕксем, саспаллисем ăсталаса, хутла вĕрентнĕ. "Мана аттех вилĕмрен те çапса хăварнă пулĕ", - тесе тав тăвать Каринкке ашшĕне. "Апат çиес умĕн кашнинне вăл ман çавара пĕр черкке перцовка, халер чирĕнчен сыхлас тесе, вăйпа яратчĕ", - аса илет поэт. Сав йывăр вăхăта аса илсе, Каринкке çапла каласа хăварнă: "Халĕ те 1891-92 çулсене çуçенсе аса илетĕп: Атăл хĕррипе халер чирĕпе вилнĕ çынсен кĕлеткисем выртатчĕç, вăл çул юханшывра раксем те çухалчĕç".

Ашшĕ хистенипе Кевĕрле 1892 çулта Тĕрлемесри вак халăхсен училищине вĕренме кĕрет: "Хутла пĕлет тесе, - куларах аса илет поэт - мана турех иккĕмĕш класа илчĕç". 1895 çулта ăна ашшĕ (каллех вăл!) Чĕмпĕре вĕренме кайма пуçтарăнма хушать. Учительсем хатĕрлекен И.Яковлев ана "хутла начар пĕлет" тесе, хĕрачасен класне вĕренме вырнаçтарать (революциччен гимнази шайĕнчи шкулсенче, асла шкулсенче арçын ачасемпе хĕрачасене уйрăм классенче вĕрентнĕ). Хĕрачасене кана тивĕç "вăртăнлăхсене" курни, вĕсен психологине сăнама тивни, хăйне, тен, хĕрачасем хушшинче шурă курак пек туйса куренни каярах Каринккене сăввисемпе поэмисенчи хĕрарам санарне тĕплĕнрех калаплама май панă (чăваш поэзийĕнче никам та Каринкке чухлĕ ыра сăмахпа та, упкелесе те хĕрарăм çинчен çырман!). 1897 - 1903 çулсенче тин ăна хăйпе пĕр ар ретĕнчи

юлташĕсемпе вĕренме тивет. 1903 çултан пуçласа мĕн виличченех тăван ялĕнче, Тĕрлемесре, ахаль учитель, унтан шкул директорĕнче ĕçленĕ.

Чĕмпĕр чаваш шкулĕнче вĕренни Каринккере литература туртамне аталантарать, наци туйамне чĕртсе ярать, сутлăх принципĕсене аша хывтарать. И.Яковлев вĕрентнине асра тытса, куçĕ хупаничченех чаваш халахне савса, уншан тарашса ĕçлет. Мĕтри Юман аса илнĕ тарах, Кевĕрле Атал çинче, çын пусман выранта, çĕнĕрен "таса чаваш хули тавас, çав хулана пĕтĕм маттур чавашсене пухса унта культура ĕçне хаватлăлатса ярас" тесе ĕмĕтленнĕ пулать.

Империализм вăрçи вахатĕнче учительсене ĕç укçи питĕ сахал туленĕ. Ял çыннисем ана пупа ĕçлеме кайма сĕнеççĕ. "Çук, эпĕ, выçса вилес патне çитсен те халаха çутта каларас ĕçрен уйралма пултараймастап", - тесе таварна вĕсене Каринкке. Вал хай халахĕ умĕнчи тивĕçне ăнланса, 45 çул халаха вĕрентес ĕçре вай хуна, "Раççейĕн тава тивĕçлĕ учителĕ" хисеплĕ ят тата Ленин ордене илме тивĕçнĕ çак чăн-чăн чаваш интеллигенчĕ.

Ачасене питĕ юратна вал. Вĕсем валлиех çирĕм теçетке ытла И.Крылов юптаравĕсене чăвашла куçарнă, хор йĕркеленĕ, ачасемпе комедисем лартна. Ĕçре хĕру пулна вал. "Табак хыта туртатчĕ, васкамасар ĕçлетчĕ", - ашшан аса илеççĕ ана курна çынсем. Хăйĕн пурнăçри выранне пĕлсе ĕçленĕ вал. Ахальтен мар ĕнтĕ Кивĕ Тĕрлемесри чи хитре урам унан ячĕпе хисепленет. Шупашкарта та тахçанах вахат çитнĕ пĕр урама унан ячĕпе чыслама. Учитель ĕçне патшалах тивĕçлĕ хаклана тейĕпĕр. Анчах унан литературари пайтине тинтерех çеç хаклама пуçларамар.

Литература ĕçне те халаха питĕ кирлĕ тесе шуглана Каринкке. Çаванпах пуль вал 20 ĕмĕр пуçламашĕнче укĕнерех çапла калать: "Ун чухне чăваш литератури çукчĕ, çаванпа сава çырма мана çамал марччĕ... Учительте ĕçлеме пуçласан, чăвашла çырас туйăм-шухаш мана пушшех канаç пами пулчĕ". Çĕнĕ ĕмĕр алакĕ уçална-уçалман савасем шарçалама тытанать вал. 1901 çулта Чĕмпĕр шкулĕнче хăй ертсе пыракан "Çамрак савăçсен ушканĕ" алă вĕççĕн каларса таракан журналта унан "Пирĕн ял" сăвви кун çуги курна. "Хам та сăвă çыркала пуçларăм: малтан вырăсла, кайран чăвашла", - аса илет çав тапхара поэт. "Хыпар" хаçатра "Ĕçлеме чĕнни" савви, 1907 çулта "Хальхи пурнăç" ("Тăлăх арăм") хайлавĕ пичетлеиет. Çака пулас поэта хыта савантарна.

Каярах, совет саманинче, пат-пат пичетленкеленĕ-ха унан саввисем, анчах вал литература пуйасĕ çине ларса ĕлкĕреймен: хай те çине тăрсах хăюлах çитерсе, писательсен союзĕн тата журнал редакцийĕсен алакĕсене шаккаман, хавхалантаракан та пулман пулас ăна. Пирĕн творчество интеллигенцийĕн айапĕ ку: унан пултарулăхĕпе халаха вахатра паллаштарайман. Паллах, шкул

хрестоматине пĕр сăвă кĕртнипех поэта классик теме çук ĕнтĕ. Тата унан пултарулăхĕнче Октябрь революцине мухтакан савасем те пулман. М.Сироткин калашле, вал "поэт-демократ" çеç, Г.Кореньков поэтăн "уçăмсăр шухăшĕсем, ирĕклĕх хăй халлĕн килессе кĕтни, ĕç çыннисен революциллĕ туртамĕсене тавçăрса илейменни... революциллĕ кĕрешу çулĕ çине тухса çитейменни" пулнă имĕш (8-мĕш класра вĕренмелли шкул учебникĕнчен). Çав хушăрах Тайар Тимкки е Михаил Акимов йышши вăтам çыравçăсене "революци юрăсисем" пулнăран, классик шайне çĕкленĕ.

Юлашки çулсенче К.Каринккен литературăри тивĕçлĕ вырăнне палăртма тытанчĕç. Г.Юмарт, Ю.Артемьев, А.Васильев тĕпчевçĕсем тăрашнипе хаçат-журналта статьясем тухрĕç, хăшĕр япаласем пичетленчĕç. Темиçе çул каяллах унан çырнисен пуххи хатĕр пулнă, анчах редакторсем Каринкке сăввисем "содержанипе хальхи вăхăтра халăха тивĕçтермеççĕ" тесе каялла тавăрса панă, паха пуçару путланнă.

Тĕпчев институчĕ каларна "Революцичченхи чăваш литератури. Текстсем. 2 том" (1988) кĕнекере поэтăн 20 хайлавĕ пичетленчĕ. Тепĕр "Литература еткерĕ" (1991) кĕнекере кĕскетнĕ 4 поэми кун çути курчĕ. Б.Чиндыков ирĕклĕ издатель хăй укçипе кăларнă "Аван-и" хаçатра "Иванпа Хĕветле" поэма-юмахне кĕскетмесĕр пичетлесе кăларчĕ ("Аван-и", 1992, 10-12). Çав çулхи çурла уйăхĕнчех "Аван-и" хаçат унăн "Ашшĕ пилĕ" сăвăлла юмахне пичетлерĕ. К.Каринккен çырнисен академиллĕ пуххине те кăларма тахçанах вăхăт çитнĕ (халĕ унпа Г.Юмарт ĕçет).

Унан куçарăвĕсем те тăван литература аталанăвĕнче тивĕçлĕ выранта пулмалла. Пуçламăш классенчех пăхмасар вĕреннĕ "Шăрчăкпа Кăткă" юптарун чăвашла йĕркисене аса илер-ха:

Тринкки-тринкки сикекен
Шăрчăк тусăн, юрласа,
Çу иртни те сисĕнмен...

И.Крыловăн 20 ытла юптарăвне питĕ ăста куçарнă вал. Вĕсенчен малтанхи пиллĕкĕшĕ ("Акăш, рак, çăрттан", "Тилĕпе иçĕм çырли"...) "Хыпар" хаçатра пичетленнĕ, ытисем революци хыççăн тухма пуçланă "Шурампуç" тата "Ĕçлекен сасси" журналсенче çапăннă. Валах Пушкинăн "Пулăçпа ылтăн пула çинчен хывна юмахне", Иван Никитинан темиçе саввине чăвашла куçарнă.

Унан сăввисенчи темăпа шухăшлăх шыравĕсем тĕрлĕ енлĕ: пурнăç илемĕ ("Пирĕн ял"), самана тискерлĕхĕпе пурнаç танмарлăхĕ ("Харуша çумăр", "Хальхи пурнаç"), чăваш нишлĕлĕхĕ ("Чăваш"), юрату ("Ан выля"), курайманлăх ("Санăн"), пĕчченлех ("Иртет ĕмĕр пĕр-пĕччен..."), хĕрарăм шапи ("Хĕрарам çинчен"), чăваш культури ("Пуçра шухăш нумай та") т.ыт.те.

Тӗпчевҫӗсем К.Каринкке чаваш поэзине лирикаллӑ туйампа пуянлатнине те палартаҫҫӗ. Ма тесен поэт чун лирикине таса, суймасар, эрешлемесӗр хайлать. Тен, "хайне валли кана ҫыратап" тенӗрен самахсене питӗ уҫамлан, хушаран турккесрех те, итлеме ханахман вырасла-чавашла формасем хушса, выляса каласа хурать. Уйрамах ку унан эрос (юрату) саввисемпе поэми-юмахӗсенче палӑрать.

Шапах ӗнтӗ тӗпчевҫӗсене унан пултарулахӗн ҫак енӗ тавлаштарать те. М.Сироткин тӗпчевҫӗ те, Каринкке пултарулахӗн никӗсӗнче тӗпре таракан ҫакан йышши хайлавсене асархамаш пулса, "незначительные интимно-лирические произведения" тесе хаклать. Ҫапла каланипе ҫырлахмалла-ши пирӗн малашне? Ҫук пулӗ: вахат ҫитрӗ, суя ватанчаклах чатарне сирсе поэтӑн пултарулахӗ ҫинчен уҫҫанрах каламалла. К. Каринкке поэзийӗнчи эрос кӗввисен асамӗ, талантла ҫаврӑмӗсем те ҫакна тумах хистеҫҫӗ.

• • •

Каринкке Кевӗрлин пултарулӑхӗнчи тӗп кӗвӗ юрату лирикипе тата арҫынпа хӗрарам хутшаиавӗсен патармахӗсене сӑнлассипе ҫыханна. Г.Юмарт, Ю.Артемьев, А.Васильев тӗпчевҫӗсем те Каринккен юрату поэзийӗ революцинченхи чӑваш литературишӗн ҫӗнӗ тема пулнине палӑртрӗҫ, поэтшан вал тӗп кӗвӗ тесе ҫирӗплетрӗҫ.

Сӑмаха пытарма ҫук, теҫҫӗ халахра. 70 ҫул ытла литературана ҫаварлахласа тана импери саланнипе ҫеҫ ирӗке тухрӗ ку тема. Юрату саввисем хальччен иккӗмӗш сортлисем кӑна пулчӗҫ, эротикалла поэзие пачах чаратчӗҫ: вӗсем коммунизм тавакана пасаҫҫӗ, чармантараҫҫӗ имӗш... А.Сир тӗпчевҫӗ калашле, "...Совет влаҫӗ вырас поэзийӗнчи арлах паллисене пӗтерчӗ... Арлах туйамӗсем Сталин вилнӗ хыҫҫан ҫеҫ чӗрӗлме пуҫларӗҫ". Наганла, саран пиншакла комисарсем, вӗсен "шалаварлӑ" савпи-большевичкисем, стройкасемпе колхоз хирӗсенче, соцӑмартура юрату шыракан ҫамраксем, тислӗклӗ ферма е тӗтӗм-сӗрӗмлӗ завод трубисен фонӗнче ар канаҫлахне тупнӑ "социализмла" юратушӑн ҫунакан ҫамрак ару - ҫаксемччӗ ӗнтӗ литературара анла саралнa геройсем. В.Розанов философ калашле," атеистсем кана эротика тата секс проблемисенчен паранаҫҫӗ". Эрос ыйтавӗ - этем пурнӑҫӗн чи пысак культура сийӗсенчен пӗри. Литературара вара эротика тени ӗмӗрех курамлан та, пытаранчӑклан та пулна.

К.Каринкке чаваш литературинчи "эротикалла реализма" (Америка тӗпчевҫисен терминӗ) е савашу лирикине пуҫарса яраканӗсенчен пӗри. Сӑвасӑн эрос (юрату) эрешӗ питӗ илӗртуллӗ: хай патне туртать, вал суя туйам мар. Тен, ханӑхман ҫыншӑн поэт

уççанрах, турĕрех калана, анчах аста калана сăмахран, шухăшран тĕлĕнмелле мар.

К.Иванован "Нарспи" поэмипе К.Каринккен "Иванпа Хĕветле" поэминче пĕрпеклĕхсем чылай. Сюжет никĕсĕ те вĕсен сывах: иккĕшĕнче те - чухан каччапа пуян хĕр юратăвĕн историйĕ. Анчах шухăшпа стиле урăх, эрос хирĕçĕвĕсене татса парас майсем тĕрлĕрен. К. Иванован эротика психологийĕ таран, пытарăнчакла, философиллĕ, трагедиллĕ, преступлениллĕ: юратупа вилĕм ахрамĕ пĕр унăн. Каринкке поэминчи ар хутшăнавĕсем уççăнрах, пурнăç философийĕн ансат никĕсĕ çинче аталанаççĕ, çамал та вылянчакла пуриăçа шанса санланăскерсем. Натурализмларах хуплашу - пĕтĕçу эпизочĕсем вулаканшăн чи малтан аçа çанна пек пулма пултараççĕ, анчах авторăн ирониллĕ ăсталăхне питĕ хавăрт туйса илетĕн, вĕçнелле вара ахăлтатсах кулса яратăн.

Каринкке юратава "йĕрĕнчĕклĕ катартать" тени те чăн самах мар, вал унтан чылай çулерех тарать (Э.Золя романĕсенчи эротика илĕртуллех мар пулин те, ана классик тетпĕр - çке), порнографиллĕ содержаниллĕ те мар (унăн пĕлерĕшĕ асканчак хĕрарам пурнаçне санланипе çыханна). Поэмари эротика - искусство шайĕнче санлана пурнаç чăнлахĕ (поэт ана, шахвартса, "юмах" тенĕ пулин те). Кунта В.Ходасевич поэтăн "О порнографии" статьинчи йĕркисене вуласа па хар- ха: "Искусствара пичетлеме чарнă сюжетсем пулмалла мар ... Пур эротикăлла сюжета та порнографи тесе çапса хуçмалла мар ..."

Тĕрĕссипе, сăмах вĕççĕн эпир кунашкал япаласене ачаран илтсе уснĕ (ясар шухăшла такмаксем, эротикалла юмахсем, юра-сава ...). Вĕсене курăш пулса, пичетленнĕ япаласемшĕн лач! сурса варçни выранлах мар. Малашне те тĕттĕм кĕтессенче вартăн, улах вырăн шыраса çурени те преступлени. XYI ĕмĕртех М.Монтень философ ясар çурчĕсене хупассине хирĕç пулна: капла чарсан арçынсем хушшинче преступлени тавакансем пулаççĕ, тенĕ. Сăмахшăн мар, ĕçшĕн айапламалла. Пĕтĕм тĕнчипех çапла. "Плейбой" эротика журналне Америка президенчĕсем вулама чыс тесе шутлаççĕ. Чăваш философийĕ пытаранчаклă, вăтанчакла, пĕчченлĕхле тенипе çырлахма çук ĕнтĕ. Чăваш халахĕн "намăс-симĕс сăмахĕн" пĕр пысак уйрăмлахĕ - вал пысак ирониллĕ пулни, шутпе кулаш этем пурнаçĕн çак енне йĕрĕнчĕклĕн йышăнманни.

К.Каринккен "Иванпа Хĕветле" поэма-юмахĕ шăпах халахран, ирониллĕ-шутлĕ, хăйĕн авантюрăлахĕпе юмах сюжечĕсене çывах. Хайлав пуçламăшĕнче вулакана хисеплесе асăрхаттарать: "Ытла час-час намăсли киле-киле тухĕ, тен. Атя, юрать. Хам валли..." - тет сăваç шахвартса. Арçынпа хĕрарăм хутшăнăвĕсене чăваш фольклорĕнчи майла оптимизмлă шут çинче никĕслесе санлать Каринкке. Боккаччо е XYI-XYII ĕмĕрсенчи французсен новеллисемпе нимĕçсен çак вăхăтри шванкĕсенчи майлă çăмăл вылянчакла,

тарахлаканрах эротикалла сюжет йёркелени те куçкёретех: вёсенче те, Каринкке поэминче те тем тёрлё ар хутшанавёсен патармахёсене лекекен геройсем - "тавçарулла арсынсем" "айванрах хёрарамсене" пуç çаварни, йёкёлтесерех çырни, уççанах этемён ар туртам-туйамёсене ирёке яма чаракан тёнче курама хирёç тани те...

Поэма финалё телейлё: Иванпа Хёветле пёрле пулаççё, мул тупаççё, ар канаçлахёпе килёшулёх тёнчинче саванаççё. Автор шухашё çапларах: эрос(юрату) туйамёсем - çутçанталак пана телей, унран паранма çук, мул танмарлахё юрату ирёклёхне çеç чармав ан кутёр...

К.Каринкке поэмисенче ("Матка пулна упашка", "Шуйттан хăрать маткаран", "Эсрелё" т. ыт. те) ытларах пурнаçа юратма вёрентекен тавçарулла геройсем - шутлеме-саванма, хайсен шапине шанакан, арлах вай-хаватне туйма пултаракан персонажсем. "Ăс укçана çёнтерет" поэма (1905-1914) сюжечё "Иванпа Хёветле" майлах, анчах шучё те, иронийё те, эротика уççанлахё те таранрах (пичетленмелле мар самахсене каларса парахса, ку поэма сыпакёсене 1988 çулхи текстсен пуххинче пичетленёччё). Кунта та вулакана хисеплесе систерни пур: "Варттан çёрте ун çинчен Каппи хавас юмахлать... Çырас тенё юмахран Ытла та пит ватансан, Варттан çёрте вулаччăр, Çыш-мён кёрсен - пытарччар."

Кёске сюжечё: чухан ачи, Сахар, хастар качча, пуян хёре, Марьене юратать. Анчах качча илме май çук. Сахар чеелёхёпе хёре çаварасшан: йамакён тумне таханса, ун выранне Петёре, Марье савнин пиччёшне, "качча" тухать. "Çёнё çынсене" кёлете хупаççё. Хёр тумне тахăнна Сахар "упашкине" хайён патне пыртармасть, унпа пёрле "çыварма" харана пек, пёлмёше перет. Петёрё амашне евитлет. "Çёнё хёре"Сахара, ар çыханаван тути-масине вёрентме черетпе 4 кинё пыраççё. Вёсене Сахар "курентермест": капшине арçын "парнипе" сайлать, юлашкинчен хайён юратна Марьине те "арçын тупи" лекет, амашён вара ирёксёрех кусене пехиллеме тивет...

Вулакан хёрарамсем Каринкке поэмисемпе саввисенче санлаиа хёрарам пур чухне те илёртуллех маррине асархама пултараççё. Хёрарама хурлани мар вал, унан "пуçа çухатгаракан туйамёсене" (А.Пушкин) илемлё майпа çиеле каларни çеç,. çак туйамсене эрос физиологийёпе хакласа пани. "Ват çыш ватанманнине Эпир амма ватанас?" - тет Каринкке, юратаван çак пытаранчак енне те манмалла мар тенине çирёплетсе. Фрейд калашле, этемён ар туйамёсем унан пуранаç туртамёпе тур килеççё. Апла пулсан, Каринкке произведенийёсем - пурнаç гимнён кёввисем. Литература тивёçё - этем туйамёсене варатасси (выльахлисемсёр пуçне, паллах). Çав туйамсен тупинче эротика туртамё те пысак пёлтерёшлё, çавна туйса çырна та Каринкке.

К.Каринккен савашу-эротика кĕввисем унан таран интимла лирикалла саввисенче те тĕп кĕвĕ пулса тăраççĕ. Хай саввисене чăн-чăн поэт майлах асталать вал: ытларахашне "хама валли" тесе калаплать, машарсене асаплантаракан, пурнăçа хават паракан туйама хут çине укерет. Çавăнпа поэт юратăвĕ пĕр выранта тамасть. Каринкке паян хĕрарама юратать, ыран - кураймасть ана, каярах унран тĕнче хĕрне тарса пытанма хатĕр. Туйамсен "серепинчи" поэт хайĕн чунне питĕ ĕненмелле уçса парать: пĕрре вал улапла арçын, тепре пуçне çухатнаскер ("эпĕ çуп пек сан куçра ...") Асаплаиать, иккĕленет, çунать, ватанать, йĕрĕнет, кĕвĕçет поэт.

Юрату саввисем унăн ятсар, анчах "М. П.", "А. Н.", "Д-Н" тата ытти хĕрарам ячĕсене шифр вырăнне çырса хуна. Камсем-ши вĕсем! Итлесе пахар-ха поэт хĕрарампа епле киленнине:

"Эсĕ маншăн - сар чечек.
Пĕрмай сана шăрплаттам..."
"Сана курсан, кашнинче
Пĕчĕк ача пулатăп"

Поэтан хитре хĕрарама курсан: "Наян юнсем вылянаç", - тет. Ака Каринккен саввисенче эротика туйамĕсен характерла эрешĕ:

Миçе хĕре юратса,
Миçе хĕртеи сивĕнтĕм.
Кайран пĕрне тел пулса,
Хĕр чĕрине тин пĕлтĕм.

Поэт донжуанлахĕ хай камалне тивĕçтерекен хĕрарама шыранинче сисĕнет, анчах вал хĕрарăмпа нихаçан та нкĕпитленмест: сивĕннине те, кулянниие те уççан калать:

Аскăн шухăш кам кӳрет?
Никам та мар-хĕрарам!
Çын чĕрине кам çинет?
Каллех шуйттан хĕрарăм!

Тĕрлĕ стильпе калаплать саввисене поэт. Ака, паянхи поэзире паларна П.Эйзин саваçа стильне çвыах "Ан выля" савă (ар канаçлахне тупна арçын самахĕ ку):

Ир. Ик сехет. Чан çапать.
Эпĕ тăтам. Вăл выртать...

"Авалхине астума" тесе ят парать Каринкке пысак та таса юрату туйамлă саввисен ярамне:

Иртрĕ пуль вăл ĕлĕкки
Манассăм çук - çĕрлехи
Ахăлтатни, чуптуни,
Çурма çĕрччен тарлани...

Хĕрарам санарне те поэт питĕ хирĕçуллĕ санлать: "Эс хитре - анчах куштан", "Малтан астаран - кайран пистерен" текен антитезасем унан юрату драмине татах вайлатаççĕ. Хĕрарама та тĕрлĕрен хак парать Каринкке: "Епле сана асилеп - Çапла ручка укереп!" - тет вал, иккĕленсе. Хĕрарам уншăн "сар чечек", "кайăк", "Клеопатра"; çав хушарах "шуйттан", "ансар çамка", "хырамĕ

пăкартататъ" (кунта хĕрарам тени тĕрлĕрен пулатъ тесшĕн пулас). Ун пеккисемпе поэт çыхланасшăн мар, вĕсенчен ытти сене те парăнма сĕнет.

Хĕрараман асканчăклăхĕ пĕрре илĕртет поэта, тепĕр енчен мораль тасалахĕ те вĕсенчен килнине палăртасшăн вал: "Кĕсри кĕçĕнмесессĕн Ăйри пымасть ун патне". Туйамсене пытармасăр калани, вĕсене санлама турĕ те, куçăмлă та пĕлтерĕшлĕ самахсем тупма пултарни унан лирикине ĕненмелле тавать. Çак савăшу саввисене Каринкке 1906 - 1915 çулсенче калăплана (ун чухне поэт 20 - 30 çулсенче пулна). Çамракла уçа камалпа тата турĕлĕхпе çырнă туйам лирикине вал калаçу формипе ăсталать, хай чунĕнче чакаланать, тем шырать. Унан поэзийĕнче ("манман-и-ха", "асра-и-ха" текен риторикалла ыйтусем час-часах тĕл пулаççĕ "Мĕншĕн эсĕ, Кĕркури, Пуçна чиксе ларатан?" йышши монологсем). "Мĕншĕн унан чĕрери Ашă юнне шантатан?" - тесе ыйтать юрату шанăçне турре кăларайман хĕрарамран. "Шухăшĕсене патратран", "ăн-пуçа тăлларăн", "чĕлхесĕр тек ан тусам", - упкелет вĕсене Каринкке.

Тепле пулсан та, çак эротика тĕлĕкĕ-аташавĕ поэтшăн - тура панă телей. Хайĕн арçын хăватне, хĕрарама тулли телей пама пултарассине мухтасах тăрать вăл. Хĕрарăма ангелтан пуçласа шуйтган таран эпитетсем парнелеме пултаракан саваçран çавăнпах нимĕн тĕлĕнмелли те çук: ар хуппăнăвĕсенче те, кулленхи нурнăçри пекех, уяр çанталăк та пур, хушаран аçа та çапса илет. Саввисенче ĕмĕр тăршшĕпе учитель пулса ĕçленĕ поэт Библи сюжечĕсемпе, историри паллă çынсен сăнарĕсемпе уса курать: Амур, Рембрандт, Иуда, Апостол, Ной, Мухамет, Клеопатра, Дьявол...

Чанах та, К.Каринкке поэзийĕнчи тĕп кĕвĕ - эротика (юрату) кĕвви. Анчах вал кулленхи пурнăçри ахаль секс хуппăнăвĕсенчен чылай çулте: вăл сăнарлă, экспрессиллĕ, контрастла... Çакна унăн лирикин эволюцийĕ те кăтартса парать: малтан - пейзаж лирики (1901-1903); унтан - юрату романтики (1906-1907); каярах - хурлахĕ, драми; ĕмĕтсем пурнăçланманни (1907-1909); юлашкинчен - пурнăç опычĕпе йуçекĕ иртсе пыракан юрату-эрос хăватне тунсăхларах та, ироннллĕрех те санлани (1911 çултан пуçласа Октябрь революцийĕччченех). Çак хушăрах унан лирикинчи гражданла-социалла кĕвĕсем те нихаçан та çухалман: "Макар, макар, çанталăк. Макармалли вăхат халь!" - тет поэт 1905 çулхи революци трагедийĕ çинчен (Тайăртан, Шелепирен, Акимовран мĕнрен кая калана?!).

К.Каринкке пултарулăхĕ кĕнеки тухичченех вулакансемшĕн сенсациллĕ пулма тивĕç: унан лирикин шухăшпа туйам пуянлăхĕ те, стилĕ тĕрлĕ пулни те, Çеçпĕлтен малтан силлабо - тоника сава виçипе усă курма пуçлани те... Çав вăхăтрах вăл тури диалект чĕлхипе çырнă поэтсенчен пĕри пулнă. К.Каринкке К.Ивановран, Н.Шупуççыннирен кая мар лиро-эпикалла хайлавсем ăсталани,

пултарулахне хай тёллён туптама пултарни те "революцинченхи чăваш литературн" тесе калакан тапхара çёнёрен теплён тишкерме хистеççё, поэт талантне те тивёçлё хаклама ыйтаççё. Пёртен-пёр чармав пулма пултарать çак пархатарла ёçре: мораль тасалахёшён тарашакан, догматсен серепинчен хăталайман çынсем çеç, "эротика" самаха "усал-ясар" тесе тиркекенсем çеç каллех К.Каринккене касса ваклёç, саввисемпе поэмисене кёскетёç, вулакана, çак лирика пуянлахёнчен "хатарса", тёрёссипе, çаратса хаварёç. Апла пулсан К.Каринкке алçыравёсене кёскетмесёр-якатмасар пичете калармалла: вулакан хай хаклатар: - аçта эротика, аçта порнографи пуррине хай куçёпе вуласа анлантар.

Хёрарампа арçын ут-пёвён пайёсене ятран калани, секс-ар хутшанавёсене турремён санласа пани, тен, вулаканшан ытла кётмен çёртен пулма пултарё, анчах виçё панча лартса, каламасар хаварни те чыслах мар. Шанас килет: вулакан выльах-чёрчун туйамёсенчен çулерех, тасарах, тимлёрех пулё, ку самах вылявё мар, поэт асталахё пулнине хай курё, К.Каринкке хаюлахне, пурнаçа юратнине, унан аптраманлахне хисеплё, савăçăн шутлё-ироннилле чёлхе асталахёпе паллашё.

Паллах, хальхи вулакансемшён ку сенсации евёрлёрех пулё: чаваш самах искусстви кунашкал эротика асталахне алла илме 90 çул каяллах пултарна тесе никам та шутламан.

Халахран хайён ăс-хакал пуянлахне пытарма çук.

1994 ç.

## "Илемлё юрату çеç тёнчене çалса хаварё"

- Паянхи литература пурнаçа тёрёс çугатса парать-и?

- Чирлетпёр эпир пурте. Чуна, камала пырса тивекен, кисретекен унер хайлавёсем те, çав шутра литература произведенийёсем те чирлёрех. Унччен çамалрахчё. Тёрлё "измсене" катартма литераторсене çултенех йёркелесе тăратчёç. Теми те палла - социализм строительстви, геройё те уçамла-кёрешуçё, конфликчё те... Çанах та вал саманара та "пёчёк çынсене" катартма хараман писательсем пулчёç: Ю.Скворцов, Х.Уяр... Паянхи литература пирки каласан, вал çул юппинче. Унан теми те, проблеми те, геройёсем те уçамла мар тейёпер. Ферма хёрёсемпе хастар бригадирсен санарёсен вахачё иртсе кайре. Герой халё халахпа мар, вал пёччен, вал пушанса юлна, "сутса яна пуртре" тёнче çине ыйтулла пахса тăрать: мён турăм эпё, мён çухатрăм, мёнле пуранмалла. кам эпё... Тен,

шапах çак уçамсарлăхра литература çăлăнăçĕ? Пурнаç кукармакăрĕсене идеологипе те, политикапа та, экономикапа та, тепре чухне мораль кодексĕпе те уçса пама çук. Кунта писателĕн тĕнчекурă мĕпе туйăмĕ космос шайĕнчи философилле пулмалла; мифологилле тата историзмла шухăшлама пĕлмелле, пуласлаха фантастикалла курма пултарни кирлĕ. Тĕрĕссипе каласан литература пурнăçа туллин нихăçан та та çутатса параймасть. Вал вулакан туйамĕсене хистесе, пурнаçа сисме-туйма, чĕре витĕр кăларма çеç пулăшать. Проблемисем литературăшăн авалхисемех, вĕсем кивелмеççĕ. Паянхи чаваш литератури вара хай тавра кĕрлесе тăракан пурнаçа унтан-кунтан çеç пырса тивет (тĕнче литератури те çавах). Упран ытлах пит ыйтма та кирлĕ мар: тĕнчене пĕр ытампах ыталаса илеймĕн.

- Паянхи çамрак çыравçасенчен кама камаллатăр?

- "Çамрăк" тенĕ самаха темшĕн йышăнас килмест. Литература произведенийĕ - ана çамрăк çын çырнă-и, вата çын-и-вăл - хай пурнаçĕпе пуранать: вулакан мĕнле йыпанать, критика мĕнле асархать... Кĕскен каласан, унан талантлăхĕ ватăран килмест. "Çамрак çыравçа" тенипе уса курас пулсан, Константин Иванова нихаçан та генилле поэт, классик теме çук, мĕншĕн тесен "Нарспине" вал 17-ре çырна.

Каласа пах-ха халĕ лайах шатайман çап-çамрак сăваçа классик тесе (темшĕн пирĕн "çамраккисем" тата яланах сăвапа кăна айкашаççĕ)! Кăсăклă, хăйне евĕрлĕ çыракан çамрăксем çук мар-ха пирĕн. Шел пулин те, "Аван-и" текен çамрăксен хаçачĕ тухма пăрахна хыççăн, вĕсем хăйсен тепре чухне литература канонĕсене, традицийĕсене пачах вырнаçайман хайлавĕсене пичетлейми пулчĕç (мĕне тăраççĕ Владимир Степанован юри вĕçкĕнленсе-курнăçланса çырнă, литература хайлавĕн чĕлхе штампне çĕмĕрекен хайлавĕсем, тĕслĕхрен!). Çамрăк çыравçăсенчен 90 проценчĕ сăвă çырать. Ку литературăшан пит хăрушах мар. Анчах вĕтелсе каймарĕ-ши çамрăксен поэзийĕ? Ăшăхмарĕ-ши лирика? Çак 90 процентра çĕнĕ ят тупма питĕ йывăр. Пурте юрату çинчен те чăваш чĕлхи çинчен çыраççĕ, "Эп сана юратрăм, эсĕ мана юратмаран", - йыппи аититеза-куççульсем йăлăхтарчĕç пулас. Чăваш чĕлхине юратман çынсем çине хусанкайла "йĕрĕнсе пăхса" илмелли вăхăтсем те иртсе кайрĕç: савасенче вĕсене кана вăрçнипе напи чĕрĕлĕвне малалла яраймăн. Чăваш поэзийĕнче лирикăллă сăвăсен шухăшпа хапине çеçпĕлле

çĕнĕрен кисретекен сăваç кирлĕ. Тен, çамраксем хушшинче тупăнĕç вĕсем?

- Литературăн пĕтĕмĕшле мĕнле пулмалла: ГЭС тунине санламалла е философилле ыйтусене хускатмалла?

- Мап шутпа, литературара тема тени пулмалла мар. "Тракторострой çутисем ", "ГЭС çутисем" ярăмсемпе, ава, хай ва хатĕнче кĕнекесем те тухначчĕ: мĕн кана çук вĕсенче-савви те, поэми те, калавĕ-очеркĕ те... Анчах темшĕн тракторĕ хаватларах, завочĕ ва йларах пулса тăмарĕ çак литература "шедеврĕсене" пула. Апла пулсан, литературăн тĕп тĕллевĕ завод историйĕпе унти ĕç геройĕсене мухтасси мар, трактор деталĕсене тĕпĕ-йĕрĕпе калани те мар. Е ака ял теминех илер: хальтерех кана вĕт вĕсенче ферма ĕçĕ-хĕлĕ, колхоз производстви, ялти пуçлахсем хушшинчи конфликтсем, механизаторсен пурнăçĕ тĕп вырăнтаччĕ. Каярах, В.Распутин майла рах, ял пушанса пыни çинчен çырма пуçларĕç. Хальтерех ял ĕçке пуçни пирки кулянма тытанчĕç çыравçăсем. Мĕнех, питĕ кирлĕ проблемасем. Чаваш прози яланах публицистикалла пĕтĕмлетусем патне туртăнать, писатель-моралист тени те халĕ аила сарална: "Ай-яй! мĕнле япăх капла хатланни", "Ай-тур-тур! çыннисем епле па салса кайна!"- тесе пурнепе юнаççĕ вĕсем. Писатель-врач пек эмел репепчĕ парса хай вулаканне çăлма хатланни, Маяковскилле "ак ку питĕ аван, ак çака япах" тесе татса калани выранлах мар пек. Чан-ча н писатель нихăçан та вĕрентсе каламасть, пурнаçри пирĕшписене шырамасть. Мĕншĕн тесен çыравçа тени те çынах, унан та çитменлĕхсем чылай. Шапах хай çитменлĕхĕсене курса тарса, асапланса, "чĕрине какайласа" (Çеçпĕл) çыратъ вал. Икĕ тĕрлĕ литература кирли пирки иккĕленместĕп: çамал вуланаканни те (сентименталлă юрату историйĕсем, детектив- приключени, фантастика...), таран шухăшли тата философилли те. ГЭС çинчен çыратăнах пулсан, ун çине те философилле пахма пулать: тахтилле "мĕн ку - япала ку?" текелесе çеç ыйту лартмалла.

- Паян классикалла вилĕмсĕр произведени çырас пулсан мĕнле содержаниллĕ пулать вăл?

- Ан тĕлĕнĕр те, анчах классикаллă литературан тĕп содержанийĕ - арçынпа хĕрарам хутшанавĕ, тепĕр майла каласан, юрату парăнăçĕ-савăнăçĕ. Апулей, Боккаччо, Петрарка, Шекспир, Мопассан, Толстой, Чехов, Есенин, К.Иванов, Каринкке Кевĕрли,

Ф.Павлов, А.Артемьев, Х.Акивер... Тёрлё саманари тёрлё халахан писателёсене асантамар, анчах пурин те "ЮРАТУ" тесе пысак саспаллирен çырмалли проблема пур. Çулерех юрату саввисене кана çыракан поэтсене тёксе илнёччё те - хушса калам: литература хайлавё илемлёх тёлёшёнчен, санарлахёпе çёнёлле пултар, тёлёнтертёр, киленгертёр. Вара юрату çинчен çырни те илемлех. Калама пултараççё: "Достоевский е Çеçпёл юрату çинчен çырсах каймаççё, анчах классиксем вёсем". Çапла, классиксем, анчах вёсен юратавё асанла пулна, вал вёсен чунне-камалне самаях кисретнё, амантна. А.Артемьев калашле: "юратма пёлекенсем телейлё". Вёсем вара телейлех пулайман. А.Блок çаплах палартать: "Чан-чан лирика юрату çинчен тата вилём çинчен пулмалла". Пурнаçпа вилём, этем шапин драматизмёпе трагедилёхё, çынлах (гуманизм), уйрам этемён тёнчери выранё - ака классикалла литература содержанийё. Юрату çинчен çырсан та çак проблемасене пырса тиветёнех. Тепёр чухне критика вулакана чаннипех талантла роман е повесть сёнет, анчах вулаканё темшён "Ан йёр эс, Лена" е "Шура лили" йышши сентименталла хайлавсемшён антахать (леш Мексикапа Бразилире укернё юрату историйёсене чаваш хёрарамё ёне сума парахсах тимлени те çакна ёнентерет). Апла ку писательсемшён самса çине картмалли. Америка президенчё Клинтон та кёнеке вулама юратать иккен: çул çине вал йунё детективпа юрату кёнекине те илет, Г.Маркес аргентинецан калама çук касакла романёсене те манмасть. Çапла, классикапа юнашар çамал беллетристика та пултар: танлаштарсан, виçсен, пёрне ёмёрлёх çулёкё çине хуран, тепри çатма айне те лекме пултарать.

- Мён вал литературари юрату?

- Асантам ёнтё: юратусар классика пулмасть. Чаваш литератури те ку проблемана камаллать терёмёр. Писатель- коммунист та çак ыйтуран тарса пытанайман. Ака, Исаев Мётри "Рабфак хёрё" новеллара улталанна Çемен шапи пирки шухаша каять: хёрарам тенин идеологипе мораль тётём-сёрёмёнчен хаталса юратна çыннине анланмаллаччё пек ёнтё. "Икё каччан пёр шухаш" (П.Осипов) текен сюжет тата мён чухлё соцреализм литературинче! Юрату виçкётеслёхне питё çамал уçса параççё çак меслете пăхăнакан писательсем. Çак чаннипех драматизмла çыхану-хирёçёве: "Мана савать, мана илет ялти комсомолец", - тесе татса параççё. Чан-чан чаваш хёрарамё класс ташманёсене юратма пултараймасть имёш. Мёне тараççё тата колхозникпа колхозница юратавне сăнласа панисем! "Эсё хаван тракторупа питё ашăх, çиелтен çеç сухалатан,

эсё манăн юратава тивёçлё мар", - тет пёр героиня хайён çухалса кайнă савни-механизаторне К.Турханăн "Йамралла ял" романёнче. Фермапа тислёк купи фонёнче икё çамрăк юрату çинчен пашалтатни тата мёне тарать! Хальхи литературара тепёр мода тата: каштах порнографине те астрамăн-астрамăн парса тачё вулакана çыракан. Ăçта кана пулса иртмеççё пулё юрату хутшăнавёсем (вулакан каçартăрах!): аслак хыçёнче те çийёнче, нухрепре, тем хыçёнче... Геройёсем тата еплерех: пёрне кашни кун çёнё хёрарăм кирлё, тепри тепёр майлă чирлё... Темшён кун хыççан Каринкке Кевёрли поэт самахёсене илсе парас килет (вăл та çакнашкал сăва-поэмасем чылай çырнă). "Атя, юрё, хам валли!" - тенё вăл. Кашни ялалан виçи пурах ёнтё. Çав виçене талант шайёпе тытса пымалла. Пирён классиксем арçынна хёрарăм хутшăнăвёсене яланах пёлсе, ăста санланă. К.Ивановăн "Нарснинех" илер: мёнле вайла эротика тапса тарать унта! Анчах никам та уншăн классикран йёрёнсе паранмасть. Юратупа мухтанма та пулать, хурланма та пулать. Унан кёвви те тёрлёрен илтёнет литературара. Калăпар, В.Туркай шавлă, пурне те пёлтермелле, уçăмла юратать хăйён лирикинче. Л.Мартьянова вара варттан, тунсăхла кăмăллать савнă çыннине. Б.Чиндыков геройёсем юратса çитереймен пек, вёсен телейёсем каталнă пек, вёçерёнеççё пек. П.Эйзинăн лирикинче вара "сана никам та юратми пулсан, кил ман пата" текен, пурне те каçарма пултаракан арçын сăнарё тухса тарать. Мёнле çын, çаван пек юрату. Ф.Павловăн "Ялта" драмине эпир кураяс-вулаяс та çукчё пулё, енчен те унан пурнаçёнче асаплă, тертлё юрату пулман пулсан (унăн икё мăшăрё те, шел пулин те, çамал шухашлă хёрарăм пулна). Çаванпах Елюк та тăван упăшки çине венчет çёррине перет те ёнтё драмара. Калăпăр, А.Пушкинан юрату саввисем тата: кашни сăввинчех çёнё туйам, çёнё сăнар. Поэган Дон-Жуанла списокне те çак сăвăсем тăрăх тупаççё тёпчевçёсем. Наталья Гончарова мăшăрёпе паллашна вахăтра, пёлетёр-и, вăл миçемёш хёрарăм пулна поэтшан? 113 мёш хёрарăм! Ăна вал юлташё патне çырнă çырăвёнче калать.

Эпё чаваш çыравçисене Пушкин пек пурăнма чёнместёп, анчах литературара юрату ан сунтёрех, илемлё юрату çеç пирён тёнчене çэлса хаварё, халаха вăй куртё.

"Хыпар": 31.08.1995.

# Философия любви в творчестве Г. Айги

Эротический момент ... находится
на вершине человеческого духа.
... Главный вопрос философии
совпадает с вершиной эротизма.
(Жорж Батай)

Любовь, Природа, Творчество!
Есть в моей жизни триединство...
(Г. Айги, "Любовь, Природа,
Творчество!..." пер. мой, В. А.)

Вторгаться в мир поэта с такой проблемно-тематической постановкой вопроса, на первый взгляд, кажется бестактным: ведь любовные переживания человека, тем более поэта с его бурно-импульсивными перепадами настроений, есть его статус - кво. Интимный мир творца и художника нас интересует не как материал для скандальной газетной хроники а ля Б.Бардо - М.Джексон с их сексуальными приключениями (имел свзи со множеством мужчин и женщин - развелся и т. д.) Выражение любых чувств, тем более любовных, есть ал поэта акт творчества высшей пробы. Это есть его индивидуальное "эстетическое переживание" ( И.Бродский). Без детских романтических воспоминаний, без любовных потрясений, без стрессовых душевных катаклизмов и без трагических жизненных коллизий поэт в человеке никогда не рождается. Такова была поэтическая судьба К.Иванова, М.Сеспеля, П.Хузангая, В.Митты. Стихи для поэта есть форма выражения его "бессознательно-миметического" (И.Бродский) подхода к действительности, в частности, к такой обыденной с первого взгляда как любовь земная.

Конечно, можно перелопатить горы литературы начиная с Фрейдо-Соловьевских кончая Садо-Мазохистских. Но так или иначе никто лучше самого поэта не сможет сказать о Его же любовных чувствах, воплощенных в эстетическую форму. Никакой философский трактат не передает те ощущения, которые мы испытываем, читая влюбленного поэта: "...Благодаря ей (любви - В.А.) расту я и тянусь к чистоте и красоте" (Г.Айги, "Галина"). Если ко всему миру Г.Айги относится как-бы через Сон с его авангардистско-сюрреалистическими словесными облачениями, то Любовь у поэта более земная, более нежная. Самое парадоксальное у Г.Айги - свои более приземленные, или скажем, с до боли обнаженными чувствами стихи он пишет на чувашском языке. Действительно, как говорить о Женщине исходя из

разума, когда она требует открытого сердца? В русских стихах Г.Айги более разумен и краток, сложен и глубок. Он в них более замкнут, там, видимо, нет места шелесту женского платья, там Айги более одинок. Видимо, первые юношеские любовные впечатления, вихрем ворвавшиеся в душевный мир поэта еще в идиллической чувашской деревне (в пору расставания с детством и в пору вступления во взрослый мир), оставили глубокий след в его жизни, а потом уже и в творчестве. Ностальгические настроения, нахлынувшие на поэта, (уже оставившего деревню и оказавшегося в Москве) никак не хотели покинуть его душу. Аура запаха лука, которая исходила от "маленькой влажной руки" чувашской девушки (его Дульсинеи) и через два года не давала покоя, подвиги Казановы так же не прельщают поэта. Щемящие воспоминания о вынужденном расставании, тоска о ручках девушки со специфическим запахом лука, слово - шепот с любовным признанием на языке матери - все это и есть тот поэтический мир, который и в разноязычной столице с ее нагромождением многообразных культур, смог сохраниться в художнике более сорока пяти лет:

Светлая загадка - женственность, девичество -
Пусть неоткрытой в тебе будет сохранено.
("Стихотворение без названия", 1954 -
перевод здесь и дальше мой - В.А.)

Любить по - чувашски для Айги означает говорить о своих чувствах на языке родной земли. Писать об этом на втором родном языке - на русском - для поэта не трудно, но он не пишет. Любовные мотивы встречаются и в русскоязычных стихах, но они только как эпизод, как легкое дуновение ветра, как глоток воды. Айги бережно сохраняет свое чувашскоязычное восприятие и воспроизведение любовных переживаний, плавно доводя его до потока весеннего половодья.

М.Сеспель тоже двуязычный поэт. У него же любовные стихи написаны на русском языке, на чувашском он эту тему не поднимал. Виновата в этом русская женщина, первая и единственная любовь поэта. Тяга Айги выражать интимные чувства на языке матери объясняется просто: образ чувашской девушки и чувашской женщины сильнее его поисков в формотворчестве в русскоязычных стихах, где его интересуют только детали из запечатленного сильного образа прекрасной половины. Цельный образ женщины мы встречаем у поэта только в стихах на чувашском языке:

...Хама хам çухатса, манса
Курасшăн сан куçусене...

...Забыв и потеряв себя
Хочу увидеть твои глаза...
("Начало", 1957)

Божественные мотивы любования женщиной (лоуренсовское "бог проявляет себя в теле женщины") у Айги проявляются в погоне за образом, идеалом по Платону. Инстинкты по Фрейду не чужды поэту, но Айги их прячет в платонических, в романтико-идеалистических образно-стилевых изысканиях ("вечное бытие духа" против натурализации любовных представлений, разрушающих творческое начало):

Унтан эс курак витёр -
Ик аллупа сирсе.
Утан - ман тёлёк витёр
Ман асама кёрсе ("Сказка", 1956).

Идешь ты сквозь траву
Сложив руками тропку.
Идешь сквозь мой сон
Сохраняясь в памяти моей.

Образ женщины как-бы растворяется в тумане Сна, превращаясь в далекую сказку, но сохраняясь в памяти. Главное в женщине для Айги - не ее плоть, а смысл выражения ее глаз, ее походка, ее голос, ее легкое прикосновение. Его женщина всегда в движении, в динамике, не любит поэт застывшую статику, в его стихах нельзя увидеть женщину-статую. Динамика женского образа рождает в поэте игру духа, перемещение материков ("Я слушаю рождение рокота").

Уверенность поэта в своей способности любить ярко проявляется в стихотворении "Галина" (почти как у Эйзина с его неуемным рыцарством):

Никам тути, никам чёлхи те
Ман пек калаймё сан ятна...

Ничья губа, ничей язык не может
Сказать, как я шепчу твое имя.

Легкая тоска, свет женщины, боль любви (естественный эгоизм из-за страха потери любимой) - игра чувств и постепенный отход поэтом во внутрь себя (любовь дает поэту силу жить много лет) - напоминают сюрреалистические выражения чувств Сальвадора Дали к Гала. Эта любовь дает и силу жить, и отталкивает от женщины, позволяя художнику уйти в одиночество (т. е. толчок к новым художественным поискам). Думается, вторая половина 50-х годов для творчества Айги явилась переломной (это видно на примере любовной

лирики той поры). Знакомство с Пастернаком, внешнее неблагоприятное давление на его творческие поиски в конце 50-х и сильнейшие любовные переживания (когда-то живой образ деревенской девчушки превращается уже в "холодный сфинкс" среди кухонно-цивилизованной городской утвари - поэма "Начало"). Такой драматический излом в душе поэта чем-то напоминает судьбу старшего брата по перу - судьбу П. Хузангая, который в конце 20-х- в начале 30-х так же прошел через эти коллизии: увлечение любовными стихами, встреча с Маяковским в Казани, давление совдеповско - чувашской критики - а потом, так же, как и Айги, переход к художественным поискам.

Во второй половине 50-х годов стихи Г.Айги о любви получили разнооценочный резонанс. Так М.Светлов в 1956 г. говорил о своем ученике: "В стихах ваших - одухотворенная открытость. Большая любовь". Тем временем на Родине поэта чувашский критик И.Иванов устраивает большой разнос: "Декадентские любовные стихи Айги, написанные под похмельные, грустные, болевые переживания, не для советских людей" (1958). Такая разноречивая оценка была свойственна критике тех лет: в столице уже появились ростки демократических изменений в среде творческой интеллигенции (предвестие движения знаменитых поэтов-шестидесятников), а в провинции били в другие комидеологические колокола. Такое неприятие любовной лирики (особенно после поэмы "Начало"- 1957 г.) официальной партийно- чувашской критикой привело к тому, что поэту пришлось в буквальном смысле вырваться из-под такого идеологического пресса. Он спас себя и свое творчество, покинув Чебоксары и оказавшись в Москве. Только в последние десятилетия любовная лирика (в частности в статьях А.Хузангая) была оценена по-достоинству.

Благодаря любви Айги пришел в мир истинной поэзии, познал ее эстетические прелести, и сейчас продолжает удивляться своим находкам. Из-за этого чувства с примесью боли и крика, нежности и чистоты (айгиевское "только она рождает во мне чистоту и красоту" - стих. "Галина" ) поэт поднимается на следующую ступень познания мира, одновременно удаляясь от ярких выражений любовных переживаний и углубляясь в себя. Это и есть сублимация поэтического таланта (поиски самого себя в мире Любви намного сложнее поиска идеала женщины).

Не зря автор выбирает белый цвет и белый снег (эти символы - образы очень часты не только в любовных стихах). Разговор поэта с любимой женщиной через цветовую гамму слов (игра цвета) в итоге приводит к обобщенному образу Света ("Кётрет çути" - "Свет чуда"). Этот чудо-Свет озаряет всего поэта и его творчество вплоть до наших дней. Цвет чистоты, цвет космоса, немного отчужденный, чуть-чуть холодный, отрезвляет поэта и является антитезой к таким приземленным образам, как "теплые глаза" женщины, "тепло", "жар", "пламя", "уголек" тела прекрасной половины. Этот антитезовый поэтический мир художника и есть то разумное эстетическое состояние, позволяющее Айги говорить о женщине и как о Боге, и о как принадлежащей только ему земном существе. И вот здесь философия творчества Айги наяву: в любви его истина то отрывается от жизни, то обнаруживается ее предметность. В этом и заключается философия любви чувашского поэта, сумевшего поймать тот дух, находящегося в центре творческого поиска любого большого художника.

1997 г

## В. Эктел тата унăн геройёсен юрату тёнчи

Тахçантанпах кунашкал кёнеке пулманччё-ха. 1996 çулта çу пуçламашёнче кун çути курчё вал. Ячё французларах янăрать:

"Лили". Чи тёлёнмелли - авторё ана хăй тёллён кăларна, унтан-кунтан укçа тупкаласа. Çапла çав халё: чăваш кёнеки питё асапланса тухать. Тиражё - 5000 экземпляр. Василий Эктел юлашки çулсенче прозăпа ёçлерё. "Лили" кёнекере те - прозапа çырна хайлавёсем: пёр повесть, 6 калав. Кашни произведенийё - юрату çинчен. Чылайранпа çапла уççăн чунпа ут туртăмёнче асапланакан, юрату тёнчинче аташакан геройсемпе палашманччё-ха чăваш вулаканё. Ан тив, эпир хăнăхманларах çырса кăтартнă вырăнсем те пур ("крутая эротика" теççё ана теприсем), анчах вăл вăрттăнлăха та пытарма çук: этем пурнаçён уйрăлми пайё-çке-ха вал!

1996 çулхи юпа уйăхён 17-мёшёнче университетра "Лили" кёнеке презентацийё иртрё. Чылаях калаçу пулчё ку кёнеке пирки. Уйрăмах "Лили" повесть пирки. "Лили" чечек илемлё, анчах кёске ёмёрлё, час шанать," - тет автор 15 çулхи Лилин синкерлё шăпи çинчен. Ашшё пусмăрланă хыççăн пăсăлнă хёр трагедийё сăнланна повеçре. Чăваш хёрё ясарлăхпа тулна тёнчере хăйне хăй çухатать,

анчах хайĕн çылăхлă пурнăçĕпе Геннадие, чаваш интеллигентне, хăйĕнчен икĕ хуг асла арçынна, ĕçкĕ-çикĕрен тата ясар хĕрарăмсен тыткăнĕнчен хаталма пулăшать.

"Арçын-хĕрарăм" хутшанавĕсен диалектикине питĕ тĕплĕн уçса парать В.Эктел. Чун тупсамне шыраттарать автор хай геройĕсене. Пĕр вăхăтрах Эктел хай кĕнекинче лирик, психолог, философ, интеллектуал, идеолог, публицист, эстет, педагог, моралист, кĕлĕ вулакан тĕн çынни...

Юрату чунра, хушăран утре мĕнле тăвал çуратнине тарăн уçса пама тăрашать вал. А.Артемьев, Ю.Скворцов, Х.Агивер, Б.Чиндыков майлăрах "чакаланать" хай геройĕсен чунĕнче писатель. Çамраксемшĕн чаннипех кирлĕ кĕнеке: юрату пылакĕпе йуçекĕ суя романтикипе чăнлахĕ, йĕрĕнчĕклĕхĕ, унпа юнашарах арçынпа хĕрарамăн таса хутшăнăвĕ - пурте пур хайлавсенче. Аслă арури вулакана та яшлăхпа хĕрлĕх вахăтĕнчи юрату асапĕпе саванаçне аса илме май парать В.Эктелĕн "Лили" кĕнеки, паянхи чаваш литературинчи хăйне евĕр сенсаци. Апла пулсан, пĕрле вулар-ха çĕнĕ кĕнекене.

1997 ç

# ЧĂВАШ ПОВЕÇĔН ТĔНЧИ

## Епле вилнĕ Тăхтаман..?

### е Чăвашсен детективлă тата приключениллĕ повеçĕ

> Чĕре те хытарах тапать, темле тĕлĕнтермĕш, илĕртекен туйăм чуна çĕклет, шухăш-ĕмĕте хистет. Ку ахаль пулам та, шут те мар. Кунта темле питĕ кирлĕ, пĕлтерĕшлĕ яала пур... (А.М.Горький приключениллĕ литература çинчен калаканинчен).

Ахальтен мар Константин Иванован йĕркисем аса килчĕç: мĕншĕн тесен чаваш литературинче чи малтан тенĕ пек поэт-классик "кам? мĕншĕн? мĕнле мелпе?" ыйтусем лартса çын айăпа кĕнин (преступленийĕн) ыйтавне çĕклет. Мĕнрен детективлăхайлав валли хатĕр сюжет мар? Силпи çыннисемшĕн Тăхтаман вилĕмĕ - пысак варттăнлăх, кăткас преступлени. Анчах автор çак харушă ĕçĕн вăрттăнлахне детективри пек мар, урăхла сăлтавласа уçса парать. Этемлĕх моралĕпе патшалăх йĕрки кирек епле саккунсарлăха та сивлет. Анчах литература вара, хăйĕн санарлăх мелĕсемпе уса куçса, вулакана илĕртес, кăсаклантарас тĕллевлĕ пулса, персонажсене асар-писер пурнаç пăтармахĕсем витĕр каларать, чуна сусентереке

усал ёçсене укерет, романтикалла мыскарасем витёр авантюрист геройёсене санлать...

Самах - приключенипе детектив литератури çинчен. Иккёмёшлерех вырăна лартатпăр кунашкал литературăна, анчах пысăкки те, нёчёкки те çак "ниме тăман" яналасене вуласа антăхать. Апла пулсан кунашкал хайлавсен хайсен тивёçлё вырăнё пур. Детектив самах (латинларан "вăрттăнлаха уçни, шырани" пулать) ака лчан чёлхинче "сыщик" тенине палартать. Детективла литература тесе хăруша, варттанлахсемлё преступление çивёч сюжетла хайлавра уçса панине калаççё. Детектив никёсёнче - сюжет, унан аталанавё ытларах чухне кинофильма кутăнла çаварттарна евёр: малтан кульминацилле самант, преступлени, унтан çак хăруша ёçе каялла таварса варттанлахне уçса пани. Шăпах çакнашкал хайлавсем çырса Э.По, У.Коллинз, А.К.Дойл, Ж.Сименон, А.Кристи, Д.Х.Чейз, А. тата Г.Вайнерсем тёнче литературнипе кёнё те.

Детективла хайлав - приключенилле литературăн пёр тёсё, пёр юппи. Мыскаралла литература Одиссей тем те пёр курса çуренинченех аталаннă. Чаваш литературинче çыш çиенсем, индеепсем, пиратсем çинчен калакан приключени повеçё-романёсем, М.Рид, Р.Стивенсон, Р.Хаггард, Ф.Купер йышши çыравçасем курансах каймаççё: чавашан тинёсё те çук, чаваша варçа-харçи те романтикапа суя героика сёмёпе пырса тивмен, чаваш чунё те авантюристла (ёçе пуçа çухатса, пуçтахланса туни) пулман, "çыртса пахмасар" ёненмен чаваш чунёнче çёр ёçне парахсах "тёнче касма" каяс туртăм та пулман. (Пурнаç хистемесен, паллах). Чаваш литературинчи детективпа приключени литератури уйрăм çулпа мар, пёр тачă çыхăнура аталанаççё.

"Тивёçлё детектив халё те çук-ха пирён", - тенёччё Ип. Иванов критик (Ялав, 1992, 11 №). Тёрёсех мар ку шухăш: чăваш детективе çук мар, вăл хай çулёпе аталаннă, детектив кăна çыракан писатель çукрах ёнтё (юрист пулна çыравçасене шута илмесен). Мэгре е Холмс йышши чаваш сыщикёсем те куранмаççё те-ха, анчах пёр-пёр преступлени урла чаваш прозаикёсем этем шанине, унан çылахпа камал-сипетне санлама тарăшаççё. Пирён детективпа приключени астисем, пёр шухăшла пулса, повесть жанрне камăлласçё: повеçён сюжет çаври йёркелемелли калапашё те, героя уçса памалли мелёсем те тивёçтереççё куранать. 20-мёш ёмёр - детектив ёмёрё, апла унта повесть тупи те пысак. Чăваш детективёпе приключенилле литературин аталану çул-йёрне виçё тапхарпа палăртма пулать:

30-мёш çулсем. Ку тапхарта литературăна приключенипе детектив элеменчёсем кёрсе çеç пыраççё-ха, вёсем айванрах, тата вёсенче класс кёрешёвё тени кăна. Акă, М.Трубинан "Мучар" (1934) повеçёнче те ылтăнпа сутă тавакан кулака йёрленё сыпăк пур, Л.Агаковăн "Пёрре, çуркунне..." (1939) повеçёнче милицисем

Махорка бандине тытнине санлани, М.Данилов-Чалтун хайлавёсенчи çивёч те каткас сюжет йёркеленни чавашсен приключениллё литературипе детективё ура çине тама нуçланнне ёнентерет.

50 - 60-мёш çулсенче каллех çакнашкал литературан чавашри классикён Л.Агакован ячё янраса каять: 1948 çулта унан "Ылтан вачара" приключениллё-детективла повеçё, 1961-мёшёнче "Юманлахра çапла пулна" бестселлер кун çути курать. 1962-63 çулсенче М.Кипек умла-хыçла çивёч сюжетла, приключениллё-детективла икё повесть çырать: "Кам пулна-ши вал?", "Çын айапё".

70 - 90 çулсем - чечеклену тапхарё. Тематика тёлёшёнчен те, санарлахпа сюжет енчен те ку чухнехи чаваш детективёпе приключени литератури нумай енлё, анла, каткас. Г.Краснов, Л.Агаков, С.Аслан, А.Григорьев, Н.Оболенцев (вырасла çырать), В.Петров, Р.Ярандай, А.Угольников, И.Вутлан, Г.Ангер, А.Савельев-Сас, Г.Кабаков - çаксем паянхи детективпа приключени хайлавёсен астисем шутланаççё.

Тематика, сюжетпа санарлах мелёсеие кура, чавашсен кунашкал литературине çанла ушканлама пулать: ача-пача детективёпе приключени литератури (тёп геройёсем - ачасем, вёсем тёрлё патармахсем витёр тухаççё, тёрёслёхшёи кёрешеççё). Л.Агакован "Партизан Мурат"(1943), "Ылтан вачара"(1948), приключениллё повеçёсенче фашистсене хирёç тавçарулла, харсар çамрак партизансем кёрешеççё. Г.Краснован "Катак чёлём"(1972) хайлавёнче ачасем катак чёлём йёрёпе çёр-шыва сутакансене тупса палартаççё, унанах "Хёрлё кётуçсем"(1988) повеçёнче граждан варçи вахатенче ачасем тёрлё приключенисене лекнине санлана. Р.Ярандайан "Кёмёл сулалла сехет"(1981) повеçёнче те шкул ачисем преступниксене тупма пулашаççё. В.Енёшён "Ўхёсем çёрле тёлёрмеççё" (1979) повеçёнче кулаксене йёрлекен (тема кивёрех те ёнтё) ачасен приключенийёсем.

Милишше следстви ёсне санлакан хайлавсенче. М.Кипекён "Çын айапё" повеçёнче Пархатаров следователь; Л.Агакован "Юманлахра çапла пулна ра" милици ёçченёсем, унанах "Вырас каччи" (1980) повеçёнчи М.Гвоздев, 20-мёш çулсенчи милиционер; Р.Ярандайан "Йёрсем çухалмаççё"(1990) хайлаври прокуратурапа следстви астисем тёп персонажсенчен пёрисем пулса тараççё.

Варçа приключенийёпе детективё. М.Кипекён "Кам пулна-ши вал?" хайлавёнче Италири антифашистсемпе пёрле çанаçна чаваш юраçин Арçынован (вартган ячё "Моретти") кăсак шапине йёрленине куратпар. Г.Краснован "СНП" хыпар ямасть..." (1971) повеçёнче фашистсен агенчёсене тара шыв çине каларакан контрразведчиксен ёсё, С.Асланан "Вăрман кайăкёсем" (1974) произведенинче ташман разведкипе агентурине хирёç кёрешекен çынсен шапи укерённё. М.Кипекён варçа приключенийёсене

сăнлакан "Паттарсем хыпарсар çухалмаççĕ" (1969, 1974) романĕ те пур.

Политикалла повеçсемпе шпион детективĕ. Тĕлĕнмелле пулин те, чăвашсен кунашкаллисем те пур. Ака, Акил Григорьевăн "Çĕлен сăнни" (1970) повеçĕ, "Контрразведчик çырса пынисем" ярамласкер, тĕрлĕ çĕр-шыв шпионĕсене тытнине сăнлать. Пирĕн ентешĕн О.Горчакован (вырасла çырать) "Валах - Вудсток капрал" (1971) ятпа чăвашла çапанса тухнă новеçĕ те çак содержаниллĕскерех. И. Вутланан 80-мĕш çулсенче виçĕ политикалла повеçрен таракан трилоги тухрĕ: "Асамат кĕперĕ", "Çул - пĕрре", "Кĕтмен утам". Вĕсенче документлăх вăйла сисĕнет: Египет, Насер президент, разведчиксем, террористсем, тĕрлĕ преступленисем ... А.Савельев-Сасăн "Кăнтăрти чикĕре" (1976) тата "Заставăри тревога" (1980) - чикĕ пăсакан шпионсемпе пограничниксен çивĕч кĕрешĕвне санлакан повеçсем. Çак теманах А.Савельев-Саспа В.Игнатьев çырна "Кавак хуппи уçалсан" (1987) роман та çĕклет.

Детектив элеменчĕсемлĕ моральпе психологиллĕ проза. Унан никĕсĕнче- пĕр-пĕр преступлени, анчах вал çивĕч сюжет тума мар, Фемида тараси пек, персонажсен çылахĕпе камал-сипетне, чунри-ашри хирĕçусене психологиллĕ таран кăтартма кирлĕ. Унан традипийĕсем "Нарспиренех" килеççĕ. Л.Маяксемĕн "Аманна турат" (1980) повеçĕнче преступлени хыççăнхи этем асапланавĕ чуна витермелле укерĕннĕ. В.Петрован "Инкеклĕ сунар" (1987) хайлавĕнче те ансартран пулна преступлени этеме чатамлах, чун тасалахĕ тĕлĕшĕнчен тĕрĕслет. Тепĕр "Венчет çĕрри" повеçĕнче (1993) вĕлернĕ çын аллинчи çĕрĕ чĕррисене епле чун асапĕ кунине йĕрлет прозаик. Р.Ярандайăн "Юратна çын" (1993) повеçĕнче те опытла юрист кулленхи пурнаç чанлăхне санлать: юрату-çемье- курайманлăх - кĕвĕçу тавăт кĕтеслĕхĕнчи хутшăнусем преступлени патне те илсе çитереççĕ.

Çак факта та асанса хăвармалла: Юхма Мишшин маттанрах çырна историллĕ повеçĕсенче те романтикăлла приключени сĕмĕ вăйлă паларать. "Мускав çуле" (1966), "Кавак çĕмрен" (1971) "Вата хурама вăрттăнлахĕ" (1980) хайлавĕсенче чăваш халахĕн историйĕпе çыхăннă пулăмсем çурма приключениллĕ сюжетра уçăлса пыраççĕ, персонажсенчи романтикăллă идеализаци туртăмĕ вĕсепе пархатарлăрах тавать.

Кирлĕ-и чăваш вулаканне детективпа приключени? Кирлех. Вĕсен тĕллевĕсем те пархатарла: вулакана йывăрлăхсене мантарас, романтикăпа илĕртес; ырапа усал кĕрешĕвĕ урлă кăмăл-сипете хускатас; тĕрĕслĕхпе сакунлăх çĕнтерессине ĕнентерес; аслай туйамĕпе (интеллектуалĕ) ĕмĕт туртамне вайлатас.

1993 ç.

# «Асран кайми атти-анни...» е Чăвашсен автобиографилле повеçĕ

**Шухăша мĕн вĕçне çитиччěнех нурнăçра пулна та пулма пултарна фактсемпе çыхăнтармалла.**
**(Илнек Михулайĕ писатель ĕçĕ çинчен каланинчен)**

"Асран кайми..." Чăваш çыннишĕн аставăм, пулни-иртни - философи шайĕнчи анлав. Чăваш çыравçи те, çак философи çинче никĕслесе, хăй нуранса-тăссе иттернине, чун-чĕрери туйамсен ара ш-пирĕпше чăнлăхпа шухăшласа каларни (фантази) тараси çине хурса вулакан натне илсе çитерет. Шăпах "асран кайми" пурнăç чăнлăхĕ, асаилу туйăмĕсен пылакĕпе йуççи - нумай-нумай литература хайлавĕн никĕсĕ. Çав никĕсĕн материалĕ вара - писателĕн хăйĕн пурнăç опычĕ, унпа пулни-иртни. Кашни сăвă, повесть, роман шухăшĕпе сăнарĕсем - çыравçа чунĕ-чĕринчен, ăна хупăрласа тăнă тĕнчерен. С.Асланăн "Ахрат" романри Макар тĕп персонаж, прозаик хăй калана тăрăх, таван ашшĕн прототипĕ.

Писатель хай çинчен те çырма пултарать. Унашкал произведенисене автобиографиллĕ хайлав теççĕ (авалхи грек чĕлхинчен: авто-хам, био - пурнăç, графо - çыратăп). Çулерех каларăмăр ĕнтĕ: автобиографизм паллисем, элеменчĕсем кашни реализмла хайлаврах пур. Автор хăй пурнăçне, хăй сăнарне тĕп вырăна таса автобиографилле хайлавра çеç лартать (лирикăлла савăсемсĕр пуçне). Автобиографиллĕ произведенире хăйĕнпе тахçан пулса иртнĕ ĕçсене умлăн-хыçлăн (хронологине) каласа парать вăл. Çапла вара, кунашкал хайлавсен никĕсĕнче "пулна тата пулма пултарнă" (Илнек) реализм (чăнлăх) тата лиризм (автор туйăмĕсем), тепĕр майлă, пĕр-пĕр самана витĕмĕпе аталаннă этем характерĕн эволюцийĕ (аталану историйĕ).

Автобиографилле хайлавсене çывах жанрсем пур: мемуарсем (французларан: аставам, астуни); дневниксем; аса илусем... Вĕсенче автор сăнарĕ пур, анчах вăл уçамлах мар, пытаранчăкла. Тĕп вырăнта вĕсенче - истори пуламĕсемпе саманчĕсем, хăй пĕлнĕ-курнă паллă çынсем, документ майлă çырса кайни, датасем, хушаматсем, географи ячĕсем... (калапăр, И.Я.Яковлеван "Аса илусем"). Автобиографилле хайлавсене йĕркелекенни вара - илемлĕ шухăшлав, хайне евĕрлĕ повествовани, типизаци, илемлĕ стиллĕ чĕлхе...

Чаваш литературинче чи анлă сарăлнă автобиографилле жанр - повесть. Ытти жанрсем те тел пулаççĕ: С.Элкерĕн "Вутпа тăвăл витĕр", В.Краснов-Аслин "Вутра", П.Осипован "Элкей таврашĕ", М.Ухсайăн "Кăра çилсем" автобиографилле романсем, Я.Ухсайăн "Ача чухнехи çалтăрăм" поэми...

Чавашсен автобиографилле повесть традицийёсем питё пуян. Ватам калапла проза жанрё пёр е икё тёп геройпа çыханна пуламсене вёсен чи пёлтерёшлё пурнаç тапхарёнче санлать. Чаваш çыравçисен повеçёсенче вара, ялан тенё пекех, писателён шуха ачалахё укерёнет (Ача чухне эп çаруран...” - Я.Ухсай). Ячёсем те çакнах калаççё: “Ача чухнехи”, “Ачалах кунёсем”, “Пуçламăшё”... Киленсе, юратса, ностальгилле тунсахпа санлаççё вёсем хайсен ачалахне. “Эпё хама астума пуçлани” (М.Трубина) тенинчен пуçласа, “ман умра ман çул тасалса выртать” (М.Уйап) текен хай тёллён пуранма пуçлана лирикăлла герой аталанавё таранах тасалать повествованири хронос (вахат).

Автобиографилле повесть лирикалла савва аса илтерет: иккёшёнче те çыравçан туйамёсем тёп выранта, тёп геройё те автор хай. Кунашкал повеçсен чёлхипе стилё те, повествовани меле те лиризмла сан-сапатла. Аса илу романтики те выранла унта. Черчен туйампа ачалах асамне сарлать çыравçа: асран кайми ашшё-амашё (“Атте-анне ячёпе çыратап” - Хумма Çеменё), таван кил, çаран-варман, ял çыннисем, шкула чупни, пурнаçне витём куне тёрлё çынсем, асра юлна пурнаç саманчёсем... Чавашсен автобиографилле повеçё виçё тапхарпа аталаннине курма пулать: 19-мёш ёмёрён пёрремёш çурринчен тытанса 20-мёш ёмёр пуçамашёччен, 20-30 çулсем, варçа хыççăнхи тата хальхи. Автобиографилле сансем-шыравсем Н.Бичуринан “Байкал” (1831), С.Михайлован “Хваттер хуçипе калаçни” (1859) очеркёсенче, И.Яковлеван калавёсенче те сисёнеççё (“Эпё сехет çёмёрни”), Игн. Иванов, Н.Охотников, Д.Архипов, И.Юркин, Г.Тимофеев, К.Иванов калавё-очеркёсенче те яр-уççан палăрать ку пулам. С.Чунтеров “Манан пурнаç” (1902) автобиографилле повеçёнче хай шапин чи касак саманчёсем çинче чаранса тарать: “Эпё епле çырава вёренни”, “Эпё авланни”, “Мана тарахтарни”...

20-30-мёш çулсенче Хумма Çеменён “Выçлах çулсем”, “Ача чухнехи”, Краснов-Аслин “Шуррисемпе çапаçни” повеçёсем, С.Элкерён романё кун çути кураççё.

Автобиографилле повесть чечклеиёвё 50-60-мёш çулсене лекет. Умлан-хыçлан çитеççё вёсем вулакансем патне, чылайашё бестстеллер пулса тăраççё: А.Талвиран “Пава çулё çинче”, М.Трубинан “Ача чухнехи”, Уйăп Мипшин “Ачалах кунёсем”, С.Асланан “Пуçламашё”, Куçма Чулкаçан “Кёту ачи”, И.Петрован “Татюк”... Çыравçăсен “çара уранла“ ачалахё те вёсенче пёр вăхаталларах лекнё: 20-мёш ёмёр пуçламашёнчи чăваш ялё вёресе кана тăрать - варçасем, революцисем, шкулсенче Тура саккунёсене вайпа вёренгни, “Нарспи” поэмапа паллашни... Шанах пулас писательсен характерне çирёпленме, аталанма май пана ачалахёпе тур килнё “ахăрсаманалла 20-мёш ёмёр” пуçламашё.

Автобиографилле хайлава биографилле произведенипе патраштармалла мар. Юлашкинче пĕр-пĕр паллă çын пурнăçне истори документчĕсемпе илемлĕ шухăшлава пĕтĕçтерсе çырса пани тĕп выранта: Тихăн Петĕрккин "Кушка ачи" (И.Яковлев пурнăçĕ), К.Петрован "Тайăр", М.Илпекĕн "Тимĕр" (В.Бараев пурнăçĕ).

Автобиографилле хайлаван литературари пĕлтерĕшĕ малашне те пысак пулĕ: ма тесен, унта самана эпосĕпе пĕрлех писатель туйамĕ те, чун чĕлĕхĕсен хапартланавĕ те, илĕртуллĕ лиризмла чĕлхепе вулаканна калаçни те тĕп выранта. Ку литературара - чи кирли.

1994 ç.

# "ШУХĂШЛАСА КĂЛАРТĂМ-ТĔЛĔНТĔМ"
## е Чăвашсен фантастикалла повеçĕ

Искусство хăйĕн произведенийĕсене чăнлах вырăнне хума ыйтмасть.
(Л. Фейербах, 19 ĕмĕрти нимĕç философе)

Этем шухаш-туйамĕнче ĕмĕтленни, пуласлаха çывхартма тарашни авалтанах пурнăç хăвачĕн никĕсĕ шуганна. Тĕнче тытăмĕ, сăмпа космос, этем чунĕн шалти ăнланма çук асар-писер вылявĕсем тата пурнăçăн ытти вартланлахĕсем те канăç паман "хомо сапиенса", Ака, П. Хусанкайан "Тилли юррисем" поэминчи асла, тавçарулла Тилли старик хăйĕн пĕр юрринче çапла ĕнĕрлет:

Калар-ха мана, калар:
Çак пирĕн куç куран тӳпе
Çак ӳпĕнтернĕ кăвак алтăр -
Хĕрри вара вал е тĕпех?
Калар-ха мана, калар.

Тилли, пурнăç нуписем çинчен мансах, тĕнче уçлахĕн вартланлахĕ çинчен "çамка пĕркелентерсе" шухăшлать, тупсамне шырать: ватă çын фантазийĕ космос тытамне çапла тĕпчет.

Ман вăл ф а н т а з и тата ф а н т а с т и к а? Иккĕшĕ те çыннăн творчествалла шухăшлавĕнчен çуралаççĕ, вĕсен никĕсĕнче - ĕмĕтленни, шухăшласа каларни, пуриаçра тупса палăртма май çук тĕнче санарĕ. Фантази (грексен сăмахĕ: ăсри санарлах, вырасла - воображение) - тура парни. Валах искусство, литература никĕсĕнче, вăлах наукăра та хаюлла гипотезасем çуратма хистет, валах кирек епле тĕн пуçламашĕнче те.

Философире те фантази витĕмĕпе материализма хирĕçле идеализм вĕрентĕвĕ аталанна. Халах мифологийĕпе юмахĕ те этем фантазийĕнчен йĕркеленнĕ.

Ф а н т а с т и к а тенине хальхи вахатра литература меле е жанрё анлавсемпе çыхантараççё, валах наукалла фантастика самах майлашавён кёскетнё варианчё. Фантастикалла литературари темапа проблема, сюжетпа персонажсем, ёççен выранёпе вахачё автор фантазийёнчен çуралаççё, анчах чăнлах, цивилизацине наука аталанавё те писатель шухашлавне сан курессё, Наукалла фантастика литературинче илемлё искусствапа, наука пёрлешёнсе каяççё, кунашкал литература наука анлантарса парайман япаласене е пуламсене санарлах мелёпе уçса пама хатланать. Наукалла фантастика хайлавне писатель тёллеблён калаплать: тёлёнтермёш, нурнаçра çук тёнче; касаклантаракан наука прогнозёпе çёр çинче çук персонажсем, мистикалла ырапа усал вайсем, çалтарсен варçисем, харуша сюжетсем (вырасла "ужасы"). Этемлёх фантазийён чи çуллё шайё - наукалла фантастика. Ака унан аталану çул-йёрё: авалхи этемён мифологиллё фантазийё (тёнче, чёр чун пулса кайни çинчен ёненни) → тён фантазийё → халах юмахё → идеализм философийё → литературари тата искусствари фантази → утопи (телейлё çёршыв çинчен ёмётленни) → наукалла фантастика.

Фантази мелё чылай хайлавра тёл пулать: М.Федорован "Арçури" балладинче, К.Иванован "Шуйтган чури" трагедийенче, Свифт, Гоголь, Булгаков произведенийёсенче... Анчах вёсем наукалла фантастика шутне кёмеççё. Ж.Верн, И.Ефремов, А.Казанцев, Стругацкисем, С.Лем. Г.Гаррисон ячёсене асансан, вулакан умне пачах урах литература тухса тарать: тёлёнтермёш техника, космосри вёçевсем, ют планетасем, пуласлах çыннисем, медицинапа генетикан татса паман ыйтавёсем, истори варттанлăхёсем (фантастика пуласлаха кана мар, вулакана темисе ёмёр каялла та илсе кайма пултарать)...

Чаваш литературинче те наукалла фантастика хай выранне палартрё. Унан çал куçёнче таракан писательсем - Г.Краснов, Г.Ефремов, Тихан Петёркки. Фантастика жанрё шапах вёсен пултарулахне пула 60-мёш çулсен варринче таван литературана пуянлатма тытанчё.

Чи малтанхи фантастикалла чаваш повеçё 1950 çулта кун çути курчё. Унан авторё Г.Ефремов пулчё, хайён "Улшанна çанталак" хайлавёнче вулакана чи малтан наука тёнчине илсе кёчё вал. 1966-1972 çулсенче çулерех асанна прозаиксен умла-хыçла 6 фантастикалла повеçё уйрам кёнекепе пичетленчё: кашни сул пёрре!

Мĕншĕн повесть жанрне кăмаллаччĕ-ха чăваш фантасчĕсем? Чи малтан, повесть жанрĕ шăпах ун чухне чечекленет. Иккĕмĕшĕнчен, повесть çивĕч сюжетлă, пуян событнсемлĕ, романтикаллă персонажсемлĕ жанр. Юлашкинчен, шăпах писатель калас тенĕ тĕллевсене повесть вĕçне çитерме май парать. Хальхи вахатра паларна Н.Максимов, В.Захаров, В.Енĕш, М.Сунтал, В.Степанов прозаик-фантастсем ку жанра камаллаччĕ, вырасла çыракан И.Дручин та çак жанра алла илнĕ. Фантастикалла повесть хапи (тытамĕ) пĕр е. икĕ тĕп герой шăпине пурнăçăн чи кăсакла тапхарĕсем урла, мыскаралла сюжет витĕр каларса йĕрлеме май парать, наукалла фантастикашăн чи илĕртуллĕ жанр пулса тăрать.

Тематикапа санарлах тĕлĕшĕнчен чăвашсен фантастикалла повеçĕсене çапла ушкăнлама пулать:

1. Çĕр çинчи наукăпа техника вайлă аталанинне катартакан повесть. Акă, Г.Краснован "Асамла çал куçĕнче" çамрак геройсем 21 ĕмĕре лекеççĕ, ун чухнехи Шупашкарти тĕлĕнтермĕшсемпе паллашаççĕ. В.Захарован "Хура мĕлке" повеçĕнче пуласлахри этемпе вăйлă аталаннă техника хутшанавĕсен ыйтавĕ тĕп вырăнта.

2. Ют планетăсемпе унти пурнăç, космос тематики. Ку тема (те чăвашран тухнă космонавт пулнăран) питĕ касаклантарать чăваш фантасчĕсене. Тихăн Петĕрккин "Çил-тăваленчи" ĕççем марсиансемпе çынсем тĕл пулнинчен аталанаççĕ (тен, паянхи кун ку сюжет айванрах та пулĕ, анчах питĕ çивĕч, илĕртуллĕ: Берроузăн "Марсиансем" трилогине алран ямасăр вулатпăр-çке), Н.Максимовăн "Пĕррехинче, 24-мĕш ĕмĕрте..." повеçĕнче Юман Ивантер чăваш астронавчĕн экипажĕ Уналата планета çине лекет: тĕрлĕ мыскарапа патармахсем кунта, темле "пуăсем", "танвашсем", Эоа чипер хĕр Çĕр çинчен килнĕ каччăна юратни... М.Сунталăн "Алтар-çăлтăр шерпечĕ" хайлавĕнче çĕр çышнисем ют планета çинчи вăрçа чарма хăюлăх çитереççĕ.

3. Приключенилле фантастика. Г.Краснован "Тинĕсре тупнă çĕрĕ" повеçĕнче дельфин тĕнчине тĕпчекен ученăйсен илĕртуллĕ ĕçĕсем , В.Синичкин биофилологан, чăваш ачин, аншĕн вилĕмĕпе çыханнă вăрçа вăхатĕнчи ĕççен вартганлăхĕсене тупнин мыскарисем укерĕннĕ. Г.Красновăнах "Сарамат пĕкки" повеçĕнчи ĕççем Африкăри джунглире пулса иртеççĕ, абверпа СС чĕрĕ юлна агенчĕсем, фашистсен пĕрремĕш ракетин вартăнлахĕсем сăнланнă кунта.

4. Историлле фантастика. Ку мелпе Тихăн Петĕркки хайĕн "Атлан" повесĕнче уса курать Атлантида пивилизацийĕ темисе ĕмĕр каялла шыв айне пулнине сăнатпăр эпир. В.Енĕшĕн "Çака çутă тĕнчере" повеçĕнчи В.Саламов чаваш "энциклопедивизор" скафандрĕ тăханса пиншер çул каяллахи тĕнчене таврăнать, динозаврсене курать, авалхи этемсемпе паллашать. Автор тĕрлĕ чĕлхе тата истори гипотезисене тĕрĕслесе пахать, чаваш кун-çулне йĕрлеме тĕллев лартать: Америкари инксемпе майя йахĕсен чĕлхинче чаваш самахĕсене тупать, чылай шухăшлаттаракан наука информацийĕ парать фантаст вулакана.

5. Социалла-политикалла фантастика. Кунашкал повеçсем çырма Г.Ефремов кăмăллать: "Тимĕр тыткăнран" хайлавĕнче Ивашов чаваш ученăйĕн наука çитĕнĕвĕсемпе пирĕн çĕр-шыв тăшманĕсем уса курасшăн: тĕп персонажа вăрласа каяççĕ, хăйсем майлă ĕçлеттереççĕ, лешĕ тыткăнран çăлăнатех... Унанах "Çĕр тĕнĕлĕ" тата "Акилема уçа çилĕ" повеçĕсенче те çĕр çинчи "хура вайсем" (неофашистсем, мулшăн çунакансем) наука çитĕнĕвĕсене социализмла çĕр-шывсене пĕтерме (ку тема паян кивелчĕ пулĕ ĕнтĕ, анчах наука çитĕнĕвĕсене тĕрĕс уса курас ыйту таталман-ха), вая кĕресшĕн...

Чаваш фантастики тĕнче фантастики хыççан кана "лĕпĕстетсе" пымасть-ши? Паллах, иккĕмĕшлерех хускатна темасемпе проблемасем, ханахна фантастика мелĕсем, наука прогнозĕсем ашахрах пулни сисĕнет чăвашсен наукăллă фантастикинче. Çанах та тĕп геройсем чăвашсем пулни, авторсем хайлавсенче чăваш çыннине хумхантаракан ыйтусем çĕклени, чаваш историйĕпе мифологине алла илме тăрашни, çивĕч сюжетлă калав-повеçсем тума пултарни чăваш писателĕсен те ĕмĕт философийĕ пуррине, чăвашсен фантастикăллă литературин те хăйĕн традицийĕсем çирĕпленесе пынине ĕнентерет. Малтанхи повеçсем ача-пача валлирех пулна пулсан, хальтереххисенче асăрах вулакан валли те интересли чылай, фантастика философийĕ те анлăрах вĕсенче. Мистикаллă е авангардла фантастика калăплама хăтланни те сисĕнет: В.Степанов "Реципиент" повеçĕнче усал вайсен тĕнчине кĕрсе каять, этем психологийĕн вăрттăнлахĕсене космоспа çыхăнтарса сăнать.

Тем пулсан та, фантастикăллă литература чăвашсене те кирлех. Этеме ĕмĕт яланах пурăнма хистет, чăваш паукине те фантастика литератури çĕнĕ хăват парасса шанас килет: паянхи пурнăса та, Р.Брэдбери америка фантасчĕ калашле, наукăлла фантастика тарăнрах ăнланма, курма парĕ, малашлаха та уçăмлăрах тавĕ. 1993 ç.

# ЧĂВАШ ЛИТЕРАТУРИ: ÇУЛСЕМ, КЛАССИКСЕМ, ПОЭТИКА ШЫРАВĔСЕМ

## Çеçпĕл лирикинчи тĕс выранĕ

Чан-чан поэзи, чунран тухакан лирика тавралăхри илеме тĕрлĕ тĕслĕ сăрасемпе сăрлать. Ахальтен мар нимĕç халахĕн чаплă поэчĕ И.Гете çапла калана: "Сăвăсем - тĕрлĕ тĕслĕ чуречесем".

Тĕсе пĕлтерекен чĕлхе найĕ - сăмах. Чĕлхе науки самахсен турĕ тата куçăмлă пĕлтерĕшĕсене палăртать. Тĕсе пĕлтерекен самахсен семантика пĕлтерĕшĕ историлле улшанса пына. Самах творчествин тĕрлĕ тĕсĕсемпе жанрĕсем (фольклор тата литература) аталанна май, тĕсе пĕлтерекен самахсен виççĕмĕш пĕлтерĕшĕ уçамлан куранма тытăнать.

Тĕсе пĕлтерекен сăмахсене уса курасси тĕрлĕ поэтăн тĕрлĕрен. Вал унан пултарулах меслечĕпе стиль туртамĕсенчен, чун-камалĕн уйрамлахĕсенчен чылай килет. Çаванпа та тĕсе пĕлтерекен самахсен пĕлтерĕшлĕ речĕ кашни сăвăçăн урахла . Пĕрисен турĕ пĕлтерĕшлĕ, теприсен куçамла пĕлтерĕшлĕ, виççĕмĕшĕсен символла пĕлтерĕшлĕ тĕс самахĕсем ытларах куранаççĕ. Çав вахатрах темнçе поэт лирикинче харас пĕрешкел тĕсе е тĕс - символа пĕлтерекен сăмахсем чылай тĕл пулаççĕ. Шурă, хура, хĕрлĕ тата вĕсене çывахла синонимлă тĕссем фольклор текстĕсенче те, вырас поэзийĕнче те, эпир пахса тухакан Çеспĕл Мишши лирикинче те паллă вырăн йышанаççĕ. Кунашкал пуламан тупсамĕ таçта авалхи ĕненусен ритуалĕнче, мифологире, чăваш тĕнĕпе христианство тĕнĕн философийĕнче. Çак ĕçре Çеçпĕл Мишши лирикинчи тĕс поэтикин хайевĕрлĕхĕпе традипиллĕх паллисен хашпĕр енĕсене пахса тухма палăртна. Çеçпĕл пултарулăхне чылай ĕçсенче пăхса хаклана пулин те, тĕс поэтикине уйрам тĕпченисем пулман-ха. Ун çинчен пĕр-ик сăмахпа асанса хăварнисем Н. Григорьев, М. Сироткин, Ю. Артемьев, В. Родионов ĕçĕсенче тĕл пулаççĕ.Тата автор А. Веселовский, В.Гайдук, Л Зубкова, К. Кедров ĕçĕсем çине таянса çырна.

Каштах статистика. Çеçпĕлĕн пĕтĕмпе 58 сăвă (çырса пĕтерейменнисемпе А. Червяковăна халалланнсене шута илсен) . Вĕсенчен 29-шĕ чăвашла, 29-шĕ ют чĕлхепе (28 вырасла, 1 украинла). Чаннипех икĕ чĕлхеллĕ поэт. 58 сăвăран 52 сăввинче тĕсе пĕлтерекен самах, самах çавранашĕ, абстрактла-символлă куçам тĕл пулать. Тĕс пĕлтерĕшлĕ самахсемпе Çеçпĕл пек тухаçлă, анла усă

куракан поэт сайра. Чавашла çырнисенче те, выраслисенче те тěс вылявě пысак выран йышанать. Самах ахаль эпитет шайěнчен метафора шайне, унтан абстрактла-символла пěтěмлету таран усет. К.Кедров тěпчевçě калашле, Çеçпěл лирикинчи тěс-символа эпир "метаметафора" теме пултаратпар. В.Кедров пěтěм этемлěхшěн тата тěрлě культурасемшěн характерла çынпа космосан пěр сыханăвне катартакан 4 символ-код тупать: Çěр, Çулам, Шыв, Сывлаш. Çак тавата символ-кода пěтěçтерекенни, ун шучěпе, çута, тěс. "Люди разговаривают светом, хотя я сам не знаю как это происходит..." - тет литературовед. Лăпка тěссем мар Çеçпěлěн, çутçанталак пуламěсем унан курамла, тěрлě тěссем куçаççě, пăтрашанаççě. Тěс унан выранта тамасть, хайнеевěр тěс ритмики сисěнет. "Он разработал особую цветосимволику образов" - тет В. Родионов тěпчевçě. Поэт хайне çеç тивěçлě тěссемпе сăнар тунине шуга илсех, унан пултарулахěнче традицилěх йěрěсене те асархамалла. Авалхи чăвашсен тěн - ěненěвěнчи пек, халăх сăмахлахěнчи майла, Христос тěнěн мифологийěнчи евěр тěс - метафора, тěс-символ санарла самахсем нумай Çеçпěлěн. Çав вахатрах классикалла литература витěмě те çук мар. Çеспел лирикинче Дантен "Божественная комедия" хайлавěнчи, Г. Гейне, В Брюсов, А. Блок, В. Хлебников, А.Белый, С. Есенин, В. Маяковский саввисенче час-час тěл пулакан санарла тěссемех. Тěсе пěлтерекен самахсем Çеçпěлěн чылай тата тěрлěрен. Унан саввисенче "хěрлě" тěс 17 хут тěл пулать, "сара" - 15 хут, "кăвак" - 10, "шура" - 6, "хура" - 6, "симěс" - 5, (выраслисенче: "синева,синий" - 11, "зеленый" - 6 ,"черный,темный" - 7 , хěрлě тěсěн синонимěсем "красный" 3 , "алый" - 2 , "огнистый, огневой" - 5 , "лучистый" - 3 , "румяный", "кумачовый", "розовый" пěрер хут тěл пулаççě). Ку тěссем унан - чи анла сарăлнисем. Вěсен хушшинче турě палтерěшлě эпитетсем те, символла пěлтерěшлисем те пур. Метафоралла тěссем: "ылтан" - 5 хут, "кěмěл" - 3 ,"шевле" - 5 ("золотой" - 7 ,"серебряный" - 2 , "алмазный", "жемчужный", "лазурный" - пěрер хут). Çута каларакан япалана санлакан е çав самах тěпěнчен пулна иккěмěшле пěлтерěшсем: "хěвел" - 27 хут, "кавар" - 26 хут. Тата "çулăм", "вут-кавар", "вучах", "кавак хуппи", "çиçěм" самахсем таташах тěл пулаççě. "Кун" тата "Каç" конрастлă пěлтерěшлě самахсем: "кун" - 16 хут, "каç, çěр, тěтгěм" - 16 хут. "Çут самах тěпěнчен пулна "çут", "çутă", "çутал", "Çут тěнче", "çутçанталăк" йыппи самахсем Çеçпěлěн - чи нумаййи. Тěспе çыха нна, чылай чухне ана санарлăрах тăвакан, лирикари контрастлаха

палăртма уса куракан сăмахсем те сахал мар сăвăсан: "çил-тавал", "тусан", "цĕлĕт, "çеçке", "çĕр", "хĕл", "сивĕ", "юн", "кĕл", "вилĕм", "сĕлен", "вĕлтĕрен", "чечек", "шарça", "канак", "пар" т. ыт. те. Çак сăмахсем тĕсне çыхăннине тӳрех курма çук, анчах поэтан шалти чунне ăнкарсан курма пулать ăна. Çаканта пахса тухна тĕс сăмахĕсем икĕ пая пайланаççĕ. Çапла Çеçпĕл лирикинче икĕ тĕп тĕс-символ уççан курăнать: "çута" тата "тĕттĕм". Пĕтĕмĕшле тĕнче тытăмне, пурнăç аталанавне, çĕнĕ тĕнче çуралнине çак икĕ тĕс кĕрешĕвĕнче курать Çеçпĕл. Çакнашкал курăм Библи сюжетне çывăх: "Çутă пултăр!"- тенĕччĕ унта турă, çутă лайăххипе ăна тĕттĕмрен уйăрса. Шăпах Библири мифранах килекен "синкретикăлла эпитетсем" (А Веселовский терминĕ) çак икĕ тĕс. Поэт çутă тĕсне ытларах кăмăллать, тĕттĕм тĕсе сивлет. Поэт пĕр тĕнче йашса- арканса çĕнĕ тĕнче çуратнă саманара пурăнни сисĕнет çаканта:

Тухăр тĕттĕмрен
Çутă çул çине!
("Тухар тĕттĕмрен...")

Е тата:

Тĕнчене тасатрĕ ирĕк вут-каварĕ,
Çут тĕнче çуталчĕ, иртрĕ авалхи.
Тĕттĕмĕ тĕп пулчĕ, мăшкăл иртсе кайрĕ...
("Чăваш чĕлхи")

Поэтăн символлă тĕс шухашлавĕ чĕри тĕпĕнчен тухакан чи çивĕч туйăмсене палăртать. Çеçпĕлĕн "ирĕ", "çĕнĕ Кунĕ", "хĕвелĕ", "кăварĕ" тискер сăнла "каça", "тĕттĕме"çутатса ярать, çутă тĕнчере, çынсенче мĕн ыррипе усаллине систерет. Çеçпĕлĕн вут-кăварĕ, çулăмĕ-çиçĕмĕ çунтарать, киввине, усаллине пĕтерет. Авалхи чавашсен мифологилле йăлинчи тасату символĕ çак пушарта.

Шăпах хĕрлĕ тĕс-символ курăнма тытăнать Çеçпĕлĕн çаканта. Хĕрлĕ тĕс Çугапа Тĕттĕм хушшинче тăрать, икĕ контрастла символ-тĕсе уйăрса ярать, тĕттĕмре аран куранакан çутăна вăйлатса ярать. Поэт хĕрлĕ тĕсе тӳрĕ пĕлтерĕпше палăртманпа пĕрех. Вал поэтăн çĕннишĕн çунса тăракан "кăвар чĕрери" çивĕч туйăм-кĕрешĕвне, революци вут-пушарне сăнлакан символ пулса тăрать. Сăвăçă хĕрлĕ тĕсе юна пăчăртаса каларнă евĕр чĕре витĕр сăрхăнтарать, хай асапланать, унтах хĕпĕртет те: революци вучĕ иртнĕ саманан сăн-сăпатне çутатса яни, çынсенчĕрисем каварланни савăнтарать ăна. Çеçпĕл ку е çак тĕсе кăмаллани шăпах чăн пурнăçа мĕнле хакланинчен, унăн кăмăл-туйамĕнчен килнĕ (А.Веселовский калашле: "выражение идеи ценности"). Çеçпĕл лирикинче тĕнчери социалла хирĕçӳсем символсем урла куранаççĕ, тĕс контрасчĕпе

пёрлех поэт вайлату (гиперболизаци) мелёпе уса курать: "хёрлё-хёрлё", "кан-кавак", "шевле саррилле ылтан пуҫ" т. ыт. те. Çёнё пурнăçăн çёнё санне вайларах палăртма Çеçпёл "ылтан", "кёмёл", "йалтар" тёссемпе уса курать.

Çута килсен, хёвел кăварё çунтарсан, тёнче чёрёлет, симёсленет, темле лăпланать. Çеçпёлён симёс, кăвак, сарă тёсёсем - чи лапка тёссем, чи саванаçлараххисем, поэт туйамён чи черченкё паллисем. Романтикалла туртăм сисёнет ку тёссенче: "сип-симёс улах", "сар хёр", "кавак кантăк"... Вырас символисчё-имажинисчёсен витёмё куçкёретех çак тёссене уса курнинче:

Паян шыв-шур чечек пахчинче
Юр айёнче хёрлё-сар чечек...
("Ёнер йыва пахчи кăмалне")
Е "Ака çинче" сăвари йёркесем:
Пёр теле çитсессён, кăвак кантăк витёр
Савна сар хёр пăхрё, йал кулчё.

Вырасла çырнă "Выдуманным глазам" савăра (ана вал имажинизм поэзине халалана) "синь, синева" таватă хут тёл пулать.

Поэт сăввисенче тёрлё тёссен хайне евёр эволюцине курма пулать. Ака, сара тёсён тёрлё пёлтерёшёсем пурри те Çеçпел камăл-туйăмёнчен килнё. Çак тёсе хирёçуллё ăнланни чавашсен авалтан килекен шухăшлавёнче те куранать. Ку параллелёх Çеçпёлён те пур. Танлаштарса пăхар-ха: Халах мифологиёнче сара тёсе леш тёнчене, вилёме сăнлама уса курни пур: Сара Кун çёршывё. Кунта вăл вилёме е чире пёлтерни паллă. Çеçпёлён те сара самаха çак пёлерёшпе усă курни пур:

Айван Атăл ахлатса выртать,
Сар хумёсем çӳп-çаплă, çётёк-çатак...
("Выç псалом")

Ф. Павлов сарă сăмахан халăх ăнланăвёнчи тепёр пёлтерёшне асархать: "Чăваш юррисенче сара тени хитрене палăртать", - тенёччё вал. Çеçпёл "сарă" сăмаха "хитре" пёлтерёшпе те усă курни те паллă: "Савна сара хёр пăхрё, йăл кулчё..." ("Ака çинче")

"Выç псалом" сăвăри сара - "синкретикăлла эпитет" шайёнче, вăл чир, вилём, нишлёлёх символё. "Ака çинче" сăвара сара - "эпитет - метафора" (А. Веселовский терминё), илемлё, чипер хёр тенине систерет. Малтанхи сăввисенче Çеçпёл - поэт - символист, иккёмёшёнче - романтик, имажинист.

Çакна та палăртса хăвармалла : Çеçпёл лирикинче "тёттём" , "каç" йышши символлă сăнарлăх "хура" тенипе тур килмест . "Хура" тени авалхи чăвашсен ёненёвёнчех "лайăх", "таса", тенине пёлтернё

христианство тёнён философийё те калаплаççё. Чёрёлу (возрождени) тапхарёнчи литературан гуманизмла витёмё те, романтизм юхамён наллисем те куранмаççё мар. XX-мёш ёмёрён малтанхи çирём çулёнче поэзири тёрлё шыравсем те йёр хаварна Çеçпёл лирикинче. Унан саввисенче символистсем, имажинистсем, футуристсем майла шыравсем туни те уçамлан паларать.

Поэт тёсе ахаль эпитетран "эпитет-метафора" таран, унтан "синкретикалла эпитет" е "метаметафора" шайне çёклени те Çеçпёл Мишши хай пултарулахён меслечепе стильне халах, тён, литература аслалахё çине таянса шыранине пёлтерет, тёнче литератури шайне те вал çак асталаха пула çёкленчё.

Резюме

В работе впервые делается попытка проследить за особенностями поэтики цвета в лирике Михаила Сеспеля. Автор на статистическом материале подсчета слов, обозначающих цвет в стихах поэта, показывает эволюцию использования Сеспелем наиболее распространенных цветов. При этом в статье слова, обозначающие цвет, рассматриваются по трем уровням: слова - эпитеты, слова - метафоры, слова - символы или "метаметафоры" (термин К.Кедрова). Характер того или иного цвета показан в зависимости от идеолого-философских особенностей мировоззрения поэта и его жанрово - стилевых наклонностей. В статье прослеживается связь индивидуально - стилевых тендеций со своеобразием использования слов, обозначающих цвет, исследуется смысл цветов в стихотворениях Сеспеля. Творческие поиски поэта рассматриваются в контексте толкования симолики цвета в древнечувашской мифологии, в христианской философии, в творчестве поэтов различных эпох.

1989 г.

## Категория "Время" в стилевой системе К.Иванова

В исследовании поэтики творчества художника слова важное место занимает проблема художественного времени. Время - это одна из философских категорий, которую никак не может игнорировать поэтическое искусство. "Время в литературе- определенная ценностная категория", которая позволяет художнику "читать время в природе и нравах, идеях" - писал М. Бахтин. Чувство времени писателем и его ценностное выражение - это и есть жанрово-художественное стилевое своеобразие литературного произведения. Время как категория поэтики влияет на жанровую и стилевую природу произведения, оформляет композиционную

ньсем...” савара ирёклёхшён юхна юнран шатна “хёрлё макане” сыхласа хаварайманнишён, хай унран аякра пулнишён куляпать, пашарханать. Ку савари тунсах сёмё шапах поэт пурнаçёнчи трагедиллё самант сывхарса килнине катартать (çёре кёриччен икё уйах çеç юлна). “Паянтан” савара поэтан “юлашки юн тумламёсем” тухаççё, анчах вёсенчен “хёрлё чечек” шатаймё... ”Паянтан” саваран Çеçпёлён хёрлё тёсё пачах çухалать, ун выранне, уйрамах вырасла çырна саввисенче симёс, кавак, кёмёл тёссем куранма тытанаççё. Çеçпёл, хай шанаçне революцишён кёрешсе çухатнаскер, пурнаç таппине санама парахать, социалла кисренусем ана тек илёртмеççё, вал çутçанталак илемне, çалкуçа, тупене, илёртекен аякри епсене санлакан кавак, симёс тёссемлё тёнчене укерсе хай камалне çёклесшён, хайне хупарласа таракан анланма çук тёнчерен уйралса хай чунён тёпне, “Кун тёпне” анса каясшан. Кёрешёвён çута, хёвеллё, каварла, хёрлё тёсё майёпен çухалса пырать поэтан, хушаран çутçанталакан илемлё тунсах тёсёсем куранкалаççё. Çеçпёлён юлашки саввисенче хушаран поэт чунёнче çанталак тёксёмленет, сивё çил вёрет, хёвел ашши, каварё тек сивё тёнчене, поэт чёрине ашатаймасть.

Поэт чунне Çута, Вут, Кавар чёртсе ярать, поэт чёри катарсис (тасату) витёр тухать, унан лирикинче çапла май Çёнё тёнче çуралать. Сак уйрамлаха Çеçпёл поэзинче А.Хусанкай критик та асархана: “Слова, связанные со стихией Огня, наиболее многочисленны в словаре поэта. Единая субстанция Огня и порождает, в конечном итоге, новый мир”.

Анчах чан пурнаç ёмётрен урахларах пулса тухнине Çеçпел курать, тарахать, кулянать, тунсахлать, хайён юн тымарёсене , чёрине “çуркалать, мамаклать, какайлатать...” Поэтан Çута, Кавар, Вут, Хёвел “метаметафорисем” майёпен çухалаççё, çултен, тёнче уçлахёнчен хавхаланса пурнаçа санакан Çеçпёл Çёр çине ансан, унти пурнаç ёмётринчен урахлараххине курать: вал чылай тёттём иккен, унан “хёрлё чечекё” те çилпе вёçённё иккен, шанса кайна. Пёр хупа поэта кавакаракан аяк ен, симёсленекен улах илёртет-ха, анчах пурнаçан çутисем, тёрлё тёслё тёнче сан-сапачё сунсех пырать.

Çеçпёл лирикинчи тёс вал - поэт чёри, вёри туйамё, ыратавё, хавхаланавё, тунсахё. Савасенчи Çутапа Тёттём контрасчё - поэт чунё, тёнче курамё, хайён шапин трагедиллё мёлки. Саввисенчи тёссен улшанса таракан санё - унан творчествинче пулса иртекен эволюци тёкёрё. Çеçпел лирикинчи тёсе санлакан самахсем, символсем, тёс тавакан ытти лирикалла сăнарлах - поэт пултарулахён хайевёрлёхне палартакан енёсем. Шапах тёс унан поэзин ритмикипе стилён сан-сапатне йёркелекен поэтика меле.

Унан поэзийёнчи тёс поэтикин сан-сапатне чавашсен авалхи этнографилле ритуалёсем те, халахан мифологилле шухашлавё те,

христианство тёнёи философийё те калаплаççё. Чёрёлу (возрождени) тапхарёнчи литературан гуманизмла витёмё те, романтизм юхамён паллисем те куранмаççё мар. XX-мёш ёмёрён малтанхи çирём çулёнче поэзири тёрлё шыравсем те йёр хаварна Çеçпёл лирикинче. Унан саввисенче символистсем, имажинистсем, футуристсем майла шыравсем туни те уçамлан паларать.

Поэт тёсе ахаль эпитетран "эпитет-метафора" таран, унтан "синкретикалла эпитет" е "метаметафора" шайне çёклени те Çеçпёл Мишни хай пултарулахён меслечепе стильне халах, тён, литература ăслăлахё çине таянса шыранине пёлтерет, тёнче литератури шайне те вал çак асталаха пула çёкленчё.

Резюме

В работе впервые делается попытка проследить за особенностями поэтики цвета в лирике Михаила Сеспеля. Автор на статистическом материале подсчета слов, обозначающих цвет в стихах поэта, показывает эволюцию использования Сеспелем наиболее распространенных цветов. При этом в статье слова, обозначающие цвет, рассматриваются по трем уровням: слова - эпитеты, слова - метафоры, слова - символы или "метаметафоры" (термин К.Кедрова). Характер того или иного цвета показан в зависимости от идеолого-философских особенностей мировоззрения поэта и его жанрово - стилевых наклонностей. В статье прослеживается связь индивидуально - стилевых тендеций со своеобразием использования слов, обозначающих цвет, исследуется смысл цветов в стихотворениях Сеспеля. Творческие поиски поэта рассматриваются в контексте толкования симолики цвета в древнечувашской мифологии, в христианской философии, в творчестве поэтов различных эпох.

1989 г.

## Категория "Время" в стилевой системе К.Иванова

В исследовании поэтики творчества художника слова важное место занимает проблема художественного времени. Время - это одна из философских категорий, которую никак не может игнорировать поэтическое искусство. "Время в литературе- определенная ценностная категория", которая позволяет художнику "читать время в природе и нравах, идеях" - писал М. Бахтин. Чувство времени писателем и его ценностное выражение - это и есть жанрово-художественное стилевое своеобразие литературного произведения. Время как категория поэтики влияет на жанровую и стилевую природу произведения, оформляет композиционную

ньсем..." савара ирёклёхшён юхна юнран шатна "хёрлё макане" сыхласа хаварайманнишён, хай унран аякра пулнишён кулянать, пашарханать. Ку савари тунсах сёмё шапах поэт пурнаçёнчи трагедиллё самант сывхарса килнине катартать (çёре кёриччен икё уйах çес юлна). "Паянтан" савара поэтан "юлашки юн тумламёсем" тухаççё, анчах вёсенчен "хёрлё чечек" шатаймё... "Паянтан" саваран Çеçпёлён хёрлё тёсё пачах çухалать, ун выранне, уйрамах вырасла çырна саввисенче симёс, кавак, кёмёл тёссем куранма тытанаççё. Çеçпёл, хай шанаçне революцишён кёрешсе çухатнаскер, пурнаç таппине санама парахать, социалла кисренусем ана тек илёртмеççё, вал çутçанталак илемне, çалкуça, тупене, илёртекен аякри енсене санлакан кавак, симёс тёссемлё тёнчене укерсе хай камалне çёклесшён, хайне хупарласа таракан анланма çук тёнчерен уйралса хай чунён тёпне, "Кун тёпне" анса каясшăн. Кёрешёвён çута, хёвеллё, каварла, хёрлё тёсё майёпен çухалса пырать поэтан, хушăран çутçанталăкан илемлё тунсах тёсёсем куранкалаççё. Çеçпёлён юлашки саввисенче хушаран поэт чунёнче çанталак тёксёмленет, сивё çил вёрет, хёвел ашши, каварё тек сивё тёнчене, поэт чёрине ашатаймасть.

Поэт чунне Çута, Вут, Кавар чёртсе ярать, поэт чёри катарсис (тасату) витёр тухать, унан лирикинче çапла май Çёнё тёнче çуралать. Сак уйрăмлăха Çеçпёл поэзинче А.Хусанкай критик та асархана: "Слова, связанные со стихией Огня, наиболее многочисленны в словаре поэта. Единая субстанция Огня и порождает, в конечном итоге, новый мир".

Анчах чан пурнаç ёмётрен урахларах пулса тухнине Çеçпёл курать, тарăхать, кулянать, тунсахлать, хайён юн тымарёсене , чёрине "çуркалать, мамăклать, какайлатать..." Поэтан Çутă, Кавар, Вут, Хёвел "метаметафорисем" майёпен çухалаççё, çултен, тёнче уçлахёнчен хавхаланса пурнаça сăнакан Çеçпёл Çёр çине ансан, унти пурнаç ёмётринчен урахлараххине курать: вал чылай тёттём иккен, унан "хёрлё чечекё" те çилпе вёçённё иккен, шанса кайна. Пёр хуша поэта кăвакаракан аяк ен, симёсленекен улах илёртет-ха, анчах пурнаçан çугисем, тёрлё тёслё тёнче сăн-сăпачё сунсех пырать.

Çеçпёл лирикинчи тёс вал - поэт чёри, вёри туйамё, ыратавё, хавхаланавё, тунсахё. Сăвăсенчи Çутăпа Тёттём контрасчё - поэт чунё, тёнче курăмё, хайён шăпин трагедиллё мёлки. Саввисенчи тёссен улшанса таракан санё - унан творчествинче пулса иртекен эволюци тёкёрё. Çеçпёл лирикинчи тёсе санлакан самахсем, символсем, тёс тавакан ытти лирикăллă сăнарлăх - поэт пултарулахён хайевёрлёхне палăртакан енёсем. Шапах тёс унăн поэзин ритмикипе стилён сăн-сăпатне йёркелекен поэтика мелё.

Унан поэзийёнчи тёс поэтикин сăн-сăпатне чăвашсен аваллăхи этнографилле ритуалёсем те, халăхăн мифологилле шухăшлавё те,

физического времени и юношеским максималистско-романтическим мышлением выразил совершенно уникальный образ времени, по выражению С.Александрова: "время круговое", время "без начала и конца", ведь у природы и вселенной нет начала и конца, оно вечно. В поэме почти неуловимо "двойное время" (сочетание истории вообще и истории героев). К.Иванов только незаметными штрихами касается истории вообще (упоминание денег и вина, которые портят человека), все внимание сосредоточено на истории двух влюбленных героев.

В жанровой природе "Нарспи" проявляются отношения прошлого-настоящего-будущего. Если принять за реальность оценки литературоведами поэмы как предания, то этот жанр черпает сюжеты из прошедшего времени. Влияние настоящего же наблюдается и в повествовательной, и в лирической структуре поэмы. Повествование невозможно без времени, имеющего какую-то историко-социальную направленность, сгущенное, сжатое в пространстве. Участие автора в повествовании (лирические отступления и лирические оценки действительности) также испытывает влияние настоящего. А будущее в поэме исходит из своеобразного мифологического синтеза прошлого и настоящего, и оно обращено к читателю ("третье время" по выражению М.Бахтина).

В "Нарспи" наблюдаются многообразные аспекты времени. Главный аспект времени - это природное время, с пейзажными картинами и природными циклами, тесно связанное с психологией персонажей. Поэма начинается с изображения весенней картины. Время в виде природных циклов присутствует в различной мере во всех 14 главах поэмы, нет главы, где мы не наблюдаем символа времени солнца, которое упоминается 30 раз. Солнце у поэта - мерило времени, центр мира, которое распределяет время для персонажей поэмы и для действий. Антитеза "солнце встает" - "солнце скрывается" ("хĕвел тухать" - "хĕвел анать") - наиболее часто встречающийся эстетический прием, в промежутке которого проистекает бытово-житейское время:

| | |
|---|---|
| Хĕвел анчĕ, каç пулчĕ | Солнце село, ночь настала |
| Чаваш çынни çывăрать. | Всюду спит чувашский люд, |
| Хĕвел тухрĕ, çуталчĕ, | Заалел Восток - он снова |
| Чаваш ĕçе тытăнать. | Принимается за труд. |

Интересную интерпретацию в поэме получает обыденное обозначение текущего дня. "Кун" ("день"), встречающийся 23 раза, не всегда обозначает природное время, иногда в смысловом выражении обозначает и социально-психологическое временное состояние

персонажей и среды. Например, "день" у К.Иванова бывает "тяжелым", "холодным", "жестоким" ,"горячим", "добрым", "злым"... Такие иносказательные прилагательные позволяют поэту выходить из круга природного времени:

| | |
|---|---|
| Ялтартатать ырă кун | Ясный день звенит, сверкает |
| Усал кунан мён ĕç пур? | Что за дело дням дурным. |

На этом примере видно, что перевод на русский язык не всегда адекватно передает смыслово-временное значение подлинного текста. Такие реалистические отклонения из природного круга предваряют или заключают эпическое и лирическое, а также повествовательное мышление поэта.

Интересна акцентация на слове "паян" ("сегодня"), встречающегося 14 раз. Это очень многозначимое слово: "Яшка тулаçке паян" ("Вкусный вышел суп сегодня"). Чувствуется, с кеаким напряжением подчеркивает это слово поэт, предваряя трагическую смерть Тахтамана именно "сегодня". Антитеза "каç", "тĕттĕм", "çĕрле" (значение "ночь") встречается 18 раз и обозначает финал, тревогу, смерть, покой, а также "ир" (утро), встречающийся 10 раз, обозначает начало, жизнь, движение. Эту картину дополняет также обозначение "Светлого дня" ("кантарла").

Нелегко поэту дается в первой главе символический переход от изображения весеннего пробуждения (динамичное природное время), где: *вахат иртни сисĕнмест саванаçла кунсенче*" ("Скажешь: вот где сущий рай! Незаметно дни проходят") Здесь же поэт как-бы примеряет природное время к будущим действиям. Это - эмоциональная подготовка читателя к будущим событиям.

С главы "Сарă хĕр" (Красная девица") начинается житейско-бытовое время или история двух влюбленных героев. Со сцены прощания с Сетнером выявляются контуры событийного времени, которое держит читателя в напряжении, оформляя композицию и двигая сюжет. Но при этом почти в каждой главе природное, лирико-философское время автором не исключается, они постоянно пересекаются. Композиция всей поэмы составлена так, что в структурах глав, как правило, логически расставлены двадцатистрофные микроглавы, где наблюдается свой аспект времени, составляющий стилевую картину структуры и поэмы в целом. "Сцепление" времен происходит иногда плавно, иногда видны "прыжки времени". Так, после главы "Çимĕк иртсен" ("После симека") автор вмешивается в ход времени, останавливает плавное времени:

| | |
|---|---|
| Анчах тепĕр эрнинче, | На четвертую неделю, |
| Перре уяр ыра каç... | В ясный вечер, в тихий час... |
| (Чим-ха, кана халама | (Нет, постой, об этом деле |
| Вахатсарах юрамасть). | Заведем поздней рассказ). |

Некоторая недоговоренность, "игра временем" связана не толь ко с боязнью нарушить структурное целое глав, но и тем, что начинается новый отсчет времени: глава "Преступление Нарспи" - уже другой круг природы (опять автор возвращается к изображению наступающего дня, опять читателя заставляет томительно ожидать). Начинается психологическое время - Время внутренней борьбы главного персонажа. В этой главе героиня пытается оторваться от физического давления времени обстоятельств путем убийства ненавистного человека, но уйти от времени нельзя: "Ахарсаман хускалать!" ("День последний настает!").

Вмешательство поэтом в ход времени проявляется не только в остановке сюжетного движения, но и в растягивании действия времени вне сюжета. Посещение матерью Сетнера знахаря не сразу появляется перед взором читателя. До матери в доме старика оказывается рассказчик. Он там наблюдает за движением лучей солнца по полу:

| | |
|---|---|
| Акă хĕвел çуттийĕ | А лучи, скользя украдкой, |
| Шуса-шуса пычĕ те | Ближе-ближе подошли |
| Сиксе ларчĕ старикĕп | И на голову седую |
| Кавак çуçлĕ пус çине. | Старцу вещему легли. |

Сознательное растягивание времени и приход повествователя раньше персонажа нужны автору, с одной стороны, для описания обстановки помещения, для придания какой-то таинственности портрету старика. Растянута и последняя, фактически короткая ночь перед свадьбой, разлучающей два любящих сердца:

| | |
|---|---|
| Вĕт çăлтăрсем тахçанах | Звезды мелкие на небе |
| Пĕлĕт айне хупланчĕç. | Все попрятались давно. |

За считанные часы перед читателем проходит множество картин природы: "Çил тухать те çил каять" ("Ветер то поднимается, то уходит"). Разрывы между действиями у поэта заполнены лирическим временем. Чередование разных пластов всемирного времени, столкновение времен, сжатие и растяжение времени, ускорение и замедление, иногда иллюзия полного исчезновения времени формирует композицию, создает целостную образную структуру, двигает сюжет.

Своеобразным идейно-художественным структурным водоразделом времени является в поэме праздник "çимĕк" (день поминания умерших). Время в поэме композиционно и

образно-символически подразделяется на время до симека и после симека. Симек - это граница между созидающей силой времени и ее разрушающими свойствами. До *çимёка* время течет медленно, обыденно, спокойно. Да и в персонажах нет еще яркой характеристики соотношения добра и зла. Идиллические картины жизни чуваш до симека все же рождают смутные предчувствия беды. Глава "Вечер под симеком" - узел столкновения разных временных пластов. Здесь завязывается конфликт, переходящий в открытое столкновение, появляются трагические нотки.

Глава "После симека" - это время крушений надежд главного персонажа и становления его через психологическую внутреннюю борьбу на путь преступления:

| | |
|---|---|
| Иртрё çимёк, иртрё туй, | Пир прошел, прошел и симек, |
| Иртрё туйри савăнаç. | Дни веселья улеглись. |
| Каире пёр пек тăсалса | Чередой однообразной |
| Кунран-кунах пуранаç. | Потянулась в селах жизнь. |

Симек и время до праздника ассоциируются весельем и размеренной жизнью чуваш. Дни и недели после симека - это приятные воспоминания. Почему именно симек выбран К.Ивановым для концентрации и разграничения временных структур? Тут, видимо, сказывается влияние мифологического типа художественного мышления поэта. Ведь вся поэма, как и сущность праздника симек, всем своим идейно-эстетическим содержанием подчинена главной мысли о ценности человека и бренности его жизни. Поэма, как и симек, это символ поминания усопших, символ примирения человеческой жизни и его смерти.

Симек, синзе, великий калам упоминаются и употребляются в поэме не как календарные праздники, а скорее как художественные средства, позволяющие поэту умещать в образах персонажей "мифологическое время", помогающее "эстетизировать личность" (выражение М.Бахтина). Не для всех персонажей время имеет одинаковое содержание. Двойственность времени наблюдается в сцене ожидания свадебного ритуала. Родители Нарспи и односельчане, одни нетерпеливо, а другие предвкушая веселье, стараются приблизить событие, время для них должно протекать ускоренно. Совершенно противоположное отношение к этому событию у влюбленных Нарспи и Сетнера, они стремятся растянуть течение времени, автор как бы вторгается во внутреннюю сущность главных персонажей: Нарспи грустит и горько плачет, у Сетнера накипает возмущение и

безысходное бессилие. Безжалостное время на них нагоняет страх перед своим неумолимым течением.

У чуваш издревле развивалось чувство уважения ко времени, к памяти. Только помянув всех усопших, чуваш начинал свой обыденный день, любой праздник. Помянув усопших, родители и сельчане желают на свадьбе счастья новым людям в будущем, избегая при этом упоминания настоящего, а оно мрачно для несчастной Нарспи. Сама свадьба - это отшлифованное временем действо, где будущее прощает прошлые грехи людей и не замечает трагедии настоящего. Уважающий народные традиции К.Иванов яркими красками рисует сцены свадьбы, показывает, как весело собираются гости, используя такие эпизоды, как умывающаяся кошка (по народным приметам означает скорый приход гостей). Но совершенно другое психологическое состояние вызывает свадьба у Нарспи и Сетнера, пытающихся спастись бегством и переживающих неудачное стечение обстоятельств.

Образ времени накладывается и на образы персонажей. Например, их возраст - это тоже время наизнанку. Но среди всех героев в поэме только у одного указан реальный возраст: мальчугану Сентти - 7 лет. А Нарспи, Сетнеру, Тахтаману, Михедеру - сколько им лет? Условные герои в условном времени? Время этих героев - от жизни к смерти, но это очень расплывчато. Не называя конкретный возраст трех героев - Тахтамана, Михедера и его старухи - автор 30 раз употребляет слово "вата" (старый). Этим поэт все время как бы напоминает, что их время проходит, их место в этом мире неправильно, это отжитое время, которое не подлежит возврату.

Антитезы "çамрăк качча" - "вата качча" ("молодой жених" - "старый жених") - это тоже емкие поэтические образы, с более глубоким значением, чем их конкретная сущность.

Портрет - важная характеристика возраста героя. Но и здесь время, волею поэта, не подчиняется логике жизни, а подчиняется логике искусства. Так, в портрете Тахтамана два раза встречается эпитет "шурă сухал" ("седая борода"), а однажды мы читаем, что у него рыжая борода ("сар сухал")! Неужели поэт допустил такую оплошность: как это в течении нескольких недель так неузнаваемо меняется внешность человека? Это - сознательно примененный художественный прием психологического воздействия на читателя, опять-таки это есть указание на нарушение временной целостности жизни и логики развития вселенной.

Все в поэме строится на столкновении условного, мифологического времени и времени реального. Так, 8 строк, где заключен идейно-философский смысл поэмы, ярко выражают пересечение двух времен. Вначале идет время вселенское, и возвышенно-величавое:

| | |
|---|---|
| Çакă çута тёнчере | Нет сильнее человека |
| Вăйли çук та этемрен: | Во вселенной никого: |
| Шывсем синче, çĕр çинче | Он на суше и на водах |
| Хуçа пулса вăл тарать. | Стал хозяином всего. |

Но следующие 4 строки разбивают величавость, незыблемость времени, врывается жестокая реальность:

| | |
|---|---|
| Анчах вайлă этем те | Но владыка мира, миру |
| Хăй тёнчине пахăнать. | Человек покорен сам, |
| Укçапала эрехех | Светлый разум омрачает |
| Çынна ăсран кăларать. | Страсть его к вину, деньгам. |

Движение в поэме от предания к действительности, от мифа к реальной жизни ломает логику временной целостности. И финал произведения своеобразен - время возвращается на круги своя: "и поныне сильбияне поливают" могилу Нарспи. Это напоминание о том, что в основе произведения все-таки миф, предание.

Смерть героев (все главные персонажи в поэме погибают) - это конец сюжета - это, как выражается М. Бахтин, "форма эстетического завершения личности". Да, время событийно-сюжетное, житейско-бытовое, лирико-субъективное кончается, но остается время природное со своей "мифологической замкнутостью" без начала и конца (С.Александров).

Смерть - конец мирской суеты, мирской жизни - присутствует и в других произведениях К.Иванова: в балладе "Железная мялка", в сказке "Вдова", в трагедии "Раб дьявола". Какая уничтожающая сила времени! Смерть у К.Иванова - избавление от подавляющей силы времени, это мост в будущее, ибо память о мертвых - это выше времени. Смерть - это избавление от грехов земных, это результат, по выражению А.Чичерина, "действий истребляющей силы времени". Через смерть К.Иванов пытается объяснить, понять, и, наконец, принять жизнь.

Используя мысль оригинально литературоведа М.Кедрова, можно сказать, что в творчестве К.Иванова: "Прошлое, настоящее, будущее, разрозненные для человека, слиты в единое "во вселенском времени". Как никто другой из поэтов чувашского народа, он глубоко чувствовал пульс вселенского времени. К.Иванов - это гений своего времени, великая загадка на поэтическом небе.

1990 г.

## Ухсай Яккавён тёнчинчи шыв кульчёпе мунча рехечё

...Курка çёлеттём хупахран
Ёçеттём шыв сăлкуçёнчен...
("Юратрăм эп, хирсем, сире...")
Пёлмест-мён мунчари сиппе
Ура çинче сес кёрекен...
Эп сак çипче маччаналла
Тăратрам пёççём-каççăма.
("Силпи енчи çилсем")

## "Йёпеттёр шалкам çумар кёпе витёр..."

"Шыв - тёссёр, шаршсар, витёр куранакан, кислородна водород молекулисенчен таракан шёвек", — типпён çырса катартать энциклопеди. Поэт тата шыв... Анланмалла мар çыхану. Вулакан упкелессёнех туйанать: "Тупна сырмалли. Мёнпе кана анрамаççё пуле патшалах укçине сая яракан ку асчахсем. Кун пек пёр-пёр поэт савви-поэмисенче шапа, шана, паван тата ытти армак- чармаксем те шыраса лёпёртетме пулать". Хам та çаплах шутланаччё, Ухсай Яккавён хайлавёсене тимлёрех, пусаранарах вуличчен. "Силпи енчи çилсем" лирикалла поэмапа паллашрам та, "Якку Гаврилча" (Мускаври студент чухнех) шыв асамёпе хавачён тытканёнче пулнине анланса илтём:

Поэт таланчё ситёнет
Чи шăплăхра анчах хитре,
Ун кăмăлё тёрекленет
Çилре, ШЫВра та кёрлевре.

Поэт вёри хёвел айёнче те, тусанла хулара та çуреме юратман. Пёрехмай варман е йываç сулханне, каçхи юханшыв е кулё хёррине, дачана, мунчана, шалкам çумăр айне тарма ăнталнă. Ăçта нурёрех - поэта çаванта чун туртна. Ёненмен çынна Ухсая тимлёрех вулама çеç сёнес килет.

Апла шыв... Мёншён? Ма-ха Ухсай Силпи шывне культ шайне çёклет? Мёншён Ухсай хёл çинчен сахал çырнă (тен, шывё куçманран, шанса ларнаран, вилнёрен ку вахатра)? Авалтанах этемлёхе çёр-планета çинче тытса чарма çук тавата вай ("стихия" теççё вырассем) витерсе тана: çёр, сывлаш, çулам, шыв. Астрологсем

çак вăйсен витĕмне çын шăпипе апла та, капла та çыхăнтарса пăхрĕç. Тен, чанлăхĕ те пур кунта? Çеçпĕл, ав, çулампа сывлаш стихнйисене кăмăлланă. Константин Иванов - çĕрпе шыва:" "Шывсем çинче, çĕр çинче хуçа пулса вал тăрать". Пĕр ялта, пĕр Силпи шывне ĕçсе, пĕр тапра çинчи çакара çисе уснĕ Ухсай та Иванов пекех çĕрпе шыв вăйнех пăханать, пуççапать. Хайне "тапра поэчĕ" тесе тăташах палартса каланипех, сăвăçă шывсăр та пуранаймасть. Ухсай тĕнчине хальхи схемапа çапла сăнлама пулать. Поэтан хайĕн Эдем пахчи (Библири çылахсар, таса тĕнче, унан тапри этеме ним ĕçлемесĕрех чи тутлахла çимĕçсем парать, çылаха анчах ан кĕр). Эдем пахчине тулăх курекенĕ тата çылахсенчен сыхлаканĕ, тасатаканĕ - ШЫВ. Ухсай хайĕн пахчинчен каясшан мар, çак пахчана таптакан, пĕтерекен çылăхлă тĕнче пур, ăна типĕтекен шăрăх та тусанлă çанталăк, хула шавĕ, критиксен вĕчĕрхенĕвĕ пур: "Ман кантăк умĕнче утса çурет пек критик. Пурнисемпе юнать пек йăнăш çырасран". Ўпре çыртнă пек анчах унпăн ку: "Хам пĕлнĕ пек шăрататăп кĕввĕме". Вара кăмăлне çĕклеме е усала манма Ухсай шыва чăмать, çумăрпа пылчăкланнă тапра çинче çарран тупать, мунчари шыв пăсĕпе исленет.

"Шап-шур пĕлĕт тăрăх çуреме, куратăн-и, ман урасем та пралла..." - текелет поэт, хăй çĕр ачи пулнине çирĕплетсе. Шăв-шавлă романтика илĕртмест ана: "Эпĕ хам хресчен ачи, шухăшлатап хресченле". Çĕр хресченĕ хăй тăпри çинче хăех чакаланать, поэт та çавах. Суха тавакан хресчен ывăннине сирсе яма сиплĕ сивĕ шыв ĕçет, поэт та: "шывна сыптар, Силпи çалкуçĕ!"- тесе ыйтать. Шуратăл шывне "мана сиктер, тытса силле-ха тек" тесе чĕнет: "Вара хăпарĕ çамрăк ут вăй-халĕ, çакланмĕ чир те, хуйхă та инкек". Ахальтен мар Ухсай Твардовскине тусла пулна, "Яша тусĕ" хăйĕн вырăс ĕçтешĕнчен юласшăн пулман. Лешĕн те шыв çинчен "Василий Теркин" поэмăра çапларах калани пур:

Тур папа шывран лайăхăн çук,
Сивĕ çăлкуçран аваннн çук.
Шывĕ кăна шыв пекех пултар.
(куçарăвĕ хамăн - В.А.).

Ухсай çумăра пит юратать. "Ача чухнехи çăлтăрăм" трилогире те хăй шăпăрлан чухне çумăрпа мĕнле паллашни, унпа киленме пуçлани çинчен чуна витермелле каласа парать саваçă. "Йĕпеттĕр

шалкам çумăр кĕпе витĕр...” - текен йĕркешĕнех поэта эпир палăк лартма тивĕç. “Тапра поэчĕ“ çеç çапла, шаман е чук тăвакан хресчен майларах, чĕнсе, йыхăрса калама пултарать.

“Çу, çумăр, çу”, - тет Микул Пулар та, паянхи сăвăçă, поэзири ашшĕ хыççан. Çумар Ухсая “çичĕ вай” парать, “тиха пек кĕçентерет”, уя чĕнет - (“Çумар” 1926). Фронтра, окопра, каскине хывсах хайĕн пит-куçне çумар çине тытать поэт. “Çу, çумар чашкăр! Варçа хирĕ Тасалтар, уçăлтăр тĕнче!” (Çумăр”,1943).

Поэтăн романтикăлла кăмăл-туйамне те шыв, юханшыв, кулĕ çеç вайларах çуратать. Пула яшки пĕçерни, шывра пĕчĕк ача пек “чухенни”, “шампăлтатни” мĕн чухлĕ унан сăвви-поэмисенче! Шыв - Ухсай саввисен илемлĕ чĕлхине те чĕнтĕрлекен сăнарлăх мелĕ. Акă унан эпитет-антитезисем, деталь-антитезисем мĕнлерех вайа выляççĕ хайлавĕсенче: “вĕри кун”- “нурĕ курăк”, “асфальтлă Мускав” - ”сивĕ нухреп”, “тусанлă хула” - ”хирти уçа çил”, “пачă нулĕм” - “уçă сывлăм”.

Е тата “çалкуç”, “авар”, “вак”, “тĕтре”, “кулĕ“ “шурлах”, “сулă ”, “атма”, “сĕреке”, “пула хуранĕ“, “чей”, “сăра”... Кашни сăнарлах никĕсĕнче - шыв, шыв татах шыв.

“Шыв хĕррине Фет лирик пек
Пырса ларасчĕ вăлтапа”, -

тесе чухенет поэт хай ĕмĕчĕсен тинĕсĕнче.

Юмăç çăвара шыв сыпса чирлекене пĕрĕхтернĕ пек, шыва кĕртсе çыпна ят хуна чухне çылăха каçарттарна пек, “ура тапса, пуçа ухса” таракан Ухсай хăйне хупăрласа тăракан çылахла тĕнчене таса шывпа, сивĕ çумăрпа тасатма хатĕр:

“Вара таса тĕнче мунчи пуçланчĕ,
Çуса лушкетрĕ пирĕн ӳт-пире”.

## Мунча кĕрĕттĕм Ухсайпа пĕрле!

Эх чăваш мунчийĕ те-çке Ухсай сăвви-поэмисенче! Нихăçан мунча урати урлă каçса курман çын та чăтса тăраймĕ поэта вуланă хыççан: нимĕнле туркка е финн мунчи кирлĕ мар! “Тутли шала, йуççи тула”, - тесе пырса кĕрĕттĕм эпĕ мунча сакки çинче “пĕççи-каççине çулелле тăратса” хурăн милĕкпе (армути милĕкĕпе те çапăнать чаваш поэчĕ!) çапăнса рехетленекен “Якку пичче” патне! Унан Кĕлпукĕпе те кĕме кичем пулас çук, анчах, тем, эпĕ те Ургеми

мучи пек (поэмăри тепĕр герой) вĕрине чатаймасăр урайне тасăлса выртăп пулĕ: пулчĕ вара Кĕлпукшăн кулмалли!

"Про хороших музыкантов говорят, что они научились играть в бане," - тет Н.И.Ашмарин хайĕн словарĕнче (YIII том, 267 с.). Ку сăмаха ăсчах чăваш хушнинчех илтнĕ пулĕ-ха. Тен, поэт талантне варатаканĕ, ун чунне тасатаканĕ, хавхалантараканĕ Силпин сивĕ шывĕ çеç мар, мунча та, мунча лапки те, милĕкĕ те, "çара шап-шур пасĕ" те, кирĕк кăларни те, "хур ури пек" ут тирĕ хĕрелни те? Эх ирĕке ярать те хай, камалне, хай чĕлхине поэт мунчара! Мунча кĕрсе тухни уншăн "инçе коммунизмра хана пулна пекех" (ханара вара чĕлхе сутĕлет). "Тапраллă урисене" поэт, ыра чаваш хресченĕ пек, мунчара тасатать. Мунча Ухсайшăн - çĕр çинчи тура пана, чаваш шухашласа тупна чи сăваплă вырăн, хăйĕн Эдем пахчине кĕрицченхи тасату палли. Мускав студенчĕ "тăван йăла вĕрентнипе" "хĕл кирĕкне хырма" Сандуновски мунчине уттарать, лапки çине выртса "шеп сывлăх" кĕртекен милĕкпе рехетленет ("Силпи енчи çилсем"). Тăван киле аса илнĕ пекех уншăн ку.

Мунча такмакĕсĕр чаваш мунчин техĕмĕ çук:

Çăтти-çатти тутарам,
Милĕкпеле çаптарам,
Ашши парас вăйларах,
Кăларасчĕ чир-чĕре.
Мухмар-сухмăр - тулалла,
Пăсĕ кĕтĕр шалалла:

Ухсай Яккăвĕн Кĕлпукĕ те такмакласа çапанса ватă утне канăç курет:

Йуççе тула хăвалар,
Тутли пултăр хамарăн.
Тĕрĕс те мар, суя мар,
Лапка ылтăн хамаран.
Милĕксем епле хитре
Çурăм тарăх шурĕç-ха,
Варăмлатрĕç ĕмĕре,
Çирĕплетрĕç сывлăха.

Тупата, "Кĕлнук мучи" поэмăри "Мунча" сыпăкри пек пурнăç вайĕпе, автор савăнăçĕпе, вылянса-сиксе таракан сăнарла чĕлхепе киленсе курманччĕ. Чăваш ноэзийĕнче те Ухсай пек чаваш мунчине гимнласа е одаласа никам та парайман, параймĕ те.

Хай платник е кăмакаça пек, Ухсай мунча купаланине те санлать поэмăра. Мунча шепĕ, поэт шучĕпе, пураран килет: "Чи тутли - çăка мунча". Хытарах чавашĕсем, час ан çĕртĕр тесе, мунчине юманран тăваççĕ: вал вара поэтшăн йуçĕ. Вулакан сахал пĕлекен, тĕпчевçĕсем асархасах кайман пысăк эпикăлла, чип-чипер, тăпал-тăпăл "Çĕр" ятлă поэминче Исмукпа Ярхун ывалĕ мунча кĕнине те юратса сăнлать автор. "Хам çылăха çуса яни те кирлĕ", - текелеççĕ поэма геройĕсем.

Ухсайан милёкё тепре чухне талисман евёрех, вилёме хирёç пурнаça юратса таратна символ:

Вилес килмест. Епле-ха ирёк
Йёри-тавра тётреллё ир!
Кай вармана, çых хуран милёк,
Çемçе турат чёр, кас та ирт..."
("Ярмуш бригадир вилсен")

Чавашан юрри-савви те мунчаран тухнă пулё тет Ухсай, "Çёр" поэмăри герой куçёпе милёк çине, хăрăмланнă мачча çине, мунча чуречинчи хёвел тапшине пахса:

"Çавна кура такмак та,
калаçу та
Çуралнă пуль чаваш мунчисенче".

Амсанатăп эпё Ухсай поэтамара. Нихаш поэтринчен сисёмлёрех, чаваш чунларах пулнă вăл, хăйён пёчченлёхёнче пуранма, хайён Эдем пахчипе киленме пёлнё, тапраланнă урисенчен ватанман, чун гармонине çут çанталакра шырана. Ахальтен мар вăл: "Юратрам эп, хёрсем, сире", - вырăнне, "хирсем, сире" тесе ярать, тепёр поэта ватăр çул ытла хёрсем çинчен анчах çырнишён, арăмне пёр сăвă халалламаншан тиркет. Мён тăвăн, поэт характерё! Ухсай тёнчин никёсёнче - çёр тата ăна тулăхлă тавакан пысăк саспаллиллё ШЫВ. Кăмăла сёклекенни, савă çырма вăй кёртекенни - шывсар хутма май çук ЧĂВАШ МУНЧИ. Шыв тата мунча - Ухсай поэзийён тёнчине тёреклекен никёссенчен пёрисем, вёсемсёр Ухсай поэзийё талăхрах куранёччё, тути пётёччё, чёлхи мăкарах пек туйăнёччё. Автор ана хăех, вăрçă вăхăтёнче кёвёленё "Кёлпуксем" ятлă сăввинчех (ака аçтан килет иккен "Кёлпук мучи" поэмăна çырнин историйё) калать:

Пур çёрте - аçта ситмерём,
Япăх мар мунча пирки.
Хуран милёк çеç лекмерё
Хамар Силпири пекки.

Пилёк тарах, çурăм тарах
Çат та çат çапаканни,
Тупанмарё шыв тап-тăрран
Силпире юхаканни.

Ху пёлсен те çамрак тусам,
Эпё калăп: - Ай тирке.
Çут çанталак пысăк уса
Хуна ешёл милёке.

Мунчана тирке-тирке тар,
Чан искусство ай шыра!

1996 ç.

# И. С. Максимов-Кошкинскин прозари асталахё

Тулта кёр пулсан та, ашра - çурхи кунсем...
("Ёмёт çитрё" очерк-асаилурен)

Драматург текен çын вал хайён пётём пултарулахне театрна çыхантарса ёмёр таршшёпех ёçлет. А.Н.Островский е Н.Терентьев тесессён, эпир вёсене урăх енлё пултарулахра курмастпар та: вёсен пётём çырас талантёнче драматург туртамё монополист пулса тарать. А.Чехов е А.М.Горький, П.Н.Осипов е Б.Чиндыков ячёсене асăнсан вара, пирён ума чăн-чăн драматургсем кана мар, ăста прозаиксем те тухса тараççё.

Мён калать-ха пире И.С.Максимов-Кошкинский ячё? Вăл - артист, чаваш театрёпе кино ёçне пуçараканё, культура ёçченё, драматург. Вăл прозаик е аста очеркист тенине пачах илтме çук, унăн прозине тишкеру те ку таранччен никам та туман. Кошкинский хай калана тарах, унăн пётёмпе 20 ытла калавсемпе асаилусем. Вёсенчен пысак пайё пичетленнё: "Калавсемпе очерксем "(1958), "Хёвел тухсан "(аса илнисем, 1961), "Пьесăсем, калавсем, асаилусем" (1963). Критиксемпе тёпчевçёсем те (Сироткин М., Юрьев М.) вăл прозапа та ёçленё тесе пёрер предложенипе çеç каласа хаварна. Краснов И. тёпчевçё вара унăн калавёсемпе очеркёсен темине çеç палартать: "Калавсемпе очерксен тёп теми - совет çыннисен пурнăçёпе ёçёсем, вёсен шухăш-камалёпе ёмёчёсем... Кашни калавёнче тенё пекех автор хайён геройёсен хальхи пурнăçне революцичченхи кун-сулёпе ганлаштарса катартать". Мёнех калăн, питё "анланмалла" пётёмлетнё: темипе идейи пур, факчё кирлех те мар. Хальхи вахатра, унăн академилле çырнисен пуххине каларма хатёрленнё чухне тата тёрлё енлё пултарулахне анлăрах, таранрах тишкерме тытанна саманара, унăн прози тёпчевçёсемпе критиксен куçё умёнчен каллех çухалма пултарнине каçарма çук. Апла пулсан, Кошкинский прози те - чăн-чăн литература факчё, пулăмё.

Драма жанрё писатель чунне-ашне эпос тата лирика майлах катартаймасть. Çыравçана анланас тесен, унăн тёнчекурамне сăнас пулсан, унăн эстетика принципёсене виçсе пахас тесен, е лирикалла сăва, е очерк, е асаилу (тен, калав та) вуламалла. Шăпах Максимов-Кошкинский прозине тишкерпи çаксенс уйарма май парать те.

Утмăла çывхаракан драматургра вахăт туйамё çивёчленет пулас. Хăй пурнăçён историйё, театран малтанхи утăмёсем, хăйне тёлёнтернё çынсем, çёнё самана тымар яни хистенё Кошкинскине

прозăпа çырма. Психологсем çын аллăран иртсен мемуарлă тапхăра кĕрет теççĕ. Театр улăпĕ те асаилусен сентименталларах юхăмне лекет, геройсен шăпинче хайĕн кăмăл-туйамĕ епле укерĕннине сăнама тытăнать.

Максимов-Кошкинский - прозаик асталахĕн тĕп уйрăмлахĕ - вал калавăн е очеркан шанăрне, сюжетпа композици пĕрлĕхне, конфликт аталанăвне классикалла прозăри пек тытса пыманни. Анчах ку писатель çитменлĕхĕ тесе калама çук. Прозара кунашкал лирикăллă-субьективла хайлавсем. К.Паустовскин, Ф.Абрамован, В.Астафьевăн пур: вĕсенче малти выранта персонаж сăнарĕ те мар, е пурнаç эпизочĕн сюжетлă çивĕчлĕхĕпе ăнсăртлахĕ те мар, чун асапĕпе саванăçĕ, чĕре витĕр кăларна çынсемпе пулăмсем, урахла каласан, пурнаç эпизочĕпе персонаж урла калана идеологипе мораль позицийĕ. Тепĕр майлă, литературăри "поток сознания" текен юхăмăн тулаш енĕ налăрни.

Кашни калавра е очеркра теиĕ пекех, автор сăнарĕ уçăмла: хăйĕн лапамра вырнаçна Канна Кушки ялне сăрт çине хапарса тĕпĕ-йĕрĕпе сăнланă евĕрех ку. Калавсенчи ĕç-пулăм е пĕрремĕш сăпатран, е тĕп герой тавра авторăн лирикăллă туйамĕ хутшаннă майăн аталанать. Жанр тĕлĕшĕнчен унăн калавĕсем очерк майлăрах асталанаççĕ. Вĕсенче драматург алли те сисĕнет. Кошкинский калавĕсем - анлалатна ремарка майлăрах та (уйрам çыннан портречĕпе вал пуранакан выран сан-сапачĕ): "Макар мучи," "Чипер Праски", "Махха", "Кĕçĕтмен пуçа тимĕр тура" калавсем; е диалогла сценка-эпизод майлăрах та ("Варвара Васильевна", "Атăлкасси ачисем", "Ытарайми кии", "Самана"); е монологлă сценка майлă та ("Кĕтерне аки").

Очеркла субьективизм тени калавсене яр-уççăн тухса таракан идейалла тăвать, Кошкинскин драматургире паларна политикăллă схематизмĕ прозăра та палăрать. Тĕп шухăшĕ кашни калавăн - çĕнĕ самана витĕмĕпе улшăнакан этем, шăпа историйĕ, иртнипе хальхи. Тепре чух автор ытлашши турремĕнрех, канттамрах калани те сисĕнет: "Чĕререн тав партие пире колхоз çулĕпе ертсе пынăшăн" ("Макар мучи"); "Вĕсем Тăван çĕршыв хуçисем" ("Чипер Праски" калаври Праски, прачка пулнаскер, патшалах рулĕ умне тухнăскер); "Ака мĕн вал Совет влаçĕ"... текен лозунг майлă янракан пĕтĕмлетусем; кĕнеке лавккинче Мичуринпа Лысенко томĕсене шырахан пахчаçă сăнарĕ... Е тата 50-мĕш çулсенчи НТР "çитĕнĕвĕсене" тĕпĕ-йĕрĕпе каласа тухни мĕне тăрать: "ЭШ-14-65

экскаватор, генератор, скрепер, бульдозер, хай тёллён çурекен комбайн..."

Халё кунашкал схематизм тата пёр енлё субьктивизм сине тапанасси питё модара. Анчах çакна та манмалла мар: писатель тёнчекурăмёпе унан пултарулăхё хушшинче питё тачă çыхану. Хай мёне, кама шаннине-ёненнине палăртмасăрах хавармастех вал. Ака, Максимов-Кошкинский те, сталинизм репрессине лекнёскер, Улатăрти НКВД тёрминчен Изида хёрё патне, хайне "к/революционер" тесе тёрёс мар айапланишён упкелесе, çапла çырать:" Сан аçу, Изида, таса чунла, партире таман большевик пулна, вилём шатăкёчченех çапла пулап та." Апла унан прозари идеологилле пёрьенлёх çинче чăкрашланса чарăнса тани килёшусёр пек туйанать.

Лубокла укерчёкри е "Свинарка и пастух" йышши кинофильмсенчи персонажсене аса илтерекен, социализм идеалён картне ларакан геройсемпе пёрлех характер уçăмлă палăракан, чылай кăсăкла шапасем те куранкалаççё унан. Ака, Ехримпа Кётерне шаписем ("Кётерне аки"). Ватлахра çеç пёр-пёрне анланма тытăнаççё вёсем. Хёр варлани, упашки арамне татăшах хёнени, ёçкё-çикёпе айкашни... Тёпё-йёрёпе каласа парать монолог формипе Кётерне хай нушисем çинчен. "Хёрарам эмансипациленни" текен проблемана Кошкинский революци пана ирёклёхпе çыхантарать. Комбед ёçёпе аппаланакан, хресченсен тыррисене конфискацилесе класс туйамне çивёчлетнё Кётерне упашкине: "Яшка пёçер, ёне су" - , тесе кана хаварать, лешё "арам-комиссар" çине тарахса ёççе лартать, аллисене çёклет. Кётерне суда парассипе харатать пулин те, ашра Ехримне питё юратать:"Ёçчен çын ман Ехрим, пурне те пултарать, çавна пулах юратас килет ман старике".

Е "Махха" калаври пёр ятла персонаж: чылаях касакласкер вăл. Ытти çынсенчен уйаракан паллăсем те пур: "вăйлă саслă", "ёçекенскер", "кахал"... Манастирте манах пулнăскер, чутах ял çыннисене, чăвашсене, вырассемпе варçтарса ямасть. "Кёçётмен пуçа тимёр тура" калаври тён çыннисем те хайсен ултавне пула халăх хисепленине çухатаççё, Патша Кёркурин санарёнче каллех автор килёштермен çын çитменлёхёсемех: чăшăн, укçашăн çунни, эрех ёçни...

Калавсенчи чылай ёççем çул çинче - автобус е поезд çинче - пулса ăçтеççё. Хăйнеевёр çулçуревре итлесе çырса илнё очерк-диалог майлăрах вёсем, диалогпа монолог формипе усă курса, автор геройсен

характерне, шапа историне уçса парать ("Ытарайми кип", "Варвара Васильевна", "Самана").

Автор туна портретсем васкавларах, типĕрех куранаççĕ. Вал сан-питĕи е тумтирĕн пĕр детальне çеç асанать, тепре чухне геройан çулне те палартать. Сухал - унан портречĕсенчи час-час тĕл пулакан деталь. Вал "кавак", "сара", "хура": "...Ватала пуçлана икĕ çын кĕрсе ларчĕç. Пĕри-хура, тапал-тапал сухалла, лутрарах чаваш, теприн сухалĕ капит шурала пуçлана, хăй çуллĕ, вăй питти çыш... хура сухаллин кĕрĕкĕ сара, теприн - хура" ("Ытарайми кин"). "Çулĕсем те сахалах мар хайĕн, утмалтан та иртнĕ. Çаванпа та, капит шанна пек пулсанах, сунаспа аптарать" ("Макар мучи"). Чи касакки - автор портречĕсенче ытти писательсем асархаман хайнеевĕр детальсем тĕл пулаççĕ, тата вĕсем, ансат пулин те, асра юлаççĕ.

Геройсен калаçавĕнчи уйрамлахсене те автор пит палартсах каймасть. Пĕр Кузьма Кузьмич колхоз председателĕн чĕлхинче çеç таташ самах тĕл пулать: лешĕ кашни предложенинех "çапла" самахран пуçлать ("Самана").

Калавсен тепĕр уйрамлахне те асархамалла: вĕсенче мыскаралах, тĕлĕнтермĕшлĕх, шут вайла сисĕнет. Анла пулсан, автор пурнаç юхамĕнчен чи кирлине суйласа илме пĕлет. Чылай геройĕ унан Шукшинан "чудикĕсене" аса илтерет. Ака, Макар, "Мичурин" хушма ятпа çурекенскер, нумай вĕренмен пулин те, культура çинчен кашни ял пухавĕнчех калаçу пуçарать. Хайĕн кив çуртĕнче, ял-йыша тĕлĕнтерсе, этнографи музейĕ йĕркелет (Макар мучи"). "Кĕтерне аки" калаври тĕп персонажна çыханна патармахсемие унан калаçавĕ те путишлерех пулса тухна: "Ун чух вырасла пĕлместĕм хам: "идипе уйди" самахсене çеç анланатгам"; "Караçка юмаха çаптарма пуçласан, умри вĕри яшка пăрланса кайнине те туяйман".

Çапла вара, Максимов-Кошкинский калавĕсенчи повествовани мелĕ очеркла формасене çывах. Г.Поспелов тĕпчевçĕ калавсене икĕ тĕрлĕ формапа çырнине палартать: очеркла калав (описаниллĕ-повествованиллĕ) тата новелла майлă калав (конфликтла-повествованилле). Кошкинский вара пĕрремĕш формине суйласа илет.

Унан очеркĕсемне асаилĕвĕсем пирки пĕр-икĕ самах. Вĕсенче граждан варçи вахатĕнчи политикалла тата культура пуламĕсем, пĕлнĕ-курна палла çынсем, автор шухăш-туйăмĕсен çĕкленуллĕ пафосĕ, çын шапи... "Икĕ самана" очерк-шапара Хвекла ятла чаваш хĕрĕн революцичченхи трагедилле пурнаçĕ куранать. "Таван ялта", "Хĕвел туймасть инкеке", "Атăл çинчи тăвал", "Ирĕке тухна

Хусанта", "Телейлё каç" очерксемпе асаилусенче чаваш ялёнчи, Хусанти, Мускаври революцине граждан вăрçи пулăмёсем çынсене, автора хайне, чаваш культурине мёнле витём кунине каласа пана. 1917-18 çулсенче пулса иртнё чёрё фактсем, палла çынсем автора каярах "Сатурпа Илем", "Тёрлемес таврашёнче" тата ытти историллё драмасене çырма май параççё. Паллах, автор тёнчекурамне пур чухне те тавлашусар йышанмастан: Г.Алюнов эсера вал "чаваш патши пулма ёмётленнё халах ташманё", - тет. Темиçе асаилуре автор Хусанта Чаваш театрне пуçарса яни çинчен каласа парать ("Кёрхи хёвеллё кунсем", "Ёмёт çитрё"). Н.Островский пьесине мёнле лартма хатёрленнине аса илни питё интереслё: геройсене турра ёненекен çынсем пек туни (Совет влаçё вахатёнче!), чавашла тумлантарса чаваш юррисене геройсене юрлатгарни... "Вырас классикён драми чаваш пьеси пулна ларна. Халё çапла хăтлансан, критиксем ыванинченех ятлаччёç" - тет Кошкинский "Ёмёт çитрё" асаилуре.

"Вал пулман пулсан, чаваш театрё çуралас та çукчё пулё", - тет автор, Вармар тăрахёнчи Арапуçёнчен тухна, шуррисем çамраклах персе пăрахна Петр Федоров тусёпе ёçри юлташё çинчен. "Пьер...Миçе çул пурантам эпё çак хёруллё те ларма-тама пёлмен чаваш ачипе!.." - тет хумханса Кошкинский. Çав тери сахал пёлетпёр-ха эпир те ку çын çинчен.

Паллах, Максимов-Кошкинскин проза асталăхё классика шайёнче тесе калама çук. Вал чи малтан - пысак культура ёçченё, унтан-драматург, артист. Анчах унан чунне, тёнчекурамне, психологине, чёре тапшне эпир шăпах унан прози витёр куратпăр. Ан тив, вал хайён чёлхи-портречё-сюжечёпе ан тёлёнтертёр, анчах унан - чёрё проза. Пысак туйам тапса тарать вёсенче. Апла пулсан, И.С.Максимов-Кошкинский прози те пурнаçранах, литератураранах. Пурантарах, эппин, вал та.

Цитаталана литература:


1. Сироткин М. Чăваш литератури. 9-мёш класра вёренмелли кёнеке. Шупашкар, 1979, 173с.
2. Юрьев М.Чаваш писателёсем. - Шупашкар, 1968, 187с.
3. Краснов И. И.С.Максимов-Кошкинский. Умсăмах // И.Максимов-Кошкинский. Пьесасем, калавсем, аса илусем.- Шупашкар, 1963, II с.
4. Кунта тата малалла цитатасене çак кёнеке тарах илнё: И. Максимов-Кошкинский. Пьесăсем, калавсем, аса илусем.- Шупашкар, 1963.

5. Максимов-Кошкинский çуралнаранпа 100 çул çитнине палла туса каларна буклетран. - Шупашкар, 1993.
6. Большая Советская Энциклопедия, 1975, т.21, 485 с.

1995 ç.

## Взгляды И.Я.Яковлева на литературу

Взгляды И.Я.Яковлева на литературу сложились ещё во время учёбы в Симбирской гимназии. И, видимо, личный и истинный интерес его к литературе ограничивается годами учёбы в этом учебном заведении. Об этом говорят и строки из воспоминаний самого патриарха, и тетрадные записи гимназистских лет с пометками о планах прочтения произведений мировой литературы. Именно тогда молодой Яковлев с жадностью набросился восполнять свой мировоззренческий багаж.

Русская литература того времени переживала золотой век расцвета, и будущий просветитель читал "Войну и мир" Л.Толстого, запрещённые критические статьи Белинского... Видимо, он был знаком и с именами Байрона, Овидия, Тассо, Шекспира и др. Прочитав какое-либо произведение, И.Я.Яковлев давал им оценку. Роман Достоевского "Преступление и наказание" для него был в новинку, а после знакомства с "Отцами и детьми" Тургенева, начал замечать базаровские типы среди людей.

Ещё тогда (даже в зрелые годы ) И.Я.Яковлева в литературе больше всего интересовала идейно-мировоззренческая позиция писателя, а не эстетико-художественная сторона произведения. Об этом можно судить по его признаниям: "Русская литература, хотя интересовала меня, но не увлекала. Любимых писателей у меня не было" (Моя жизнь. С.143). Читая, например, Пушкина, Яковлев увлекался только его прозой: "Не вполне усваивал себе прелести поэзии, которая не производила на меня впечатления" (Там же. С.142). И ещё одно признание: "Вообще я довольно равнодушен к поэтическим произведениям" (Там же. С.254 ). Думается, не прошли даром сетования гимназического учителя Баратынского о том, чтобы ученики слишком не увлекались всякими Гейне и Беранже, и даже оценки по литературе в табелях у Яковлева были не выше "3" или "4".

Хотя и был опыт написания стихотворения самим Яковлевым ("Ловите дни весны весёлой"), он не признавал ни романтичского, ни

сентименталистического, ни интимно-чувственного восприятия окружающего мира. Так он признавался: "Евгений Онегин мне прямо не нравился", "лермонтовский "Демон" казался мне набором слов" (Моя жизнь. С.142). Поэма "Мцыри" ему понравилась тем, что в ней было "описание борьбы несчастного существа с окружающим" Для Яковлева литература - это общественное явление, ему больше важно изображение противоборства добра и зла. В произведениях он ищет идеологические и воспитательные мотивы. В статье "О влиянии театра" Яковлев подчёркивает, что театр - "немоловажное средство для проведения в народ хороших понятий, которые нужны для его блага". Правда, вызывает несогласие его вывод о том, что "назначение театра - служить человеку развлечением и удовольствием после обыкновенных занятий, не утомляя его и не требуя от него напряжения умственных способностей".

Что касается отношения И.Я.Яковлева к нарождающейся чувашской литературе, то здесь мы наблюдаем любопытные метаморфозы. Хотя литература и не увлекала его, тем не менее он сам, по практической необходимости при издании букварей, начал писать некоторые литературные вещи в виде переводов, художественных обработок фольклорных произведений, рассказов, зарисовок и маленьких сценок. Понимая роль литературных произведений на национальном языке, он привлёк к этой работе многих будущих классиков. Даже вечный оппонент И.Я.Яковлева И.Н.Юркин стал писателем благодаря просветителю. Скупой на похвалы, И.Я.Яковлев умел ценить таланты. Так, его приятно удивили рассказы Игнатия Иванова: "До него не умели писать по-чувашски, литературно, связно излагать свои мысли на бумаге..." (Моя жизнь. С.58). Писать же И.Иванов начал "по совету и указанию" Яковлева.

Ещё один классик, удостоенный внимания просветителя, стал писателем опять-таки благодаря его стараниям. Если раньше И.Я.Яковлев не говорил об эстетическом наслаждении, то здесь, обуреваемый гордостью за чувашский гений литературы, назвал Константина Иванова "всесторонне одаренным юношей" и обнаружил у него "эстетический талант". Он занимался с поэтом, знакомил его с трудами Белинского, "чтобы помочь уразуметь значение лермонтовской поэзии". Но и здесь педагог Яковлев употребляет не принятую в литературоведческо-критических работах оценку художника слова с морально-этических позиций: "У Иванова был порок: он любил выпить" (Моя жизнь. С.458). Такой же

уничтожающей критике нодвёргся и Игнатий Иванов. Работа просветителя по изданию произведений чувашских писателей также говорит о признании роли литературы в жизни народа. Хотя термин "просветительский реализм" сейчас не моден, тем не менее И.Я.Яковлев - яркий представитель этого направления. Тяготение к эпосу с его яркими жизненными коллизиями и поиски в литературе просветителем морально-этических ценностей и воспитательных моментов - это факт приоритета в мировоззрении патриарха содержательной стороны литературных творений над художественной.

1998 г.

## Туркай-су(у)рреалист?

Тура кайăкĕ пулма çамăлах мар пулас. Çамрăк поэтан тапса таракан туйăмĕпе Маяковскилле ал-ура хусканавĕн хĕрулĕхĕ пĕрисене илĕртет (уйрăмах сисĕнчĕклĕ чăваш пикисене), теприсене тарахтарать... Урахла каласан, лапка идиллин картине лармасть Туркай поэзийĕ, ансат сăмахсемлĕ пулин те.

Нумаях пулмасть Туркайăн чăваш тĕнчине кисретнĕ çак йĕркисем янраса кайрĕç ("АУ", 1992, №1):

Сурас килет мĕнпур тĕнче çине,
Унтан вара сысса хурас килет!..

Сăвари çак йĕркесем пурне те шалт тĕлĕнтерчĕç: тусĕсене те, тус маррисене те. Раиса Сарпи, космосран килекен "сасăсемпе" тусласкер, хайĕн çĕр çинчи поэт ĕçтешĕн çак йĕркисене питĕ сивлерĕ.

Çав териех кураймасть-ши хайĕн тĕнчине Туркай?

Çук пуль, ахаль çынран та хытăрах юратать вăл ана, çак тĕнчешĕн сăвă çырас талантне кăна мар, чĕрине каларса пама хатĕр. Тупсамĕ питĕ ансат: поэт пĕр выранта тапартатса тăма юратмасть, хайие шырать (туйăм шайĕнче), çаванпах хальччен никам каламан сăмахсене персе ярать (кунта ытти поэтсен пĕрпеклĕхĕнчен хатăлас тени те пур-тар). Хăй сисмесĕрех, Туркай сюрреалистла сулăнчăка туртăнать (халлĕхе туйам шайĕнче). Хушăран Сальвадор Дали сюрреалист-художникран та вăйлăрах (паллах, халлĕхе форма шайĕнче мар-ха). Хĕвеланăç художникĕ пĕр укерчĕкĕ айне, хăйĕн амăшне вилесле юратна пулин те, çапла çырса хунă пулна: "Эпĕ хамăн анне çине сурса хуратăп". Туркай вара малтан сурса хурать, кайран - ...

Сюрреалист текенни яланах лапкăлăха, çывăрттарса яракан пурнаç килĕшĕвне хирĕç тухать. Луис Бунюэль кинорежиссер (каллех "çĕрĕк" хĕвеланаçĕнчен!) вĕсем çинчен çапларах калани палла: "Сюрреалистсем литература е живопись историне кĕме пит тăрашмаççĕ те. Чи малтан вĕсем, хайсен нимĕнех те пулман пулин те, пĕтĕм чунтан çут тĕнчене тата пурнаçа улăштарас тесе канаçсарланаççĕ".

Ака, чаваш поэчĕсем мухтаса пĕтернĕ "шурă Шупашкар" Туркай сăввинче ("Аталану", 1992, №1) каллех пирĕшти пек мар, урăхларах, каллех "варçтармалла" хакланăскер. Шупашкар саваçăн "айван", "чухăн", "тамак", "чаваш мăшкăлĕ, мухтавĕ" т. ыт. те. Некрасовла ĕнĕрлени те мар ку, поэтан "Эпĕ" тесе калана ыратавĕ. Çав ыратăва эпир хăнахманла санлать çеç Туркай. "Раççей" сăввинче те ("Аван-ин" иртнĕ çулхи, ахартнех, Ельцин Шупашкара килнĕ тĕле каларнă 33 №-ĕ) çакнашкал ырату-туйампа çырнă йĕркесем:

Кирек аçта та эс -
чĕнмен хана, Раççей.

Шапах сюрреалистла шалт ураран укерекен самахсемпе уçса пана та вал хайĕн социаллă-политикалла саввисенчи туйама.

Шарт сиктерет пурне те Туркай, çĕнĕ туйамне çĕнĕллерех калама тарашса.

Тен, шапах çакнашкал сюрреалистла çыркаланисем тапратĕç вулакана? 1993 ç.

## Варça вăл - юн, вилĕм, трагеди
### (С.Юшков прози пирки)

"Варça литератури хай самахне каларĕ. Тав ăна уншан... " - тенине илтме пулать тăтăшах писательсен пухăвĕсемпе тĕпчевçĕсен конференцийĕсенче. Анчах кирлех-ши капла пат татса калама? Тен, чаваш литератури халăхамар шăпинчи чи трагедиллĕ варçă çулĕсене тивĕçлĕ шайра тишкереймен-ха халлĕхе? В.Гроссманăн, В.Некрасован, И.Авижюсăн, В.Быковăн, А.Адамовичăн вулакан патне тинтерех çитнĕ варçă хайлавĕсем чанлăхăн тарăн та нумай енлĕ шайĕпе, чуна витерекен трагедиллĕ нафосĕпе тĕлĕнтереççĕ. Чаваш литературара та çак шая çывхарса пыракан произведенисем курас килет. Чаваш çĕрне тăшманан таканла ури таптаман, пĕрех халĕ те сипленсе çитейми юнла суран хăварчĕ пирте те вăрçă: вайпитти арçынсене ялĕ-ялĕпе шалчĕ, талах арăмсемпе талах ачасен шапи калама çук йывара килчĕ. Тĕрлĕрен патриотизмла лозунгсем те,

çулталакра пĕрре çеç сăн кĕрекен варçа палакĕсем те çак ыратава сĕвĕртеймеççĕ. Чан самах, ним нытармасăр калани кирлĕ вăрçа çинчен.

Юлашки вунаçуллăхра чăваш нрозинче варçă темипе çыракансен йышĕ самай чакрĕ. Çак темана таташах алла илекен прозаиксенчен пĕри - Сергей Юшков. "Çĕршыв чĕнсен" (Шупашкар, Чăваш кĕнеке изд-ви, 1988 ç.) - унан пиллĕкмĕш кĕнеки. Унта пĕтĕмне 12 калав. Вĕсенчи ĕççем автор хай салтак пулса çапăçнă вырăнсенче - Карелине Ленинград таврашĕнче - пулса иртеççĕ. Биографиллĕ-мемуарла самантсем калавсенче куçкĕретех. Хайлавсен чăнлăх шайне автобиографилле самантсем кана мар, чĕре витĕр илемлĕх мелĕсемпе шăрантарса кăларнă сăнарлă сăмах та устерме тивĕç. Акă, илер-ха пĕрремĕш сăпатран çырнă калавсене (пĕтĕмпе вĕсем 5). Автор хăйĕнчен çырна кунашкал произведенисене геройăн шалти тĕнчи, чун кĕрешĕвĕ тĕп вырăнта тăмалла, прозăри лиризм тени палăрмалла ĕнтĕ. "Тăшмана парăнман çĕр лаптăкĕ" калавра "вилĕм хуранне" лекнĕ салтаксен психологине тĕпчеме питĕ меллĕ самантсем пур. Пулемётчнксен паттăрла пĕр çапăçăвĕн эпизочĕсем пирĕн умра. Анчах автор çапăçу саманчĕсен вак-тĕвекĕсене çырса кайса, ĕç-пулăмĕсене çеç санласа, геройсене сăнарламалли пирки маннă пулас: лирикалла герой та, ытти геройсем те вулакан умĕнче вĕлтлетсе çеç иртеççĕ, пĕри те асра юлмаççĕ. "Мина", "окоп", "танк", "атака" сăмахсен пуххинче этем тени пачах çухалать, татăлса-шăйрăлса пĕтнĕ кивĕ кинофильма аса илтерет ку калав.

Калавсенчен ăнăçлăраххисенчен пĕри - "Хавал йамра". Икĕ символла йĕр калавра. Савали мучи фронтовикăн килĕ умĕнчи ватă йамрана çил-тăвăл хуçса антарать - вăрçă ялти чи матгур йĕкĕт пулнă Савали мучи пурнăçне те ыраттармалла пырса тивет. Калавçа санарĕ урлă йĕркеленнĕ кунта сюжетпа композици: Савали мучи ачасене хай фронтра пулни çинчен каласа парать. Конфликчĕ те кунта икĕ совет салтакĕ хушшинче аталанать: пĕри вăл - турĕ чунла Савали мучи, тепри - "чăвашла француз" тесе йĕкĕлтесе ят панă Якур (Жорж) Пуяндайкин сутăнчăк. Тăшман ункинчен тухакан салтаксене вăрçă тусĕмлĕх енчен епле тĕрĕсленине тĕпчет автор.

"Этем тени" калаври лирикаллă герой медсестрана кăмалласа парахать. Варçă вăхăтĕнче ăнсăртран çуралнă, çав вăхăтрах этем чунне тĕпренех кисретме пултаракан юрату "тертне" сăнласшăн автор. Госпитальте вырăнпах выртакан салтак суранĕсем "хĕр илемĕн асамлăхĕпе" хăвăртрах сипленни пирки çырни литературăра çĕнĕ

япалах мар. Çĕнни-гемĕ кунта çукрах ĕнтĕ, çапах та ку йăлăхтарнă тема тесе автора вăрçмăпăр: юрату туйăмĕсем кашни çыннăн тĕрлĕрен. Çакă çеç тĕлĕнмелле калавра: кĕтмен çĕртен лирикăллă геройшăн пирĕшти вырăнĕнче пулна Рита медсестра автор кăмăлĕпе çăмал шухăшлă хĕр пулса тăрать: хĕре Негодин офицер çавăрса ярать иккен. Герой улталаннипе пĕрлех вулакан та улталанать "Мĕнле янала вал этем тени?" - çапла ыйтать калавçă хăйĕнчен хăй. Анчах калавăн тĕп шухăшĕ те, сăнарĕсем те ку ыйтăва хурав параймаççĕ. Геройшăн вырăс хĕрне чуптăвасси "фашистсене хирĕç атакăна тухассинчен йывăртарах" иккен.

Юрату серепине çакланнă тепĕр герой - Борис Хастаров ("Çĕмĕрт çеçки çурăлсан" калав). Фронтра аманнă салтак тăван ялне курма килет, анчах амăшĕ патне çитеймест: унăн савнине Шупашкарта кавча илесшĕн иккен. Чунĕ тăвалса çитнĕ "рыцарь" савнийĕ - Рая - пурăнакан хваттере пырса кĕрет. Унта, хайхискер, Райан пулас упăшкипе тепĕр икĕ çамрăк эрех ĕçсе лараççĕ. "Самаях хĕрнĕ" арçынсемпе тытаçасран шикленсе, Хастаров тухса шăвăнать, хĕрне ĕçре шыраса тупать. Малалла - çамрăксем пĕр-пĕрне ашă сăмах каласа ăнлантарни, унтан - гостиница, хĕр "кавча çумне йапшăнни", каччă "хăй сисмесĕрех" хĕре ыталани... Эрне хушши çапла савăшса пурăнаççĕ хĕрпе каччă, салтака амăшă те кирлĕ мар ку самантра, ун патне çитмеллине те мансах каять вăл. Ку калаври геройсен ансат хуппăнăвĕсем, вĕсен характерĕсем палăрсах кайманни кофликт шанăрĕ çуккинчен килеççĕ. Вĕсен юратăвĕ, автор тем тĕрлĕ çĕкленуллĕ пафоспа çырать пулсан та, шухăшласа кăларна япала пек çеç: "Вĕсем, икĕ юратна тус, юмахри пек, кĕтмен çĕртен пĕрле. Çулăмла тусĕ, хаяр варçа витĕр шăранса тухса, ун патне каллех вĕçсе çитрĕ".

Калавсенче снайперсен, пулеметчиксен, разведчиксен, партизансен, пограничниксен сăнарĕсем пур. Прозаик салтаксен ĕçне-хĕлне, хуйхи-суйхине, çапăçу-çар тактикине пĕлмест мар. Документлăх тени те чылаях уçăмла палăрать хăшпĕр калавсенче. Ёçсен конкретлă вырăнне те, çар операцийĕсен ячĕсене те асăнать калавçă. Самаях витĕмлĕ шухăш çĕкленĕ калавсем те пур. Калăпар, "Пултарулла Микулай" калавра совет снайперĕпе фашист снайперĕ хушшинчи кĕрешуре чăваш каччи çиеле тухать. Пирĕн салтаксем тĕрĕслĕхшĕн çапăçаççĕ, çавăнпа çĕнтереççĕ текен шухаша калав ансатрах татса парать пек туйанать. Конфликта малтанах калăпласа хатĕрлесе хунă геройсем хутшанаççĕ, автор хай геройĕсене çухалса

каясран алăранах çаватса пырать. Сăнарсене çавнашкал пĕр енлĕн уçса пани С. Юшков калавĕсене чылаях хавшатать.

Хĕрлĕ Çарап варçа кунĕсенчи мухтавлă çул-йĕрĕпе пĕрлех трагедиллĕ самантсем те сахал мар пулна. С.Юшков калавĕсенче вара: "Пирĕн çар манаçлан малалла каять. Ун çулне сара хĕвел ăшшан кулса çутатать"- тенисене вулатăн та, калавçă çак шайра çеç илемлĕ пĕтĕмлету тума пултарнинчен тĕлĕнетĕн. Çарсем "малалла манаçлан" кайни мĕн хака ларни пирки те манмалла мар пек туйанать.

Çÿлерех асăннăччĕ ĕнтĕ: сăнара пĕр енлĕрех уçса пани сюжетпа композиции йаштарать. Вăрçа героикине урра шайĕнче кăна курни чанлах тенинчен парăнни мар-ши тата? Тăшман салтакĕсене карикатурăлла кăна сăнлассинчен те хальччен хăтăлмалла пек ĕнтĕ. Сăнар-ха калавсенче пирĕн ырă геройсем ташмана мĕнле вĕлернине: "Куринкене ăсатнă", "месерле яла ăсатнă", "автансăр яла ăсатнă", "çĕр çумне пăталанă", "тирĕнтернĕ", "шаплаттарнă", "сирпĕнтерсе янă..." ...Тăшмана курайманни аван-ха вал, анчах ача-пăча вăрçăлла вылянине çеç аса илтермест-и-ха ку? Çакнашкал стереотипсем С. Юшков кĕнекин хакне чылаях чакараççĕ. Юлашки вăхăтра вăрçă условийĕсенче тăшмана çĕлĕке çулелле пенипех çĕнтерме çуккине аван ăнланма тытăнтăмăр. Вăрçă вăл - юн, вилĕм, трагеди. Вăрçă кунĕсене, салтаксен героизмне пĕрехмай романтика тĕсĕпе кăна сăнлани паян куншан çителĕксĕр.

1990 ç.

## "Çухалнă ăру" хуxлевĕ, е паянхи арпашуллă тĕнчери çалăнăç çулĕ пирки

ЭПĔ - çухалнă ăру ретĕнчи çамрăк çын. Камшăн çухалнă ăру этемĕ эпĕ? Патшалăхшăн-и е халăхăмăршан-и, хам йах-тăхăмшăн-и е кил-йышăмшан-и? Хамшан, хам тĕнче курăмшăн, хам кăмăл-туйăмсемшĕн çухалнă эпĕ. Ма тесен чун кисрене-кисрене çĕнĕ тĕнче çине тĕлĕнсе те иккĕленсе пăхать. Эпĕ "кивĕ тĕнчере" уснĕ, ăс пухнă, идеологи тĕтĕм-сĕрĕмне çатна. Каллех Çеçпĕл Мишши умĕнче хай вăхăтĕнче тăнă ыйту: кивĕ тĕнче - çĕнĕ тĕнче. Хăшĕ кивĕ тата хăшĕ çĕнĕ паянхи кун? 5-6 çул каялла каланисем çиçĕмле хăвăрт кивелчĕç, идеологи штампĕсемпе идолĕсем арканчĕç. Эпĕ, 60-70-мĕш çулсенчи çак идеологи çĕпри çинче йуçсе тулнаскер, хăпарнăскер, чустаран çĕçĕпе тирсе сывлăш каларнă пек, самана çĕççи пырса тивнине хытах туйса илтĕм: унченех ытла "тĕрĕс пураннине"

иккёленсе йышанаканскер, коммунизм йашса-арканса пынине куссульсёр санаса татам. Шапах çакан чухие хам çухалнă аруран пулнине вайларах туйса илтём те.

"Ăрусен хушшинчи çыхану мёне пула çухалать?" - тесе ыйтать çак ятла статьяра Шупашкар районёнчи Тренькасси ватам шкулёнчи Ираида Фомина учительница ("Хыпар", 1995, çёртме уйахён 8-мёшё). Ыйтавё, чанах та, çивёч тарать. Тёпрен илсен, автора уссе пыракан арава "пётём енлё аталанна, пысак культуралла çынсем" тавасси шухашлаттарать. Ăна шкул ёçёпе çыхантарать педагог. Пётёмёшле И.Фомина çаланаç çулне (ару ан çухалтар тесе ёнтё) çут çанталака, чавашсен авалхи культурине, чаваш чёлхине юратма вёрентессипе çыхантарать. Анчах статьяри пёр абзац автор шухашлавён кустармисене малалла кайма чарать. "Халь камран тёслёх илмелле? Кам пек пулмалла?" - тесе аптарать учительница Павлик Морозов, Зоя Космодемьянская, Олег Кошевой, Хрисан Степанов ячёсене ёлёкхи (коммунизм саманинчи) пекех асанманшан, сума суманшан кулянса. Автор хаех унченхи идеологи тётём-сёрёмёнчен вёçне çитиех хаталса пётейменни пирки калать. Унăн айапё мар вал, инкекё. Пирён ару инкекё.

Пире пурнаç çине пахма Ленинан 45 томла çырнисен пуххи тарах вёрентнё. Асла шкулсенче марксизм-ленинизм вёрентёвё çеç кашни предметан никёсёнче пулна. Халё те аставатап: студент литературапа е чёлхепе курс тата диплом ёçё, реферат е доклад çырать-и - Маркс, Энгельс, Ленин е партии съезчёпе пленумё çак темапа е çывахрах тем каламан-и тесе асархасах тамаллаччё. Университетра чаваш чёлхине тата литературипе абитуриентсем çыракан сочиненисенче те унченхи идеологи пăтăмпёсем чылай-ха, ма тесен шкулсенче вёрентекенсем малтанхиллех, ханахна майлах "Ňарспи" поэмара класс кёрешёвне шыраççё, "Ялта" драмари çук пуянсене çунтараççё, Шерккее виçесёр тиркесе такаççё...

Ака ёнер кана вулана сочиненири йёркесем (11-мёш класс ачи çырна!): "Иван Мучи халах ташманёсене (камсем-ши вёсем паянхи кун? - В.А.) çиллессён питлет, унан сатири паянхи кун та совет халахне коммунизм тума пулашать..." Е тата тепёр шухаш: "Классик тесе класс кёрешёвё çинчен çыракан писателе калаççё".

И.Фомина Павлик Морозовпа Хрисан Степанов пионерсене "герой" мантийёсене тахантартса паянхи арава "турё камаллă пулма, тёрёслёхшён кёрешме" (кампа? - В.А.) вёрентес ёçре усă курасшан. Шел пулин те, автор пашăрханавё салтавсар. Хальхи истори

учебникĕсене çеç уçса пăхмалла: колхоз туна тапхар ытла трагедиллĕ килсе тухрĕ халахшан. Шолоховăп Нагульновне аса илĕр-ха: пистолетпах хавалать вĕт халаха колхоза кĕмешкĕн!

"Халаха юрахла çынсем пулса усме хавхалантаракан паттарсене çĕрпе танлаштарчĕç" - тет "çĕнтеру вахатĕнче паларна критиксене", çав шутра çак статья авторне те тĕксе илсе И.Фомина. Анчах пĕр япала пирки манмалла мар: истори чанлахĕ кирек мĕнле шухаш калакан "критикран" та çуллĕрех тарать. Павлик Морозовпа Хрисан Степанов - революци салтакĕсем". Тен, хайсем çак ята илесшĕн те пулман пулĕ, анчах идеологи маншни вĕсен ятне уса курса репрессисене йĕркелерĕ, "кулак", "халах ташманĕ" тесе йĕркеллĕ, асла-танла, ĕçчен хресчене хай çĕрĕнчен уйарчĕ, Çĕпĕре хаваларĕ. Колхоз чанлахĕ икĕ çыранла пулна: пĕрисем, ытларахашĕсем, хирĕç; теприсем, сахалраххисем, майла. Патшалах идеологийĕ вара çак хире-хирĕçлĕ çырансене "юн юхтарса" пĕрлепттерме тытанчĕ, кĕпер выранне 14 çулхи çамрак ачасен çирĕпленсе çитеймен хытанка учĕсемпе уса курчĕ. Павлик Морозов хайĕн таван аппĕне сутрĕ (ашшĕ вара кулак тесе ят пана çынсене ялтан тухса кайма ял Советĕнче хутсем йĕркелесе пана иккен, вĕсене вилĕмрен çалса ха варна).

Уйрам самах - чавашсен Павлик Морозовĕ пирки. Хрисан Степанов, И.Фомина калана пек, "çĕнĕ пурнаç тавассишĕн кулаксемпе кĕрешсе пуçне хуна" иккен (юпа уйахĕнче ун вилĕмне палла тумалли вахат). Шел пулин те, ку тĕрĕсех мар. Темиçе çул каялла "Молодой коммунист", "Танташ" хаçатсенче манан темиçе статья та пичетленĕччĕ. Вĕсенче эпĕ пĕрре те Хрисана "сутанчак" тесе каламан. Хрисан маншан - колхоз туна вăхатри трагедиллĕ шапалла ача. Унан вилĕмĕпе уса курса патшалах идеологийĕ Ман Яваштра пачах пулман класс кĕрешĕвĕн вутне чĕртсе ячĕ. Çав вуг ашĕнче салтавсарах Хрисан ячĕ те, ана ансартран вĕлернĕ танташĕ Иван та, йĕтем хуралçи пулнă Тимофей Амаков та çунса кайрĕç. Истори факчĕсем çакнашкал: пĕрремĕшĕнчен, Ман Яваштра чан-чан кулаксем пулман (ашла пулсан, Хрисан кампа кĕрешнĕ?); иккĕмĕшĕнчен, ана юри хатĕрленсе никам та вĕлермен, юридици чĕлхинче ана ансартран пулна вилĕм теççĕ) "вĕлерекенĕ" хайпе танташ ачах пулна, вал йĕтем çинче колхоз пурлахне сыхлана): виççĕмĕшĕнчен, халиччен çырна статьясенчи, юра-пьесасенчи, поэмасенчи Хрисан Степанов пачах чăн пурнаçри пек мар, унан вилĕмне те кашни тĕрлĕрен анланаççĕ, фактсене пасаççĕ,

илемлетессё. Чăнлăха пĕлес тетĕн пулсан, Ман Явăшри ватасемпе çеç курса калаç: вĕсен куçĕ умĕнче иртнĕ мĕскĕн Хрисанăн кĕске ĕмĕрĕ. Шухăшламалли тепĕр факт: Кĕçĕн Явăшра икĕ хутла шкул çурчĕ, Ман Явашра Хрисан Степанов палакĕ ларать. Мен пĕрлештерет вĕсене? Шкулпа палăка купалама ишсе антарна, питĕ илемлĕ пулна чику кирпĕчĕсемпе уса курна иккен.

"Халăхăн авалтан упранса паянхи куна çитнĕ пысак культури çине таянса ĕçлемелле", - тет учительница хайĕн статьинче. Килĕштетĕп. Анчах Павлик Морозов та, Хрисан Степанов та чаваш халăхĕшĕн пачах ют идеологишĕн пуçне çухатна. Çавăнпа вĕсен ятне наци геройĕ вырăнне уса курма çук. Çырлахтарас, тĕрлĕ çыранра хăйсен ирĕкĕпе тăман çынсене пĕр-пĕрне каçарттарас вахат халĕ. Енчен малашне те вĕсен ячĕпе уса курса чавашсене "кулаксемпе" "ыра колхозниксем" çине пайлатпарах пулсан, эпир тепĕр ăрава та çухатапар. "Илем тĕнчене çалса хаваратех", - тенĕччĕ Ф.Достоевский. Чавашсен илемлĕ литератури те пур, халах сăмахлахĕ те пуян, историйĕ те кăсак. Ӳссе пыракан арава витермелли мифологи паттăрĕсем те чылаях. Литература геройĕсем те (Тилли-и вăл, Кĕлпук-и е Салампи) çаканта пысăк пĕлтерĕшлĕ. Хурисемпе алюновсем, миллисемпе рсайсем, миттасемпе кошкинскисем те çĕнĕлле тухса тăраççĕ пирĕн ума: вĕсен шăпинче те тĕслĕх илмелли нумай хальхи ăру валли. Мĕншĕн пирĕн халăхшан Ермак йышши çынсен тĕслĕх пулмалла, вăл вĕт чăн-чăн колонизатор: вак халахсене вăйпах Раççее пахантарнă! Çавăнпа эпĕ Юхма Мишши тăрăшнине ăнланатăп. Мĕн чухлĕ чăн-чăн герой иккен чавашсен! Истори факчĕсем сахал пулччăр, тен, вĕсем - чăваш геройĕсен ячĕсем - мифсенче кăна сыхланса юлнă пулĕ, анчах чăваш халахĕн мухтавлă çыннисем çинчен материал пухни пархатарла. Ан тив, мифсем çеç пулччăр, мифран наци ăнланăвĕ тытăнать, мифсемсĕр наци пĕтет.

Ку енĕпе ĕçлемелли чылай-ха. Шкулта литературăна, халах историне, культурине вĕрентес енĕпе чылай улшăну тумалла. Çавăнпа та И.Фомина учительница çĕкленĕ ыйтусем пурне те пырса тивеççех пек туйанать. Ăрава çалса хăварас çула пирĕн пĕрлех пырама тивет пулĕ. Çак ĕçре пире чăвашсен историйĕ, мифологийĕ, литератури, материаллă культури, искусстви тĕрев вырăнне пуласса шанас килет.

1995 ç.

## “Литература пуранать, сывалĕ-ха...”

Калаçу.

*- Халĕ литература пĕтни çинчен калаçаççĕ, студентсене вара мĕнле литературана юратма вĕрентетĕр?*

- Пĕтмен-ха вал, чирлĕ пулсан та, пуранать, сывалĕ-ха. Çул юппинче вăл. Вĕрентесси вара çăмăл та, йывăр та. Чăвашсен классикаллă тĕнче шайĕнчи литература пур. Ун çинчен те пайтах каласа пама пулать. Хаклама пĕлместпĕр-ха мĕн пуррине. Вĕт пĕр-пĕр генилле савва е пĕчĕк калавах студентсене темиçе лекцире, семинарта вĕрентме пулать. Хĕвел анăç университечĕсенче пĕр лирикăлла хайлава çур çул таран тишкерме пултараççĕ.

Литературăна юратасси пирки. Кирлех-ши суккăр юрату? Хам пирки каласассăн, эпĕ писателе е поэта юратмастăп, эпĕ вĕсен пултарулăхĕпе кăсăкланатăп, интересленетĕп. Литературана туйма, унпа киленме, сăмахĕсен илемĕпе чухенме пĕлмелле. Хăй тĕллĕи çырма хăтланакан студент чылай. Вĕсене вара хăйсен туйăмне-камăлне санарлă уçса пама хăнăхтармалла, литературăн тĕрлĕ тĕслĕ, тĕрлĕ сийлĕ тĕнчине кĕме пулăшмалла. “Студентсенчен пĕрремĕш курсра 99 проценчĕ поэт, пĕр проценчĕ - критик; юлашки курсра вара 99 проценчĕ критик, пĕр проценчĕ - поэт”, - шутлеççĕ преподавательсем. Çапла вара литературăна пĕр енлĕ, суккăрла, пĕр-пĕр персонаж çине кăна таянса “юратма” вĕрентмелле мар, литература тĕнчин чăн-чăн илемне сăнама, хак пама, ăша илме вĕренмелле. Ăна вара тивĕçлĕ теорие алла илтерсе, тишкерме хăнăхтарса пымалла. “Герой унта каять, кунта кĕрет, лерен тухать, чупать, сурать, пакăлтатать”, - тесе хайлав содержанине каланипе литература асамне туйса илме çук.

*- Эсир пухса йĕркеленĕ “Те кулмалла, те йĕмелле” рубрикари абитуриентсен сочиненийĕсенчи йăнаш йĕркесене “Хыпар” вулаканĕсем камăлласа йышăнчĕç. “Халăха культарас тесе, вĕсене Абрамов хай шухăшласа каларнă”, - текенсем те пулчĕç. Мĕн калана пулаттăр?*

Темиçе çул пухса пынаран, сочиненире тĕл пулакан литература, содержани, шухăш йăнăшĕсем кĕнекелĕх те пухăнчĕç пулĕ. Ĕçĕ çапларах пуçланчĕ. Абитуриентсен сочиненийĕсене тĕрĕслетпĕр. Тахăш преподавателĕ пĕр ĕçри сăвăланă икĕ йĕркене вуласа пачĕ.

“Халĕ пурнăç пыл та çу,

Хырам тарах шу та шу!"

Пĕр теçетке минут кулна хыççан, маниччен çырса хуçам. Йанашсенчен кулса хаталма чĕнсе калаççĕ задорновсем, жванецкисем. виктор петровсем. Мĕнрен кая чапла сатириксенчен çак йĕркесем: "Классик тесе классик çинчен çыракан писателе калаççĕ", "Нарспи" поэмара çамраксен идиотизмне катартна", "Ирсĕр Çтаппан, тьфу!, чун илли, аскан арçын - сире калатап, арçынсем!"... Ăçтан шухашласа каларап-ха эпĕ кунашкал "шедеврсене"? Манан кулаш таланчĕ çитейес çук! Шупашкаран илемне те эпĕ, хулан таса мар сывлашне çатаканскер, çак йĕркесенчи пек курмастап: "Хитре пирĕн Шупашкар! Пысак заводсен трубисенчен çара тĕтĕм каça н-ирĕн макарланать". Халĕ тата завочĕсем те чаранса ларчĕç те, мĕн çырмалла абитуриентан, "пĕтрĕ хула илемĕ" темелле-и?

Анчах шутлесе-йĕплесе çитĕ. Сочиненисенчи йанашсем шкул ачисен айапĕ мар, вал вĕсен нуши, терчĕ. Уншан эпир - аслисем, вĕрентекенсем, писательсем (сахал-им вĕсем хаватла заводсем çинчен хавхаланса çырчĕç) - айăпла.

*- Эсир питĕ хайне евĕрлĕ шухашлакан тĕпчевçĕ. Сирĕн литература темипе, вĕренту ĕçĕпе, общество пурнăçĕпе çырна статьясем яланах шав-шав çĕклеççĕ...*

Çаплах пулса тухать пулмалла, вĕсемшĕн ĕнсе чикки те çпсе курнă...

*- Мĕн вал сирĕн: павлин пек курнăçланни-и е тĕнче-курам сирĕн çапла "шартла-и"?*

-Иккĕш те мар. Эпĕ Дон-Кихот мар çил арманĕпе çапаçма. Çак тĕллевсемпе çыратап вĕсене: пĕрремĕшĕнчен, хытса шăнарланса ларна, пĕр енлĕ шухашлав шаблонĕсене аркатса чанлаха тĕрлĕ енчен пахма тарашатап; иккĕмĕшĕнчен, каштах сенсацилĕх тавасси те юнрах пулмалла ("Все сюжеты хороши, кроме скучных",- текен принцип-ши?), вулакана тавлантарса шухашлаттарас килет; наукара та, вĕренту ĕçĕнче те плюрализм тени нулмаллах: тавлашапар-тавлашапар та хусанкайла кайран "халь иккĕшĕ те паха" тесе калапар...

*- Уйрамах сирĕн "Аван-и" хаçатра пичетленнĕ статьясем нумайăшне шарт! сиктерчĕç: учительсене те, шкул ачисемпе студентсене те, писательсемпе тĕпчевçĕсене те...*

- Çапла, ку чан-чан истори манăн пурнаçра. Борис Чиндыков редактор хаюлахне пула "чапа тухрăм" эпĕ. Эрос (юрату) темине хускатна К. Иванов, Çеçпĕл, Яков Ухсай, П.Эйзин, Г.Кореньков

